**ЧР ВМХПВ «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» БУ**

**А.С. Егорова**

# Чăваш чĕлхи
# Республикăн пĕрлехи экзаменĕ

**Вĕренӳпе меслетлĕх кĕнеки**

Шупашкар 2020

УДК 372.8:811.512.111
ББК 74.268.19=635.1
Е30

Рецензентсем:

*Г.Н. Семенова,* филологи ӑслӑлӑхӗсен докторӗ, И.Н. Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх университечӗн чӑваш филологийӗпе культури кафедрин профессорӗ;

*А.В. Кузнецов,* филологи ӑслӑлӑхӗсен кандидачӗ, Чӑваш патшалӑх гуманитари ӑслӑлӑхӗсен институчӗн филологи енӗн (чӗлхе пӗлӗвӗ секцийӗн) ӑслӑлӑх аслӑ ӗҫтешӗ.

**Егорова А.С.**

Е30 Чӑваш чӗлхи. Республикӑн пӗрлехи экзаменӗ / А.С. Егорова. – Шупашкар, 2020. – 138 с.

УДК 372.8:811.512.111
ББК 74.268.19=635.1
Е30

Кӗнекере 9-мӗш класс пӗтерекенсене чӑваш чӗлхипе республикӑн пӗрлехи экзаменне хатӗрлеме тӗрлӗ материал пур: изложенипе сочинени ҫырма, тест ыйтӑвӗсене хуравлама вӗрентмелли кӑтартусем, малтан пулнӑ экзаменсен тӗрӗслев материалӗ, экзамена хатӗрленмелли тӗслӗхсем, ӑслав сочиненийӗн тӗслӗхӗсем, хаклав критерийӗсем. Таблица формипе хуравсем кӗртнӗ, хатӗрленмелли литература сӗннӗ.

Кӗнекепе ачасем экзамена хӑйсем тӗллӗн те хатӗрленме пултараҫҫӗ.

Кӗнеке ҫумне изложени тексчӗсен аудиодискне хушса панӑ.



# КЎРТӖМ

Шкул пурнӑҫӗ халӑх пурнӑҫӗпе тачӑ ҫыхӑнса тӑрать. Хальхи вӑхӑтра шкулта Федерацин патшалӑх вӗренў стандарчӗпе вӗрентеҫҫӗ. Ҫӗнӗ стандарт ачасене пӗлў тупма вӗрентме ыйтать, кашнин вӗренў компетенцийӗсене аталантарса ҫирӗплетме хистет.

Федерацин патшалӑх вӗренў стандарчӗпе килӗшўллӗн вӗренсе пыракансем 2020 ҫулта 9-мӗш класран вӗренсе тухаҫҫӗ. 9-мӗш класра чӑваш чӗлхипе тытмалли экзаменӑн тӗп тӗллевӗ – тӗп шкул пӗтерекен ачан пӗлӗвне пӗтӗмӗшле аттестаци картинче хакласси. Ҫӗнӗлле вӗреннӗ ачасен пӗлӗвне ҫӗнӗлле хаклама тивнӗрен республикӑн пӗрлехи экзаменӗн тытӑмӗпе содержанийӗ те улшӑнчӗ. Вӗренекенсен пӗлӗвӗпе хӑнӑхӑвӗсене экзаменра тулли те ирӗклӗ хуравлаттарса (изложени тата сочинени ҫыртарса) тата хатӗр хуравсенчен пӗрне суйлаттарса тӗрӗслеҫҫӗ. Улшӑну ытларах тест ыйтӑвӗсенче палӑрать.

Кӗнекере 9-мӗш класс пӗтерекенсене чӑваш чӗлхипе республикӑн пӗрлехи экзаменне хатӗрлеме тӗрлӗ материал пур. Изложенипе сочинени ҫырма, тест ыйтӑвӗсене хуравлама вӗрентмелли кӑтартусемсӗр пуҫне малтан пулнӑ экзаменсен тӗрӗслев материалӗ, экзамена хатӗрленмелли материал, хаклав критерийӗсем, ӑслав сочиненийӗн тӗслӗхӗсем панӑ. Таблица формипе хуравсем кӗртнӗ, хатӗрленмелли литература сӗннӗ. Кӗнекепе ачасем экзамена хӑйсем тӗллӗн те хатӗрленме пултараҫҫӗ.

9-мӗш класне пӗтернӗ май чӑваш чӗлхипе тытмалли экзамена ирттермелли йӗркене, экзамен материалне хатӗрлессипе ҫыхӑннӑ ӗҫсене Чӑваш Республикин вӗренў тата ҫамрӑксен политики министерстви кӑтартса парать. Экзамен содержанийӗ министерство йышӑннӑ документсемпе килӗшсе тӑрать.

## РЕСПУБЛИКĂН ПĔРЛЕХИ ЭКЗАМЕНĔН ТЫТĂМĔПЕ СОДЕРЖАНИЙĔ

### Тĕрĕслевпе хаклав материалĕсен тытăмĕ

Тĕрĕслевпе хаклав материалĕ 9 ĕçе пĕрлештерекен 3 пайран тăрать.



**1-мĕш пайра** итленĕ текста çывăх изложени çырмалла (1-мĕш ĕç). Текста ачасем икĕ хут итлеççĕ.

Изложени текстне хуравсен 2-мĕш бланкĕ çине çырмалла.



**2-мĕш пай** кĕскен хуравламалли 7 ĕçрен (2 – 8-мĕш ĕçсем) тăрать. Кĕскен хуравламалли çакăн йышши ĕçсене палăртмалла:

– сăмах (сăмахсем) çырса хуравламаллисем;

– цифра (цифрăсем) çырса хуравламаллисем.

Тест ыйтăвĕсем сăмах, предложени, текст тишкерессипе çыхăннă. Кашни ыйту хыççăн 5-шер вариант хурав панă. Вĕсенчен тĕрĕсси пĕрре е темиçе пулма пултарать.

2–8-мĕш ыйтусен хуравĕсене текстра ятарласа палăртса хăварнă вырăна çырмалла, кайран хуравсен 1-мĕш бланкĕ çине куçармалла.



**Экзамен ĕçĕн 3-мĕш пайĕнче** – сĕннĕ 3 темăран пĕрне суйласа илсе калăпăшĕ енчен пысăках мар ăслав сочиненийĕ хайламалла.

Сочинени текстне хуравсен 2-мĕш бланкĕ çине çырмалла.



### Экзаменра тĕрĕслекен пĕлӳ содержанийĕ

| Пай | Экзаменра тĕрĕслекен пĕлӳ содержанийĕн элеменчĕсем | |
|---|---|---|
| | **Тĕп вĕренĕвĕн патшалăх стандарчĕн федераци компоненчĕ** | **Тĕп вĕренĕвĕн Федерацин патшалăх веренӳ стандарчĕ** |
| ***1.*** | ***Фонетика*** | **Сăмахăн тĕрлĕ (фонетика, лексика, морфема, сăмах пулăвĕ, морфологи), сăмах майлашăвĕпе предложенин синтаксис, текстăн тĕрлĕ енлĕ тишкерĕвне тума хăнăхни:** сасăпа сас паллине уйăрма пултарни; сăмахăн сасă шутне палăртни; сăмаха сыпăксем çине тĕрĕс пайлани; сасăсене тишкерни; фонетика, морфема, морфологи, лексика, сăмах пулăвĕн тишкерĕвне туни. |
| 1.1. | Сасăсемпе сас паллисем | |
| 1.2. | Сăмахăн фонетика тишкерĕвĕ | |
| ***2.*** | ***Лексика тата фразеологи*** | **Сăмахăн тĕрлĕ (фонетика, морфема, сăмах пулăвĕ, лексика, морфологи), сăмах майлашăвĕпе предложенин синтаксис, текстăн тĕрлĕ енлĕ тишкерĕвне тума хăнăхни:** сăмахăн лексика тишкерĕвне туни; нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахăн пĕлтерĕшĕсене палăртни; сăмахсен стиль уйрăмлăхне палăртни; сăмахсен синонимĕсене тата антонимĕсене тупни; фонетика, лексика, морфема, морфологи, сăмах пулăвĕн тишкерĕвне туни. |
| 2.1. | Сăмахăн лексика пĕлтерĕшĕ | |
| 2.2. | Синонимсем. Антонимсем. Омонимсем | |
| 2.3. | Сăмах çаврăнăшĕсем | |
| 2.4. | Пулса кайни тата усă курни тăрăх ушкăнланă сăмахсем | |
| 2.5. | Лексика тишкерĕвĕ | |
| ***3.*** | ***Морфемика тата сăмах пулăвĕ*** | **Сăмахăн тĕрлĕ (фонетика, морфема, сăмах пулăвĕ, лексика, морфологи), сăмах майлашăвĕпе предложенин синтаксис, текстăн тĕрлĕ енлĕ тишкерĕвне тума хăнăхни:** |
| 3.1. | Сăмахăн пĕлтерĕшлĕ пайĕсем (морфемăсем) | |
| 3.2. | Сăмахăн морфема тишкерĕвĕ | |

| | | |
|---|---|---|
| 3.3. | Сӑмах пулӑвӗн мелӗсем | сӑмаха морфемӑсем ҫине пайлани; сӑмах тӑвакан, сӑмах улӑштаракан тата форма тӑвакан морфемӑсене уйӑрма пӗлни; сӑмах пулӑвӗн мелӗсене пӗлни; фонетика, лексика, морфема, морфологи, сӑмах пулӑвӗн тишкерӗвне туни. |
| 3.4. | Сӑмаха пулӑвӗ енчен тишкерни | |
| *4.* | *Грамматика. Морфологи* | **Сӑмахӑн тӗрлӗ (фонетика, морфема, сӑмах пулӑвӗ, лексика, морфологи), сӑмах майлашӑвӗпе предложенин синтаксис, текстӑн тӗрлӗ енлӗ тишкерӗвне тума хӑнӑхни:** хӑй пӗлтерӗшлӗ тата пулӑшу пӗлтерӗшлӗ пуплев пайӗсен морфологи тишкерӗвӗ; хӑй пӗлтерӗшлӗ пуплев пайӗсен морфологи, синтаксис уйӑрӑмлӑхӗсене палӑртни; фонетика, морфема, морфологи, лексика, сӑмах пулӑвӗн тишкерӗвне туни. **Чӗлхене наука тӗлӗшӗнчен пӗлнине анлӑлатни тата системӑлани; чӗлхе единицисемпе шайӗсем пӗр-пӗринпе ҫыхӑннине ӑнланни; чӗлхе пӗлӗвӗн тӗп ӑнлавӗсене, единицисене тата чӗлхен грамматика категорийӗсене ӑша хывни:** хӑй тата пулӑшу пӗлтерӗшлӗ пуплев пайӗсене пӗлтерӗшне тата грамматика паллисене кура уйӑрма пӗлни; япала, паллӑ, хисеп ячӗсене, местоименисене, глаголсене, наречисене, еврӗлев сӑмахӗсене уйӑрма пӗлни, союзсене, татӑксене, хыҫ сӑмахсене уйӑрма пӗлни; междометисене паллама пӗлни. |
| 4.1. | Хӑй пӗлтерӗшлӗ пуплев пайӗсем | |
| 4.2. | Пулӑшу пӗлтерӗшлӗ пуплев пайӗсем | |
| 4.3. | Сӑмахсен морфологи тишкерӗвӗ | |
| *5.* | *Грамматика. Синтаксис* | **Сӑмахӑн тӗрлӗ (фонетика, морфема, сӑмах пулӑвӗ, лекси-** |
| 5.1. | Сӑмах майлашӑвӗ | |



| | | |
|---|---|---|
| 5.2. | Предложени. Предложенин грамматика никӗсӗ. Предложенин тӗп членӗсем | **ка, морфологи), сӑмах майлашӑвӗпе предложенин синтаксис, текстӑн тӗрлӗ енлӗ тишкерӗвне тума хӑнӑхни:** синтаксисӑн тӗп единицисене пӗлни; предложенин синтаксис тишкерӗвне туни, хӑй пӗлтерӗшлӗ пуплев пайӗсен синтаксисри вырӑнне палӑртни; предложенирен сӑмах майлашӑвӗсене уйӑрса кӑларма пултарни; сӑмах майлашӑвӗн тӗп тата пӑхӑнакан компоненчӗсене уйӑрма пултарни; предложение тӗрлӗ енчен тишкерме пултарни; предложенин тӗп тата кӗҫӗн членӗсене, пӗр йышши членсене, уйӑрӑмлатнӑ сӑмахсене, чӗнӳсене, кӳртӗм сӑмахсемпе предложенисене паллама пултарни; предложении грамматика никӗсне палӑртни; хутлӑ предложенисене уйӑрма пӗлни. |
| 5.3. | Предложенин кӗҫӗн членӗсем | |
| 5.4. | Икӗ тӗп членлӗ тата тӗп членсӑр предложенисем | |
| 5.5. | Анлӑ тата ансӑр предложенисем | |
| 5.6 | Тулли тата тулли мар предложенисем | |
| 5.7. | Кӑткӑсланнӑ хутсӑр предложенисем | |
| 5.8. | Хутлӑ предложенисем | |
| 5.9. | Тӳрӗ тата тӳрӗ мар пуплевлӗ предложенисем | |
| 5.10. | Хутсӑр предложенисен синтаксис тишкерӗвӗ | |
| 5.11. | Синтаксис тишкерӗвӗ (пӗтӗмлетни) | |
| 5.12. | Хутлӑ предложени тӗсне палӑртасси | |
| *6.* | ***Орфографи*** | **Литература чӗлхин тӗп (орфоэпи, орфографи, лексика, грамматика, пунктуаци) нормисене, пуплев этикечӗн нормисене пӗлни; вӗсемпе калаҫура тата ҫырура усӑ курни; пуплеве якатма тӑрӑшни; лексикӑпа фразеологин стиль уйӑрӑмлӑхӗсемпе пӗлсе усӑ курни:** сӑмахра орфограммӑсене шыраса тупни, тӗрӗс ҫырмалли правилӑсемпе пӗлсе усӑ курни; хӑй тата пулӑшу пӗлтерӗшлӗ пуплев пайӗсене ҫырма пӗлни; сӑмах пайӗсене пӗр йӗркерен тепӗр йӗркене тӗрӗс куҫарма пӗлни. |
| 6.1. | Орфограмма | |
| 6.2. | Сасӑсен ҫемҫелӗхӗпе хытӑлӑхне, кӗскелӗхӗпе вӑрӑмлӑхне ҫырура палӑртасси | |
| 6.3. | Мӑшӑр, хутлӑ, икӗ хут калакан сӑмахсене ҫырасси | |
| 6.4. | Пуплев пайӗсене ҫырасси | |
| 6.5. | Пайӑр ятсене ҫырасси | |
| 6.6. | Орфографи тишкерӗвӗ | |

| | | |
|---|---|---|
| ***7.*** | ***Пунктуаци*** | **Литература чĕлхин тĕп (орфоэпи, орфографи, лексика, грамматика, пунктуаци) нормисене, пуплев этикечĕн нормисене пĕлни; вĕсемпе калаçура тата çырура усă курни; пуплеве якатма тăрăшни; лексикăпа фразеологин стиль уйрăмлăхĕсемпе пĕлсе усă курни:** предложени вĕçĕнче чарăну палли лартас правилăсемпе çырура усă курни; хутсăр тата хутлă предложенисенче, диалогра тĕрĕс çырмалли правилăсемпе çырура усă курни, цитатăланă чух чарăну паллисене тĕрĕс лартни. |
| 7.1. | Подлежащипе сказуемăй хушшине чарăну паллисем лартасси | |
| 7.2. | Кăткăсланнă хутсăр предложенисенче чарăну паллисем лартасси | |
| 7.3. | Хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси | |
| 7.4. | Тӳрĕ тата тӳрĕ мар пуплевлĕ предложенисенче чарăну паллисем лартасси | |
| 7.5. | Пунктуаци тишкерĕвĕ | |
| ***8.*** | ***Пуплев*** | **Сăмахăн тĕрлĕ (фонетика, морфема, сăмах пулăвĕ, лексика, морфологи), сăмах майлашăвĕпе предложенин синтаксис, текстăн тĕрлĕ енлĕ тишкерĕвне тума хăнăхни:** текста тишкерме тата унăн уйрăмлăхĕсене палăртма пултарни; текстăн темине, тĕп шухăшне, тĕп сăмахĕсене, микротемăсене палăртма пултарни; текста абзацсене пайлама пĕлни; текстăн стиль уйрăмлăхĕсене палăртма пĕлни; тĕрлĕ текст хайлама пултарни; текстри предложенисен çыхăнăвне ăнлантарма пултарни. |
| 8.1. | Текст. Текст тытăмĕ | |
| 8.2. | Текстри предложенисен çыхăнăвĕн мелĕсем | |
| 8.3. | Пуплевĕн стиль уйрăмлăхĕсем | |
| 8.4. | Чĕлхе мелĕсене темăпа, стильпе, пуплев манерĕпе килĕшӳллĕ суйласа илсе тĕрĕс вырнаçтарасси | |
| 8.5. | Текст тишкерĕвĕ | |
| 8.6. | Тĕрлĕ стильпе текстсем çырасси | |
| ***9.*** | ***Чĕлхе нормисем*** | **Литература чĕлхин тĕп (орфоэпи, орфографи, лексика, грамматика, пунктуаци) нормисене, пуплев этикечĕн нормисене пĕлни; вĕсемпе калаçура тата çырура усă курасси; пуплеве якатма тăрăшни; лексикăн тата фразеологин стиль уйрăмлăхĕсемпе пĕлсе усă курни:** хальхи чăваш литература чĕлхипе орфоэпи правилисене пăхăнса калаçни; сăмахра пусăма тĕрĕс лартма пĕлни; синонимсене пĕлтерĕш тата стиль тĕлешĕнчен уйăрма пĕлни, вĕсемпе пуплевре пĕлсе усă курни; грамматика нормисене пăхăнни; текста стиле кура тĕрлĕ нормăна пăхăнса йĕркелени. |
| 9.1. | Орфоэпи нормисем | |
| 9.2. | Лексика нормисем | |
| 9.3. | Грамматика (морфологи) нормисем | |
| 9.4. | Грамматика (синтаксис) нормисем | |
| ***10.*** | ***Тăван чĕлхен илемĕ*** | **Тăван чĕлхен илемлĕх мелĕсемпе усă курни:** фонетикăн, лексикăн тата синтаксисăн илемлĕх мелĕсене (эпитет, метафора, гипербола, сăпатлантару, танлаштару, фразеологизм, синоним, антоним, омоним т. ыт. те) хак пама пĕлни; фразеологизмсемпе пуплевре пĕлсе усă курни; этикет формулисемпе, междометисемпе вырăнлă та пĕлсе усă курни. |
| 10.1. | Илемлĕх мелĕсене тишкересси | |
| ***11.*** | ***Тĕрлĕ жанрпа тата стильпе çырнă текстсене информаци енчен тишкерни*** | **Тĕрлĕ вĕренӳ предмечĕпе тухăçлă вĕренме пулăшакан пуплев ĕçĕ-хĕлĕн тĕп тĕсĕсене (вулав, аудировани (итлев), калав, çыру) алла илни**: тĕрлĕ текста (сăнлав, калав, ăслав) ăнланни тата ăнлантарса пани; текста тĕрлĕ енчен тишкерни; илтнин тата вуланин содержанине сăмахпа е çырса уçса пани; текстăн шухăш пĕр пĕтĕмлĕхне, пуплев çыхăнулăхне тата шухăшсене йĕркипе уçса пынине хаклама пултарни. |

## Тĕп вĕренĕвĕн вĕренӳ программисене алла илнисен пĕлӳ пахалăхне тĕрĕслекен хăнăхусем

| Пай | Тĕп вĕренĕвĕн вĕренӳ программисене алла илнисен пĕлӳ пахалăхне тĕрĕслекен хăнăхусем | |
|---|---|---|
| | **Тĕп вĕренĕвĕн патшалăх стандарчĕн федераци компоненчĕ** | **Тĕп вĕренĕвĕн Федерацин патшалăх веренӳ стандарчĕ** |
| ***1.*** | ***Тĕрлĕ тишкерӳ*** | **Тĕрлĕ вĕренӳ предмечĕпе тухăçлă вĕренме пулăшакан пуплев ĕçĕ-хĕлĕн тĕп тĕсĕсене (вулав, аудировани (итлев), калав, çыру) алла илни**: тĕллевне кура тĕрлĕ текст (ыйтăва тĕслĕхсемпе çирĕплетсе хуравлани; изложени, сочинени, аннотаци, план, заявлени) хайлама пултарни; çыру тата калаçу чĕлхин уйрăмлăхĕсене палăртма пултарни. |
| 1.1. | Чĕлхе единицисене паллани, вĕсене тĕрлĕ енен тишкерни | |
| 1.2. | Харпăр хăй тĕллĕн вуланă текстăн темине, тĕп шухăшне ăнланни | |
| 1.3. | Тĕрлĕ стиле (илемлĕх стилĕ, публицистика стилĕ, наука стилĕ, ĕçлĕ стиль) уйăрма пĕлни | |
| ***2.*** | ***Аудированипе вулав*** | **Тĕрлĕ вĕренӳ предмечĕпе тухăçлă вĕренме пулăшакан пуплев ĕçĕ-хĕлĕн тĕп тĕсĕсене (вулав, аудировани (итлев), калав, çыру) алла илни**: чăвашла çырнă тĕрлĕ текста вулама хăнăхни; вуланă тата итленĕ текст проблеми çине автор мĕнлерех пăхнине ăнланни; вуланă тата итленĕ текстри информацие уçса пама, ăнлантарма пултарни; стильпе пуплев манерĕ енчен расна текстсен содержанине итлесе тата харпăр хăй тĕллĕн вуласа тĕрĕс те тулли ăнланни. |
| 2.1. | Текст çинчен тĕрлĕ информацие (тĕп тата хушма, курăнакан тата курăнман информацие т.ыт.те) тĕрĕс ăнланни | |
| 2.2. | Тĕрлĕ стильпе тата жанрпа çырнă текстсене вулани | |
| 2.3. | Вулавăн тĕрлĕ тĕсне алла илни | |
| 2.4. | Тĕрлĕ çăл куçран информаци шыраса тупма пĕлни | |
| 2.5. | Чĕлхе словарĕсемпе, справочниксемпе ирĕклĕ усă курни | **Сăмах пуянлăхне ӳстерни, шухăша тĕрĕс те ăнланмалла уçса пама йышлă лексикăпа тата тĕрлĕ грамматика хатĕрĕпе усă курни:** тĕрлĕ текст хатĕрленĕ чух сло- |



| | | |
|---|---|---|
| | | варьсемпе пĕлсе усă курни; информаци васкавлă шыранă чух тĕрлĕ словарьпе усă курма пултарни; сăмахăн лексика (тӳрĕ тата куçăмлă) пĕлтерĕшне, усă курас уйрăмлăхĕсене палăртас, пĕр пĕлтерĕшлĕ тата нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсене уйăрас, нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсене тата омонимсене пĕр-пĕринчен уйăрас тĕллевпе ăнлантару словарĕсемпе усă курма пултарни; чĕлхе нормисене пĕлес тĕллевпе орфографи тата орфоэпи словарĕсемпе усă курма пултарни; фразеологизмсен пĕлтерĕшĕсене палăртма фразеологи словарĕсемпе усă курма пĕлни; морфема тата сăмах пулăвĕн тишкерĕвне тăвас тĕллевпе этимологи словарĕсемпе усă курма пултарни; çывăх тата хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсене тупас тĕллевпе синонимсемпе антонимсен словарĕсемпе усă курма пултарни, сăмах пĕлтерĕшне пĕлме ăнлантару тата куçару словарĕсемпе усă курма пултарни. |
| ***3.*** | ***Çыру*** | **Тĕрлĕ вĕренӳ предмечĕпе тухăçлă вĕренме пулăшакан пуплев ĕçĕ-хĕлĕн тĕп тĕсĕсене (вулав, аудировани (итлев), калав, çыру) алла илни**: фонетикăна, лексикăна, сăмах тытăмĕпе пулăвне, морфологие тата синтаксиса вĕренсе пухнă пĕлӳпе усă курса тĕрĕс çырма пултарни; пĕр-пĕр стиле, жанра тивĕçтерекен текст тума пултарни; итленĕ тата вуланă текстсенче тапратнă проблема пирки сочинени авторĕ хăй шухăшне уçса пама пултарни; ку шухăша икĕ |
| 3.1. | План, изложени çырни | |
| 3.2. | Пĕр-пĕр стиле, жанра тивĕçтерекен текст туни | |
| 3.3 | Итленĕ тата вуланă текстсенче тапратнă проблема пирки сочинени авторĕ хăй шухăшне уçса пани | |
| 3.4. | Шухăшсене çыхăнуллă уçса пани | |
| 3.5. | Чĕлхе мелĕсене темăпа, стильпе, пуплев манерĕпе килĕшӳллĕ суйласа илсе тĕрĕс вырнаçтарни | |

| | | |
|---|---|---|
| 3.6. | Чӗлхен лексика тата грамматика пуянлӑхӗпе туллин усӑ курни | текстран илнӗ информаци ҫине тата хӑй курни-илтни, пӗлни, вулани ҫине, пурнӑҫ опычӗ ҫине таянса ӗнентерме пултарни. **Пултарулӑха аталантарма чӗлхе пысӑк вырӑн йышӑннине ӑнланса илни:** шухӑшсене ҫыхӑнуллӑ уҫса пама пултарни; чӗлхе мелӗсене темӑпа, стильпе, пуплев манерӗпе килӗшӳллӗ суйласа илсе тӗрӗс вырнаҫтарма пӗлни; чӗлхен лексика тата грамматика пуянлӑхӗпе туллин усӑ курма пӗлни; чӑваш чӗлхин орфографипе пунктуаци, грамматикӑпа пуплев нормисене пӑхӑнни. |
| 3.7. | Чӑваш чӗлхин орфографипе пунктуаци, грамматикӑпа пуплев нормисене пӑхӑнни | |

## Тӗрӗслевпе хаклав материалне пӗлӳ содержанийӗ тӑрӑх пайлани

| Пайсем | Ӗҫ шучӗ | Чи пысӑк балл | Миҫе процент йышӑнни |
|---|---|---|---|
| Пуплев. Итлени. Текста тӗрӗс ӑнланни. Изложени. | 1 | 7 | 21 |
| Пуплев. Вулав. Ҫыруллӑ пуплеве тӗрӗс ӑнланни | 1 | 1 | 3 |
| Чӑваш пуплевӗн илемӗ | 1 | 1 | 3 |
| Орфографи | 1 | 1 | 3 |
| Лексика | 1 | 1 | 3 |
| Синтаксис | 2 | 2 | 6 |
| Пунктуаци | 1 | 1 | 3 |
| Пуплев. Ҫыру. Панӑ темӑпа ҫыруллӑ текст туни | 1 | 9 | 27 |
| Тӗрӗс ҫырма пӗлни | 1, 3-мӗш пайсем (пӗтӗмӗшле) | 10 | 31 |
| Пӗтӗмпе | 8 | 33 | 100 |



## Тӗрӗслевпе хаклав материалне предмет результачӗсен ушкӑнӗсем тӑрӑх пайлани

| Вӗреннин предмет результачӗсен ушкӑнӗсем (ФГОСпа килӗшӳллӗн) | Ӗҫ шучӗ | Чи пысӑк балл | Миҫе процент йышӑнни |
|---|---|---|---|
| Тӗрлӗ предмета тухӑҫлӑ вӗренме пулӑшакан пуплев ӗҫӗ-хӗлӗн тӗп тӗсӗсене (вулав, аудировани (итлев), калав, ҫыру) алла илни | 2 | 16 | 48 |
| Сӑмахӑн тӗрлӗ (фонетика, морфема, сӑмах пулӑвӗ, лексика, морфологи), сӑмах майлашӑвӗпе предложенин синтаксис, текстӑн тӗрлӗ енлӗ тишкерӗвне тума хӑнӑхни | 7 | 7 | 21 |
| Чӗлхене наука тӗлӗшӗнчен пӗлнине анлӑлатни тата системӑлани; чӗлхе единицисемпе шайӗсем пӗр-пӗринпе ҫыхӑннине ӑнланни; чӗлхе пӗлӗвӗн тӗп ӑнлавӗсене, единицисене тата чӗлхен грамматика категорийӗсене ӑша хывни | 2, 3-мӗш ӗҫсем | | |
| Сӑмах пуянлӑхне ӳстерни, шухӑша тӗрӗс те ӑнланмалла уҫса пама йышлӑ лексикӑпа тата тӗрлӗ грамматика хатӗрӗпе усӑ курни | 2, 3-мӗш ӗҫсем | | |
| Литература чӗлхин тӗп (лексика, грамматика, орфографи, пунктуаци) нормисене, пуплев этикечӗн нормисене пӗлни; вӗсемпе кулаҫура тата ҫырура усӑ курни; пуплеве якатма тӑрӑшни; лексикӑн тата фразеологин стиль уйрӑмлӑхӗсемпе пӗлсе усӑ курни | 1, 3-мӗш ӗҫсем | 10 | 31 |
| **Пӗтӗмпе** | **9** | **33** | **100** |

## Тӗрӗслевпе хаклав материалне пайӗсем тӑрӑх уйӑрни

| Пай | Ӗҫ шучӗ | Пӗтӗм балл сумми | Ӗҫ тӗсӗ |
|---|---|---|---|
| 1-мӗш пай | 1 (1-мӗш ӗҫ) | 6 | Туллин хуравламалли ӗҫ |
| 2-мӗш пай | 7 (2–8-мӗш ӗҫсем) | 7 | Кӗскен хуравламалли ӗҫсем |
| 3-мӗш пай | 1 (9-мӗш ӗҫ) | 10 | Туллин хуравламалли ӗҫ |

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1, 3-мĕш пайсем | | 10 | Тĕрĕс çырма пĕлни |
| **Пĕтĕмпе** | **9** | **33** | |

### Тĕрĕслевпе хаклав материалне ĕç тĕсĕ тăрăх пайлани

| **Ĕç тĕсĕ** | **Ĕç шучĕ** | **Чи пысăк балл** | **Миçе процент йышăнни** |
|---|---|---|---|
| Изложени çырни | 1 | 7 | 21 |
| Тĕрлĕ тишкерӳ туни | 7 | 7 | 21 |
| Сочинени çырни | 1 | 9 | 27 |
| Тĕрĕс çырма пĕлни | | 10 (сочиненипе изложени çырни тăрăх) | 31 |
| Пĕтĕмпе | 9 | 33 | 100 |

### Чăваш чĕлхипе тытмалли экзамен вăхăчĕ

| **Организатор ĕçĕ** | **Экзамен тытакансен ĕçĕ** | **Вăхăт** |
|---|---|---|
| **Ĕçĕн 1-мĕш пайĕ** | | **75 мин.** |
| Аудина çырса илнĕ текста пĕрремĕш хут итлеттерни | Текста итлени. Итленĕ май черновикра çыркаласа пыни | 2,5–3 минут |
| Текста ăнланма вăхăт пани | Хуравăшсемпе ĕçлени | 3–4 минут |
| Аудиона çырса илнĕ текста иккĕмĕш хут итлеттерни | Текста итлени | 2,5-3 минут |
| Изложение çырма пуçласси тата словарьпе усă курма май пурри çинчен калани | Итленĕ текст тăрăх изложени çырни | 65 минут |
| **Ĕçĕн 2-мĕш пайĕ** | | **40 минут** |
| | Хут çине пичетленĕ текста вулани, тест ĕçĕсене туни | |
| **Ĕçĕн 3-мĕш пайĕ** | | **120 минут** |
| | Ăслав сочиненийĕ çырни | |
| **Пĕтĕмпе** | | **235 минут** (3 сехет те 55 минут) |



### Экзамен ирттермелли условисем

Орфографи словарĕпе экзамента усă курма юрать.

### Тĕрĕслевпе хаклав материалне 2020 çулта кĕртнĕ улшăнусем

2020 çулхи тĕрĕслевпе хаклав материалне 2019 çулхипе танлаштарсан экзамен тытăмĕ, 1, 3-мĕш ĕçсем улшăнман. 2020 çулта 2-мĕш пай ĕçĕсем 13-рен 7-не юлнă. 2019 çулта пĕтĕм ĕçшĕн чи пысăк балл 41 пулнă, 2020 çулта – 33 балл.

2019 çулта 2-мĕш пайăн ĕçĕсем пурте пĕр текстпа çыхăннă пулсан 2020 çулта вуланă текстпа 3 ĕç кăна тума пулать. Чĕлхе материалне тишкерессипе пĕтĕмпе 7 ĕç тумалла: 4 ĕç (2–5-мĕш ĕçсем) орфографи, пунктуаци, грамматика тишкерĕвне тăвас хăнăхăва тĕрĕслеме май параççĕ, 3 ĕç (6–8-мĕш ĕçсем) текста тишкерме пĕлнине хаклама пулăшаççĕ.

Асăрхăр: заданисен йĕрки (номерĕ) 2020 çулта пĕтĕмĕшле пырать. Çавăнпа 2-мĕш пай тӳрех 2-мĕш ĕçрен пуçланать.

### Вĕренекен валли хатĕрленĕ инструкци

Экзамен ĕçĕсене тума 3 сехет те 55 минут (235 минут) уйăрнă. Пĕтĕм ĕç 3 пайран тăрать.

**1-мĕш пайра** – итленĕ текста çывăх изложени çырмалла. Ăна 75 минутра тума сĕнетпĕр. Изложени текстне хуравсен 2-мĕш бланкĕ çине çырмалла.

**2-мĕш пайра** – панă текста тимлĕ вуламалла та ыйтусене хуравламалла. Ку ĕçе тума 40 минут уйăрма юрать.

2–8-мĕш ыйтусен хуравĕсене текстра ятарласа палăртса хăварнă вырăна çырмалла, кайран хуравсен 1-мĕш бланкĕ çине куçармалла.

**Экзамен ĕçĕн 3-мĕш пайĕнче** – калăпăшĕ енчен пысăках мар ăслав сочиненийĕ хайламалла. Хайлав çырма 120 минут уйăрсан аван. Сочинени текстне хуравсен 2-мĕш бланкĕ çине çырмалла.

Ĕçсене мĕнле йĕркепе панă, çав йĕркепех тума тăрăшăр.

Тимлĕ пулăр! Васкамасăр, тĕплĕ ĕçлĕр! Хăвăр тĕллĕн ĕçлеме вăй тата пĕлӳ пуррине шанăр!

## ШКУЛ АЧИСЕНЕ ЭКЗАМЕНА ХАТĔРЛЕССИ

### Изложени çырасси

Экзаменăн 1-мĕш пайĕ – итленĕ текста çывăх изложени çырасси. Изложени çыртарни ачасене тĕрĕс те логика тĕлĕшĕнчен çыхăнуллă шухăшлама, ачасен сăмах йышне ӳстерме, орфографи тата пунктуаци пĕлĕвĕсемпе хăнăхăвĕсене тарăнлатса çирĕплетме пулăшать. Изложени тĕсĕсем (тулли, текста çывах, суйлавлă, кĕске т.ыт.те.) нумай. Вĕсенчен чылайăшĕпе экзамена хатĕрленме усă курма пулать. Изложени çырма тĕрлĕрен хăнăхтару туса вĕрентме пулать. Хатĕрленӳ ханăхтарăвĕсем шутне текстпа паллашасси, ăна микротемăсем çине пайласси, план тăвасси, сăмахсемпе ĕçлесси кĕрет.

Изложени çырма хатĕрленĕ чухне ачасене текстăн темипе тĕп шухăшне тĕрĕс тупма хăнăхтармалла. Текста пирвайхи хут вуланă хыççăн пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмахсене ăнлантармалла, доска çине датăсене, пайăр ятсене çырса памалла. Сăмахăн пĕлтерĕш уйрăмлăхĕ контекстра кăна уçăмланнине асра тытмалла. Çавăнпа контекста тимлĕ тишкерме тивет. Уйрăмах сăнарлă сăмахсемпе сăмах майлашăвĕсене шута илмелле. Малтанхи хут вуланă чухне ачасен текстăн планĕпе çыхăннă сăмахсемпе сăмах майлашăвĕсене çырса пыма ирĕк пур.

Иккĕмĕш хут итленĕ май ачасем текст тытăмне тĕплĕнрех тишкереççĕ, микротемăсен йĕркине сăнаççĕ. Час-час тĕл пулакан сăмахсене, синонимсемпе антонимсене асăрхамалла, вĕсемпе изложени çырнă чух усă курмалла. Вĕсем текстăн тĕп шухăшне уçса пама пулăшĕç.

Çырса пынă тĕрев сăмахĕсем тăрăх тулли план хатĕрлеме юрать, мĕншĕн тесен лайăх йĕркеленĕ тулли план изложени ĕçне çăмăллатать, микротемăсене тĕрĕс уйăрма пулăшать. Планра ытлашши ним те пулмалла мар. Абзацран абзаца куçнă чухне çĕнĕ микротемăна пуçлакан сăмахсене, сăмах майлашăвĕсемпе предложенисене шута хумалла. Тулли план тума 5 минут уйăрма пулать. Ун хыççăн изложени çырма пуçламалла.

План вырăнне тĕрев конспекчĕ çырма юрать. Ку ĕçе çакăн пек йĕркелесен аван: хута вертикаль йĕрпе çурмалла уйăрмалла.



Хут листин пĕр енне текста пĕрремĕш хут вуланă вăхăтра тĕрев сăмахĕсем çырса пыраççĕ, тепĕр енне – иккĕмĕш хут вуланă вăхăтра, сиктернĕ сăмахсемпе предложенисене хушаççĕ, текст авторĕн витĕмлĕ сăмахĕсемпе сăмах çаврăнăшĕсене çырса хураççĕ. Йăнăшсем пулсан – тӳрлетеççĕ.

Изложени оригиналпа туллин тӳр килмелле, оригиналта çуккине хушса çырма юрамасть. Асра тытмалла: экзаменра сочинени евĕр изложени мар, текста çывăх изложени çырас пулать. Изложени çырнă чух çуралнă шухăшсемпе шкул ачи сочинени (9.1-мĕш ĕç) хайланă чух усă курма пултарать.

Изложени çырнă чух ачан итлекен текстăн стильне сыхласа хăвармалла. Илемлĕх тата кăмăл-туйăм мелĕсем мĕнле палăрнине те шута илмелле. Аса илтеретпĕр: изложени çырнă чух микротемăсене, текстăн тĕп шухăшне, автор аргуменчĕсене, автор пĕтĕмлетĕвне кăларса пăрахма юрамасть. Изложени текстне 1-мĕш сăпатран çырнă пулсан – ачан та 1-мĕш сăпатран çырмалла. Апла тумасан – факт йăнăшĕ шутланать.

Текста тĕрĕсленĕ чух логика çыхăнăвĕ тумалли чĕлхе мелĕсемпе пĕлсе усă курнине, шухăша тĕрĕс те ăнланмалла уçса памашкăн йышлă лексикăпа тата тĕрлĕ грамматика хатĕрĕпе усă курнине, оригинал текстăн содержанине уçса панă чух шухăш туллилĕхĕпе пуплев çыхăнулăхĕ пуррине шута илеççĕ.

Изложени калăпăшĕ 70 сăмахран кая пулмалла мар.

Экзамента изложени çырас йĕрке çапла пулмалла:

1) пĕрремĕш хут итленĕ чухне текстăн тĕп шухăшне ăнланма тăрăшмалла, тĕп сăмахсемпе сăмах ушкăнĕсене çырса пымалла;

2) иккĕмĕш хут итленĕ чух сиктернĕ сăмахсемпе сăмах ушкăнĕсене тата предложенисене хушса çырмалла;

3) изложение хуравăша (черновика) çырмалла;

4) çырнă текста абзацсем çине пайламалла, абзацсенчи сăмах шутне шутламалла;

5) текстра пĕтĕм сăмах шучĕ 70 сăмахран кая пулсан текста паллă ячĕсем, деепрчастисемпе причастисем хушса пуянлатмалла;

6) текстра йăнăш пуррипе çуккине тĕрĕслемелле те таса бланк çине куçарса çырмалла.

Ăнланма йывăртарах сăмахсене тата хăш-пĕр пайăр ятсене заданире çырсах параççĕ, çавăнпа тимлĕ пулмалла.

## Тест ыйтăвĕсене хуравласси

Экзаменăн 2-мĕш пайĕнче тест ыйтăвĕсене хуравламалла. Ку ĕçĕн тĕллевĕ – вĕренекен вуланă текста ăнланма тата текстран кирлĕ информаци илме пултарнине, чĕлхе пулăмĕсене тишкерсе классификацилеме пĕлнине тĕрĕслесси.

2-мĕш пай кĕскен хуравламалли 7 ĕçрен (2–8-мĕш ĕçсем) тăрать. Кĕскен хуравламалли ĕçсем шутне сăмах (сăмахсем) тата цифра (цифрăсем) çырса хуравламаллисем кĕреççĕ.

Тест ыйтăвĕсем сăмах, предложени, текст тишкерессипе çыхăннă. Кашни ыйту хыççăн 5-шер вариант хурав панă. Вĕсенчен тĕрĕсси пĕрре е темиçе пулма пултарать. 2–8-мĕш ыйтусен хуравĕсене текстра ятарласа палăртса хăварнă вырăна çырмалла, кайран хуравсен 1-мĕш бланкĕ çине куçармалла.

Малалла кашни ыйтăва уйрăммăн пăхса тухăпăр.

### 2 *Синтаксис тишкерĕвĕ*

Тестăн пĕрремĕш ыйтăвĕ (пĕтĕмĕшле 2-мĕш ĕç) предложенисен тĕп членĕсене (грамматика никĕсне) тупассипе çыхăннă.

Экзамен тытаканăн 5 предложенирен тăракан текста вуласа тухмалла та хуравра предложенисен тĕп членĕсене (грамматика никĕсне) тĕрĕс палăртнă вариантсене кăтартмалла. Предложенисене тишкернĕ чухне çаксене асра тытмалла:

1) предложенин тĕп членĕсене (грамматика никĕсне) палăртма сказуемăйран пуçламалла;

2) сказуемăй чăваш чĕлхинче ытларах чухне предложени вĕçĕнче тăрать;

3) сказуемăй ытларах чухне глаголтан, япала ятĕнчен, паллă ятĕнчен пулать;

4) глаголăн сăпатлă формисем предложенире яланах сказуемăй пулаççĕ;

5) подлежащи хăй пĕлтерĕшлĕ пур пуплев пайĕнчен те пулма пултарать;

6) тĕп падежри 1-мĕшпе 2-мĕш сăпат местоименийĕсем предложенире яланах подлежащи е сказуемăй пулаççĕ.



***Тĕслĕх.*** **Текста тĕплĕ, васкамасăр вуласа тухăр. Предложенисен тĕп членĕсене тĕрĕс палăртнă вариантсене кăтартăр.**

*(1)Тӳпере пĕр пĕлĕт татки те курăнмасть. (2)Йывăçсем хускалмасăр лараççĕ. (3)Вăрман хыçĕнчен тутлă ыйхăран вăранса сар хĕвел тухать. (4)Акă турат çинчен турат çине сиксе шăпчăк хăйĕн юррине шăрантарать. (5)Çавăн пек хитре сасăпа çĕнĕ кун çуралать.*

**Предложенисен тĕп членĕсене тĕрĕс палăртнă вариантсене кăтартăр.**

1) *пĕлĕт курăнмасть* (1-мĕш предложени);
2) *йывăçсем лараççĕ* (2-мĕш предложени);
3) *хĕвел тухать* (3-мĕш предложени);
4) *юррине шăрантарать* (4-мĕш предложени);
5) *сасăпа çуралать* (5-мĕш предложени).

Чи малтанах текстпа паллашатпăр, кашни предложенин тĕп членĕсене тупатпăр: *татки курăнмасть* (1-мĕш предложени); *йывăçсем лараççĕ* (2-мĕш предложени); *хĕвел тухать* (3-мĕш предложени); *шăпчăк шăрантарать* (4-мĕш предложени); *кун çуралать* (5-мĕш предложени).

Предложенисен хамăр палăртнă тĕп членĕсене хуаврисемпе танлаштарса тухатпăр та 2-мĕшпе 3-мĕш хуравсем тĕрĕссине ăнланатпăр, 2, 3 цифрăсене хуравра çыратпăр. 4-мĕшпе 5-мĕш хуравсем тĕрĕс пулма пултараймаççĕ, мĕншĕн тесен подлежащи тĕп падежри сăмахран кăна пулма пултарать (*юррине* – пару падежĕнче, *сасăпа* – пĕрлелĕх падежĕнче). Тĕп падежра тăрать пулин те 1-мĕш вариантри *пĕлĕт* сăмах та подлежащи пулаймасть, мĕншĕн тесен ку предложенире пĕлĕт татки курăнманни çинчен сăмах пырать, *пĕлĕт* сăмах определени пулать.

### 3 *Пунктуаци тишкерĕвĕ*

Тестăн иккĕмĕш ыйтăвĕ (пĕтĕмĕшле 3-мĕш ĕç) пунктуаци тишкерĕвĕпе çыхăннă. Ку ĕçре предложенири хăш-пĕр сăмахсем хыççăн цифрăсем лартса тухнă. Ачасен чарăну палли лартмалли вырăнсене кăтартакан цифрăсене суйласа илсе хуравра çырмалла.

***Тĕслĕх.*** **Чарăну палли лартмалли вырăнсене кăтартакан цифрăсене çырăр.**

*Директор умĕнчи хутне çырсах пĕтерчĕ (1) ăна папка ăшне чикрĕ (2) темĕнле хутсене ерипен пăлхаткаласа сĕтел хĕррине шутарчĕ (3) икĕ-виçĕ хутчен (4) сĕтел сунтăхне уçса хупрĕ (5) вара хăй умне тухса выртнă кĕнекене сылтăм аллипе (6) хуллен çапрĕ те (7) пӳлĕмри пысăк чӳрече çинелле пăхса шухăша кайрĕ.*

Кунта пĕр йышши сказуемăйсем (*çырсах пĕтерчĕ, чикрĕ, шутарчĕ, хупрĕ, çапрĕ, шухăша кайрĕ*) пуррине, вĕсенчен *çырсах пĕтерчĕ, чикрĕ, шутарчĕ, хупрĕ* сказуемăйсем пĕр-пĕринпе союзсăр çыхăннине, *çапрĕ* тата *шухăша кайрĕ* сказуемăйсем *те* союзпа çыхăннине асăрхатпăр. Пĕр йышши членсем союзсăр çыхăнсан вĕсене запятойпа уйăрмаллине аса илетпĕр те хуравра *2, 3, 5* цифрăсем çыратпăр. Пĕр йышши членсем *те* союзпа çыхăнсан вĕсене чарăну паллипе уйăрмалла маррине асра тытса хуравра *7* цифрăна кăтартмастпăр. Хуравра *4, 6* цифрăсене те çырмастпăр, мĕншĕн тесен вĕсем тăракан вырăнсене чарăну палли лартма сăлтав çук.

## 4 *Синтаксис тишкерĕвĕ*

Тестăн виççĕмĕш ыйтăвĕ (пĕтĕмĕшле 4-мĕш ĕç) синтаксис тишкерĕвĕпе çыхăннă: сăмах майлашăвĕн тĕп пайне (компонентне) çырмалла. Чăваш чĕлхинче сăмах майлашăвĕн тĕп компоненчĕ яланах пăхăнаканни хыççăн тăрать. Вăл пĕр сăмахлă та, темиçе сăмахлă та пулма пултарать. Икĕ пай хушшинчи пулăшу сăмахĕсем пăхăнакан пай тытăмне кĕреççĕ.

***Тĕслĕх. Ял хĕрринчи çуртăн пысăк чӳречисем*** **сăмах майлашăвĕн тĕп компонентне çырăр**.

*Ял хĕрринчи çуртăн пысăк чӳречисем* сăмах майлашăвĕн тĕп компоненчĕ – *пысăк чӳречисем.*

## 5 *Орфографи тишкерĕвĕ*

Тестăн тăваттăмĕш ыйтăвĕ (пĕтĕмĕшле 5-мĕш ĕç) орфографи тишкерĕвĕпе çыхăннă. Экзамен тытакан тĕрĕс çырма пĕлни çителĕксĕр, унăн орфографи тĕлĕшĕнчен сăмаха мĕншĕн



çапла çырнине те ăнлантарма пĕлмелле. 5-мĕш ĕçе тĕрĕс тăвас тесен шкул ачисен çак правилăсем çине уйрăмах пысăк тимлĕх уйăрмалла:

1) хупă сасăсен хытăлăхĕпе çемçелĕхне, вăрăмлăхĕпе кĕскелĕхне, янаравлăхĕпе янăравсăрлăхне çырура палăртасси;

2) пĕрле, дефиспа е уйрăм çырасси;

3) пайăр ятсене çырасси;

4) вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсене çырасси.

***Тĕслĕх.*** **Паллă тунă сăмахсене мĕнле çырнине тĕрĕс ăнлантарнă хурав варианчĕсен номерĕсене çырăр.**

1) *супăнь* – çемçе сыпăкри хупă сасă çемçен илтĕнсен çемçелĕх палли çырмалла;

2) *уй-хир* – мăшăр сăмахсене дефиспа çырмалла;

3) *чи хитре* – *чи* татăка паллă ятĕнчен уйрăм çырмалла;

4) *каяттăм* – ĕмĕт наклоненийĕнчи глаголсенче 1, 2-мĕш сăпатсенче икĕ *т* çырмалла;

5) *вула-ха* – *ха* междометие яланах дефиспа çырмалла.

Хуравăн 1-мĕш вариантĕнче хытă сыпăка çемçе тесе палăртнă. Çавăнпа ку вариант хуравĕ тĕрĕс мар. 2-мĕшпе 3-мĕш вариантсене тĕрĕс ăнлантарнă. Темиçе иртнĕ вăхăтри глагола ĕмĕт наклоненийĕнчи глагол тесе палăртнăран хуравăн 4-мĕш варианчĕ тĕрĕс мар. 5-мĕш вариантра *ха* татăка междомети тесе йăнăш ăнлантарнă. Çапла вара, ку тĕслĕхре 2-мĕшпе 3-мĕш хуравсем кăна тĕрĕс.

**6–8-мĕш ĕçсем** пурте пĕр текстпа çыхăннă. 3-мĕш пайри сочиненисенче те çак текстран илнĕ аргументсемпе усă курмалла. Çавăнпа текста уйрăмах тимлĕ вуламалла.

***Текст тĕслĕхĕ.*** *(1)Вăрçă ... (2)Чылай çын пуçне çирĕ ылханлă вăрçă. (3)Униççепе пĕрле ӳснĕ, пĕрле вĕреннĕ-ĕмĕтленнĕ каччăсене те шеллемерĕ тискер вăрçă. (4)Тăхăр каччă тантăш, тăхăр мал ĕмĕтлĕ чĕре, тăхăр пулас упăшка, тăхăр пулас атте кил тĕлне тупаймарĕç. (5)Хăшĕ пĕтрĕ. (6)Хăшĕ çухалчĕ. (7)Çутă сăнарĕсем кăна тăрса юлчĕç халăхра телейсĕр ăмăрт кайăксен.*

*(8)Сантăр тантăшĕсенчен телейлĕрех пулчĕ. (9)Тĕнче вăрçин*

*вут-çулăмĕнчен чĕррĕнех тухрĕ яш каччă. (10)Вăл та, Униççе пекех, вăрçă чарăннă-чарăнманах таврăнчĕ яла. (11)Сывах юлчĕ пулсан та, вăрçăн тертне-асапне самаях тутанса пăхнă иккен Униççе тантăшĕ. (12)Хаяр тытăçу-çапăçура кăна мар, тăшман тыткăнĕнче çулталăка яхăнах асап тӳснĕ çамрăк каччă. (13)Тыткăнран тарма та, партизансем патне лексе фашистсене хаяррăн тавăрмашкăн та вăй-хал çитернĕ-мĕн каярахпа. (14)Унтан каллех – çар речĕ. (15)Каллех çапăçу, тытăçу. (16)Фашистсен тĕп хулине – Берлина штурмланă çĕре те хутшăннă Сантăр. (17)Унтах аманнă. (18)Ураран суранланнă. (19)Çар службинчен те çав сурана пулах хăтарнă-мĕн ăна…*

*(20)Вăрçă çухатусăр, терт-асапсăр пулмасть.* (В. Чебоксаров*.)

***Владимир Чебоксаров** (1929 – 2010) – чăвашсен паллă çыравçи.*

**6** ***Текст содержанийĕн тишкерĕвĕ***

Тестăн пиллĕкмĕш ыйтăвĕ (пĕтĕмĕшле 6-мĕш ĕç) текстăн содержанине тишкерессипе çыхăннă. Ачасен текста тимлĕ вуламалла та хурав варианчĕсенчен текст содержанине хирĕçлеменнисене суйласа илмелле. Йăнăшсем ытларах факт тĕлĕшĕнчен (пайăр ятсене, ĕç вăхăчĕпе вырăнне, япала е ĕç шутне т.ыт.те йăнăш палăртни) тӳр килменнипе пулма пултараççĕ.

**Текст содержанийĕпе хăш предложенисем тӳр килеççĕ?**

1) Сантăр – Униççе тантăшĕ.
2) Униççепе пĕрле ӳснĕ ултă каччă вăрçăран киле таврăнаймарĕ.
3) Сантăр вăрçă чарăннă-чарăнманах киле таврăнчĕ.
4) Сантăр вăрçăра урине амантнă.
5) Униççе Берлина штурмланă çĕре хутшăннă.

Сантăр Униççе тантăшĕ (1-мĕш вариант) пулнине тавçăрма 3, 4, 9-мĕш предложенисем пулăшаççĕ. 4-мĕш предложение вуласа 2-мĕш вариантри хурав тĕрĕс пулманнине пĕлме пулать (*тăхăр* вырăнне *ултă* çырнă). Хуравăн 3-мĕш варианчĕ тĕрĕс пулнине 10-мĕш предложени кăтартать. Сантăр вăрçăра урине амантнине 16–18-мĕш предложенисенчен тавçăрма пулать (4-мĕш вариант). Униççе Берлина штурмалани çинчен текстра информаци çук, апла пулсан хуравăн 5-мĕш варианчĕ йăнăш.



**7** ***Илемлĕх мелĕсене тишкерни***

Тестăн улттăмĕш ыйтăвĕ (пĕтĕмĕшле 7-мĕш ĕç) текстра илемлĕх мелĕсене тупассипе çыхăннă. Экзамен ĕçĕнче чĕлхене илемлетекен мелсенчен эпитет, танлаштару, метафора, метоними, сăпатлантару пулма пултарать.

***Тĕслĕх.* Эпитетлă предложенисен номерĕсене кăтартăр.**

(1) Чылай çын пуçне çирĕ ылханлă вăрçă.

(2) Униççепе пĕрле ӳснĕ, пĕрле вĕреннĕ-ĕмĕтленнĕ каччăсене те шеллемерĕ тискер вăрçă.

(3) Сантăр тантăшĕсенчен телейлĕрех пулчĕ.

(4) Вăл та, Униççе пекех, вăрçă чарăннă-чарăнманах таврăнчĕ яла.

(5) Фашистсен тĕп хулине – Берлина штурмланă çĕре те хутшăннă Сантăр.

*Чылай çын пуçне çирĕ ылханлă вăрçă* предложенире *ылханлă*, *Униççепе пĕрле ӳснĕ, пĕрле вĕреннĕ-ĕмĕтленнĕ каччăсене те шеллемерĕ тискер вăрçă* предложенире *тискер* сăмахсем эпитет пулаççĕ. Ытти предложенисенче эпитет çук.

**8** ***Лексика тишкерĕвĕ.***

Тестăн çиччĕмĕш ыйтăвĕ (пĕтĕмĕшле 8-мĕш ĕç) лексикăпа (антоним е синоним тупассипе) çыхăннă.

***Тĕслĕх. Яш* сăмахăн (9-мĕш предложени) синонимне текстра тупса çырăр.**

*Яш* сăмахăн синонимĕ – *çамрăк* (12-мĕш предложенире).

Ачасене тест ыйтăвĕсене хуравлама вĕрентме вĕренӳ кĕнекинчи текстсемпе те усă курма пулать. Вăл е ку текста вуланă хыççăн ыйтусемпе ĕçлеттерме пулать, ыйтăвĕсене вара маларах кăтартнă пек йĕркелемелле.

## Ăслав сочиненийĕ çырасси

Экзаменăн 3-мĕш пайĕ вăл – калăпăшĕпе пысăк мар ăслав сочиненийĕ çырасси. Хаклав виçи тăрăх, ачасен сочиненийĕсенче сахалтан та 70 сăмах пулмалла.

Хакланă чухне сочинение нумай енчен пăхаççĕ: ача итленĕ тата вуланă текстсенчен аргумент илме пултарни; автор шухăшне е хăй шухăшне логика енчен çыхăнуллă çырса ĕнентерме пултарни. Ку рете сочинение орфографи, пунктуаци, пуплев, грамматика тата факт енчен мĕнле çырни те кĕрет.

Сочинени шухăш пĕрлĕхĕ пуррипе, пайсен çыхăнулăхĕпе тата уçăмлăхĕпе палăрса тăмалла. Шухăш пĕрлĕхĕ шухăша çыхăнуллă аталантарса ĕнентерме, пĕтĕмлетӳ тума пĕлнинче те сисĕнет. Сочинени авторĕ тема пирки хăй мĕн шухăшлани яр уççăн курăнмалла.

Ачасене текст пайĕсем тата предложенисем пĕр-пĕринпе епле мелсемпе çыхăннине ăнлантармалла, çав мелсемпе сочиненире те усă курма хăнăхтармалла. Предложенисене чăваш чĕлхин синтаксисне пăхăнтарса йĕркелес пулать. Темăпа рема ушкăнĕсене, шухăш тĕшши ӳкекен сăмахсене кирлĕ пек вырнаçтарма та пĕлмелле. Тĕпрен илсен, сочиненире пĕр-пĕр шухăша ĕçĕн малтанхи пайĕнче калаççĕ те тĕп пайра ăнлантараççĕ. Ача темăра каланă проблема çинчен хăй мĕн шухăшланине кĕскен пĕлтерет те шухăшне икĕ аргументпа çирĕплетсе ĕнентерет. Сочинени ăслав, шухăшлав майлă пулмалла. Çавăнпа та «тезис – аргументсем – пĕтĕмлетӳ» йĕркене çирĕп пăхăнмалла. Хăйĕн шухăшне çирĕплетме шкул ачин сахалтан та икĕ аргумент пулмалла.

Сочинени пуçламăшĕнче тезис пулмалла. Тезис – хускатнă ыйту çине хурав калăплани; хушнă ĕçре панă сăмаха ăнлантарни, уçса пани; ăславра ĕнентермелли шухăш.

Тезиса çырас умĕн ĕçе (задание) тепĕр хут вуласа тухмалла. Ăнланас пулать: вуланă текстра палăртнă мĕнле шухăша уçса памалла е мĕнле сăмах пирки ăслав çырмалла? Çав сăмаха текстра тупмалла. Контекст мĕнлереххине сăнамалла, çав сăмах текстра мĕнле пĕлтерĕшлине ăнланмалла.



Тезис çырма кластерсемпе ĕçлени пулăшать. Тăван чĕлхе çинчен сочинени çырмалла пулсан çакăн пек кластерсем тутарма пулать.









### Тезис ҫырмалли ӗлке тӗслӗхӗсем

| |
|---|
| *…вăл – ….* <br> *Манăн шухăшпа (эпӗ шухăшланă тăрăх ), … вăл – …* <br> *… вăл, манăн шухăшпа, ….* |

### Текстăн тӗп шухăшне уҫса памалли ӗлкесем

| | | |
|---|---|---|
| *Тӗп шухăш* | *……. ятӗнче* <br> *……..сăмахсенче* <br> *предложенире(сенче)* <br> *……… пайсенче* | *палăрать.* |

Тӗп пайӗнче сочинени пуҫламăшӗнче хускатнă шухăша малалла аталантарса пымалла. Сочиненин тӗп пайӗнче акă мӗн-мӗн пулмалла:

1) хускатнă ыйту ҫинчен текст авторӗ мӗн шухăшланине (позицине) палăртни;

2) каланă шухăшсене ăнлантарни (комментари пани);

3) харпăр хăй шухăшне вуланă тата итленӗ текстсенчи, пурнăҫри, обществăри тата илемлӗ литературăри (сочинени темине кура) тӗслӗхсем ҫине таянса палăртни, тепӗр майлă каласан, аргументсемпе ӗнентерни.

Аргумент – тезиса ӗнентерме пулăшакан ӗҫсемпе пулăмсем, фактсем, тӗслӗхсем, ăнлантарнисем т. ыт. те. Аргументсене экзаменра итленӗ тата вуланă текстсенчен илме юрать. Хăвăр курни-илтни, унччен вулани ҫине таянма та май пур.

Аргументсене ăҫтан илесси 9.1–9.3 темăсенчен хăшне суйласа илнинчен килет.

9.1-мӗш номерпе кăтартнă темăна суйласа илсен – хăвăр шухăшăра ӗнентерме пӗр аргументне итленӗ текстран, теприне вуланă текстран илмелле.

9.2-мӗш номерпе кăтартнă темăна суйласа илсен – хăвăр шухăшăра ӗнентерме вуланă текстри икӗ аргументпа усă курмалла.

9.3-мӗш номерпе кăтартнă темăна суйласа илсен – хăвăр шухăшăра ӗнентерме пӗр аргументне вуланă текстран, теприне хăвăр пурнăҫăр опытӗнчен илмелле.



### Аргументсене сочиненире кăтартмалли ӗлкесем

| | |
|---|---|
| Предложени номерне скобкăсăр кăтартни | *3-мӗш предложенире шăпах ҫак шухăша уҫса панă.* |
| Предложени номерне скобкăра кăтартни | *Униҫҫе пӗрле ӳснӗ тăхăр каччă тискер вăрҫăран киле таврăнайман (3–4-мӗш предложенисем).* |
| Предложени номерне скобкăсăр кăтартни, цитатăн уйрăм сăмахӗсене кавычкăна илни | *7-мӗш предложенире В. Чебоксаров Униҫҫен вăрҫăра вилнӗ тантăшӗсем ҫинчен «тăхăр пулас упăшка, тăхăр пулас атте» тесе ҫырать.* |
| Предложение номерне палăртмасăрах цитатăлани (чăрăну паллисем ҫинчен манса каймалла мар) | *Униҫҫе тантăшӗсене В. Чебоксаров «тăхăр пулас упăшка, тăхăр пулас атте» тесе палăртать.* |
| Чӗлхе пулăмӗсене палăртса цитатăлани | *Вăрҫă хăрушлăхне палăртма автор «ылханлă», «тискер» эпитетсемпе усă курать…* |

*Автор* сăмахпа тăтăш усă курасран ăна урăх сăмахпа ылмаштармалла:

1) *публицист* сăмахпа (публицистика стилӗпе ҫырнă текст пулсан);

2) *писатель, ҫыравҫă* сăмахсемпе (илемлӗ стильпе ҫырнă текст пулсан);

3) *вăл* местоименипе;

4) текст авторӗн ячӗпе тата хушамачӗпе.

### Текстран илнӗ аргументсене ҫырмалли ӗлкесем

| |
|---|
| *В. Чебоксаров ҫырнă текстра ….* <br> *Каланине ӗнентерме …-мӗш предложение илсе пăхатпăр.* <br> *…-мӗш предложени …. шухăша ҫирӗплетет.* <br> *Ку шухăша В. Чебоксаров текстӗнчи ..-мӗш предложенипе ҫăмăллăнах ӗнетерме пулать.* <br> *Сăмахран, вуланă текстри сăнар тыткаларăшне (калаҫăвне, хăтланăшне) тишкерсе … калама (курма, туйма) пулать.* |

### Пурнăçран илнĕ аргументсене çырмалли ĕлкесем

*Хамăр пурнăçра та эпир .... тĕслĕхсене нумай (чылай, тăтăш) куратпăр. Сăмахран, ....*
*... кунĕнче (шкулта, библиотекăра, музыка шкулĕнче) пире çавăн пекрех пулăм (ĕç, истори) çинчен каласа пачĕç.*
*Хамăн ачалăхран эпĕ çакăн пекрех ĕçе аса илетĕп.*
*Манăн шухăш тĕрĕссине литература (обществознани, истори, физика, биологи, географи) учебникĕсенчен илнĕ тĕслĕх те ĕнентерсе парать.*

Сочинени пĕтмĕшĕ ăслава вĕçленнĕ сĕм парать, пĕтĕмлетӳсем патне илсе çитерет. Пĕтĕмлетӳ – аргументсем çине таянса тата тезиспа çыхăнтарса пĕтĕмлетни.

### Пĕтĕмлетӳ çырмалли ĕлкесем

*Çапла вара, ...*
*Апла пулсан, ...*
*Каланине пĕтĕмлетсе, ... палăртмалла (палăртас килет).*
*... тесе шухăшлатăп.*
*.... шанас килет.*
*.... çакăн пек шухăшсем çуралчĕç.*

Ăслав сочиненийĕсенче кӳртĕм сăмахсемпе предложенисем, пăхăнуллă союзсем пысăк вырăн йышăнаççĕ.

### Ăславра усă курмалли кӳртĕм сăмахсемпе предложенисен ушкăнĕсем

| Ушкăнĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Шухăш камран е ăçтан тухнине палăртаканнисем | *Пирĕн шухăшпа, эпĕ шутланă тăрăх, тĕпчевçĕсен шухăшĕпе, автор (çыравçă) шухăшĕпе, çыравçă палăртнă тăрăх* |
| Ĕнентерекеннисем (аргументлаканнисем) | *Акă, тĕслĕхрен, сăмахран* |
| Шухăш çыхăнăвĕн йĕркине палăртаканнисем | *Пĕрремĕшĕнчен, иккĕмĕшĕнчен, виççĕмĕшĕнчен, пĕр енчен, тепĕр енчен, чăн малтан, юлашкинчен* |
| Шухăша пĕтĕмлетекеннисем | *Çапла вара, кĕскен каласан, пĕтĕмлетсе каласан, апла пулсан, эппин* |

Кӳртĕм сăмахсемпе предложенисен ушкăнне кура вĕсемпе сочиненин вăл е ку пайĕнче усă курмалла.

### Ăславăн тĕрлĕ пайĕнче усă курмалли кӳртĕм сăмахсем

| Тезис | Аргументсемпе ĕнентерни | Пĕтĕмлетӳ |
|---|---|---|
| *Манăн шухăшпа*<br>*Эпĕ шутланă тăрăх*<br>*Автор çырнă тăрăх* | *Пĕрремĕшĕнчен*<br>*Иккĕмĕшĕнчен*<br>*Пĕр енчен*<br>*Тепĕр енчен*<br>*Сăмахран*<br>*Тĕслĕхрен*<br>*Чăн малтан*<br>*Юлашкинчен* | *Пĕтĕмлетсе каласан*<br>*Кĕскен каласан*<br>*Çапла вара*<br>*Эппин*<br>*Чăнах та* |

### Ăславра усă курмалли пăхăнуллă союзсен ушкăнĕсем

| Ушкăнĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Пирке | *мĕншĕн тесен (ма тесен), тесе* |
| Тĕллев | *тесе* |
| Тĕллевпе услови | *тесен* |
| Услови | *пулсан, енчен, эхер, ытах, тĕк* |
| Килĕшӳ | *пулсан та, пулин те, хуть* |

Ăслава çырнă май ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курмалла.

Ытти текстсенчи пекех, сочиненин абзацĕсене уйăрмалла. Абзац пуçламалли предложени яланах пĕлтерĕшлĕ пулмалла, текстăн аталанăвне кăтартса пымалла. Абзацсене тĕрĕс уйăрнă текстра пуçламăш предложенисенчен çыхăнуллă текст йĕркелеме пулать. Сочиненире абзац пачах та пулмасан е ытлашши пĕчĕк абзацсем туса кайсан – шухăш логика енчен çыхăнса пынине асăрхама питĕ йывăр. Çавăнпа та абзац уйăрасси çине тимлĕ пăхăр.

Сочинени калăпăшĕ 70 сăмахран кая пулмалла мар.

Енчен те эсир экзаменра итленĕ тата вуланă текстсене ним улăштармасăр çырса илетĕр пулсан ĕçĕре 0 балл лартса хаклаççĕ.

Аса илтеретпĕр, ăслав сочиненийĕ çырнă чух шкул ачин текст авторĕсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе уçăмлăн кăтартмалла (автор позицийĕпе тӳр килмест пулсан та). Сирĕн сочинени темипе тĕп шухăшĕ, композици çыхăнулăхĕпе тĕрĕслĕхĕ, сăмах пуянлăхĕпе палăртулăхĕ пуррипе палăрса тăмалла. Шухăша тĕрĕс те ăнланмалла уçса памашкăн йышлă лексикăпа, тĕрлĕ грамматика хатĕрĕпе усă курма манмалла мар.

Çапла вара, ăслав сочиненийĕ çырнă чухне чи кирли сочинени темине тĕрĕс ăнланни, ăна уçса памалли мелсене суйласа илме пĕлни. Çакна тума вара ăслав сочиненийĕн тытăмне çирĕп пĕлни, тезис калăпламалли, аргументсем илсе памалли ăслайсемпе усă курма пĕлни кирлĕ. Сочинени ĕçĕ виçĕ пайран тăнине асра тытса яланах шухăша пĕтĕмлетсе хăвармалла. Пĕтĕм ĕç сĕннĕ темăпа çине-çине çыхăнса пымалла.



## 2017-2019 ÇУЛСЕНЧЕ ИРТТЕРНĔ ЭКЗАМЕН МАТЕРИАЛĔ

### *1-мĕш вариант*

**1 пай**

***Текста тимлĕ итлĕр те ăна çывăх изложени çырăр.***

Манăн анне – тĕлĕнмелле çын. Çакă таçта та палăрать.

Акă ĕнер шкултан килсен эпĕ тӳрех урама тухса чупрăм. Юлташсемпе лапталла вылярăм. Кил çинчен аса та илмерĕм.

– Гена, яшка пиçрĕ! – апата чĕнчĕ мана анне.

Пӳрте чупса кĕтĕм. Сĕтел çинче пăрса яшки, хуплупа çăмарта хăпартни. Çирĕм. Ытла та тутлă пĕçерет манăн анне! Çинĕ хыççăн ăшă сĕт ĕçрĕм, унтан уроксене хатĕрленме тытăнтăм.

Чи йывăрри задача шутласси пулчĕ. Ниепле те тухмасть. Çакна анне асăрхарĕ те ман пата пычĕ. Иккĕн ĕçлесе задачăн тупсăмне часах тупрăмăр.

Унтан сăвă вĕренме пуçларăм. Анне манăн тумтире йĕпе татăкпа шăлса тасатрĕ, тӳмесене çирĕплетрĕ.

Вырăс чĕлхипе çыру ĕçĕ тунă чухне анне ман чăлхана сапларĕ, шăлавара тирпейлерĕ.

Уроксене хатĕрленсе пĕтертĕм те телевизор умне вырнаçрăм. Анне эпĕ мультфильм курнă вăхăтра чуста хучĕ, манăн шурă кĕпене çуса çакрĕ, пулă тасатрĕ.

Мультфильм курса пĕтерсенех çывăрма выртрăм. Анне мана утиялпа витрĕ те çывăрмалли пӳлĕмре урай çума пуçларĕ.

Ирхине радио сассипе вăрантăм. Куçа уçса пăхрăм. Анне кĕпене утюгпа якатать. Кĕçех пушмака крем сĕрсе тасатрĕ.

Вырăн синчен тăтăм, кухньăна тухрăм. Анне мана çăвăнма лĕп шыв хатĕрленĕ, икерчĕ пĕçернĕ, сĕт вĕретнĕ.

– Ывăлăм, ашă сĕт ĕç, – илтĕнчĕ çепĕç те кăмăллă сасă. Аннен сасси яланах çапла илтĕнет.

Хăçан ларса канать-ши ман анне? Хăçан выртса çывăрать-ши? Чăнах та, ылтăн алăллă-çке вăл манăн. Анне ахаль ларнине пĕрре те курман.

Ытла та нумай ĕç вĕт ман аннен! Малашне аннене хамăн та пулăшас пулĕ. *(Г. Мальцев.)*

## 2-мӗш пай

***Алла панӑ текста тӗплӗ, васкамасӑр вуласа тухӑр, 2.1–2.14 ӗҫсене тӑвӑр.***

(1)Ҫак кунхине Улине аппа яланах питӗ ир тӑрать. (2)Паян та вӑл илӗм-тилӗмлех автан пусрӗ, кӑмака хутса ячӗ. (3)Паян уяв. (4)Ку уяв, шӑпах кӗр мӑнтӑрӗпе, уйсемпе пахчасенче ҫынсемпе машинӑсен шавӗ лӑплансан килет. (5)Ҫак уява Улинке инке те юрататать, анчах ҫав кунхине ӑна савӑнӑҫпа пӗрле хуйхӑ та пусать. (6)Ҫынсем патӗнче пӳрт тулли хӑна-вӗрле ӗрлешнине илтсен Улинен хавшаса ҫитнӗ чӗринче вӑхӑталла тамалнӑ тунсӑхпа кӳренӳ каллех тапранаҫҫӗ. (7)Упӑшки, темиҫе те сусӑрланса аманнӑскер, нимӗҫ вӑрҫинчен киле таврӑнчӗ те нумаях та пурӑнаймарӗ. (8)Аслӑ ывӑлӗ те вӑрҫӑ варринче тухса кайрӗ те таҫти ҫапӑҫура-тытӑҫура пӗр хыпарсӑр-хӑнарсӑр ҫухалчӗ. (9)Хӗрӗ ахӑр саманара чирлесе кайрӗ те текех ура ҫине тӑраймарӗ.

(10)Микиш вара, кӗҫӗннни, ҫуралсанах юман пек ҫирӗп те кӗрнеклӗ ӳсрӗ. (11)Пичӗ ашшӗнни майлах тӑваткал унӑн. (12)Куҫӗ хӗсӗкрех. (13)Пичӗ-куҫӗ ҫеҫ мар, хӑйне хӑй тыткаласси те, йӑли-йӗрки те ашшӗнех.

(14)Ывӑлӗ ҫыру яманни амӑшне питӗ хурлантарать. (15)Ҫавӑнпа ял-йышран аван мар. (16)Канмалли кунсемпе уявсенче хуларан хӑна-вӗрле килсе тулсан чун уйрӑмах ыратать. (17)Ывӑлӗ хӑйне маннине ӗненмест карчӑк, ҫынсене те алӑ май чухне начар шухӑшран пӑрса яма тӑрӑшать.

(18)Халӗ те акӑ Улине инке ик аркӑллӑ хӑмӑр кӗпе тӑхӑнчӗ, умне тӗттӗм кӑвак саппун ҫакрӗ. (19)Пӗрмай тыткаланипе лучӑрканса-вараланса пӗтнӗ конверта хӑйпе пӗрле илчӗ те килтен тухса талкӑшрӗ. (20)Чӑн малтан вӑл Сахви патне кӗчӗ.

(21)– Сан Микишӳ мӗнле пурӑнать тата? – ыйтрӗ кил хуҫи, карчӑка хирӗҫ, пукан ҫине ларса. – (22)Ҫыру ярать-и?

(23)– Ямасӑр… (24)Ик-виҫ кун каялла ҫеҫ илтӗм ҫав. (25)Вулаймарӑм та – выртать. (26)Хам хутла тӗшмӗртсех каймастӑп.

(27)– Ара, тӳрех кунта йӑтса килмеллеччӗ. (28)Санькка, вула. (29)Эс пуринчен те нумайрах вӗреннӗ.

(30)Ҫырӑва вуласа пӗтерсен Санькка ӑна конверта чикрӗ те ҫавӑркаласа пӑхрӗ.



(31)Тӗлӗнмелле! – терӗ вӑл амӑшӗ ҫине пӑхса. (32)–Ҫыру ӑҫтан килни паллӑ мар. (33)Микиш адресӗ те ҫук, почта штемпелӗ те ҫук.

(34)Ҫак сӑмахсене илтсе кӳреннӗ Улине инке Сахвисем патӗнчен уни-куни сыв пуллашса тухрӗ те Хвекласем еннелле пӑрӑнчӗ. (35)Хвеклан пӳрт тулли ача-пӑча хӗвӗшет. (36)Мӑнукӗсем хуларан килнисем те, ялтисем те пур.

(37)Вӗсем ҫине Улине инке усҫӑнах ӑмсанса, темле сирӗлми хуйхӑпа пӑхнине асӑрхарӗ те Хвекла карчӑка хӑвӑртрах йӑпатма васкарӗ.

(39)– Сан Микиш те ҫыру янӑ тет-ха, – терӗ вӑл.

(40)–Ҫыру килчӗ… (41) Акӑ вӑл. (42) Мӑнукусене парса вулаттар-ха.

(43)Ҫырӑва вуласа тухнӑ хыҫҫӑн Марине пӗр пысӑк йӑнӑш турӗ.

(44)– Асанне! Ку ҫырӑва ман атте ҫырман пуль те? – терӗ хӗр ача сасартӑк. (45)–Шӑп та лӑп ун алли. (46)Ҫитменнине, океан ҫинчен ҫырать. (47)Пирӗн атте салтакра чухне океанра ишнӗ вӗт-ха.

(49)Улине инке ним чӗнмесӗр ура ҫине тӑчӗ, ҫырӑва хӗр ачаран илчӗ те хӑйне хӑй ҫын умӗнче алла илеймесрен шикленсе кӗтмен ҫӗртен тухса кайрӗ. (50)Чӳречерен пӗкӗрӗлчӗк те хыткан карчӑк ҫырӑва кӑшт чӗтрекен аллипе кӑкӑр умне тытса урӑх кӳршисем патне уттарни курӑнса кайрӗ. (51)Амӑшӗ хӑй ачинчен ыррине кӑна кӗтет иккен. *(В. Петров.)*

**2.1.** Итленӗ текстпа вуланӑ текста мӗнле шухӑш пӗрлештерет?

1) Ырӑ ҫын умӗнче эпир парӑмра.
2) Ача-пӑча ӳстересси ҫӑмӑл мар.
3) Чыса ҫамрӑкран упра.
4) Ыр ут пуласси тихаран паллӑ.

**2.2.** Хӑвӑр вуланӑ текстра автор шухӑшне хӑш предложени уҫса парать?

1) 1 2) 5 3) 6 4) 51

**2.3.** Текста мӗнле стильпе ҫырнӑ?

1) калаҫу стилӗ

2) наука стилĕ
3) публицистика стилĕ
4) илемлĕ литература стилĕ

**2.4.** Хăш предложенире антоним пулакан япала ячĕсем пур?
1) 5 2) 6 3) 10 4) 50

**2.5.** 1-мĕш предложенире сасă шучĕ сас палли шутĕнчен ытларах сăмах хăшĕ?
1) кунхине 2) Улине 3) яланах 4) тăрать

**2.6.** 10-мĕш предложенире мĕнле илемлĕх мелĕ пур?
1) танлаштару 2) метафора 3) сăпатлантару 4) эпитет

**2.7.** 5-мĕш предложенири иккĕмĕшле сăмах (*савăнăçпа)* мĕнле пулнă?
1) *сав* глагол çумне *-ăнăç* тата *-па* аффикссем хушăннипе
2) *с* евĕрлев сăмахĕ çумне *-авăнăç* аффикс хушăннипе
3) *сав* глагол çумне *-ăн* тата *-ăç* аффикссем хушăннипе
4) *савăн* глагол çумне *-ăçпа* аффикс хушăннипе

2.8. 35-мĕш предложенире *ача-пăча* сăмаха мĕншĕн дефиспа çырнă?
1) мăшăр сăмах пулнă пирки
2) хутлă сăмах пулнă пирки
3) икĕ хут калакан сăмах пулнă пирки
4) *пăча* татăка яланах дефиспа çырнă пирки

**2.9.** 49-мĕш предложенири *умĕнче* сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулать?
1) паллă ячĕ 2) япала ячĕ 3) глагол 4) наречи

**2.10.** *Чăн малтан вăл Сахви патне кĕчĕ* предложенире (20 №) шухăш тĕшши хăш сăмахсем çине ӳкет?
1) чăн матан 2) вăл 3) Сахви патне 4) кĕчĕ

**2.11.** *Паян та вăл илĕм-тилĕмлех автан пусрĕ, кăмака хутса ячĕ* предложенире (1 №) подлежащи пулакан сăмах хăшĕ?



1) паян 2) вăл 3) автан 4) кăмака

**2.12.** 4-мĕш предложени тытăмĕ енчен хăш ушкăна кĕрет?
1) сыпăнуллă хутлă предложени
2) çыхăну паллисĕр хутлă предложени
3) пайĕсене деепричасти аффиксĕпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложени
4) пайĕсене вырăнĕ-йĕркипе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложени

**2.13.** 18-мĕш предложенире запятой лартнин сăлтавне ăнлантарăр.
1) пĕр йышши членсем союзсăр çыхăннă пирки
2) сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсем умлăн-хыçлăн пулса иртекен ĕçсене кăтартнă пирки
3) сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсем пĕр вăхăтра пулса иртекен ĕçсене кăтартнă пирки
4) çыхăну паллисĕр хутлă предложени пайĕсем умлăн-хыçлăн пулса иртекен ĕçсене кăтартнă пирки

### 3-мĕш пай

***Итленĕ тата вуланă текстсемпе усă курса 14.1, 14.2 е 14.3 ĕçсенчен пĕрне тăвăр. Хайлав çырас умĕн суйласа илнĕ ĕçĕн номерне палăртăр: 14.1, 14.2 е 14.3.***

**14.1. «Аçу-аннӳне хисепле, хăвнах ырă пулĕ»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.

Хăвăр шухăшăра икĕ аргументпа ĕнентерĕр: пĕр аргументне итленĕ текстран, теприне вуланă текстран илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**14.2.** Вуланă текстра палăртнă **«Амăшĕ хăй ачинчен ыррине кăна кĕтет иккен»** шухăша уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.

Хăвăр шухăшăра вуланă текстри икĕ аргументпа ĕнентерĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**14.3.** ***Çынлăх*** сăмаха эсир мĕнле ăнланатăр? Хăвăр панă определение уçса парăр. **«Мĕн вăл çынлăх?»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр.

Тезис вырăнне хăвăр панă определенипе усă курăр. Тезиса аргументлама икĕ аргумент тĕслĕхпе усă курăр: пĕр аргументне вуланă текстран, теприне хăвăр пурнăçăр опытĕнчен илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

## *2-мĕш вариант*

### 1-мĕш пай

***Текста тимлĕ итлĕр те ăна çывăх изложени çырăр.***

Пĕр ватă çын хăйĕн ывăлĕпе кинĕ патĕнче пурăннă. Кинĕ хуньăшне пăхма юратман. Çавăнпа пĕррехинче упăшкин тинкине илнĕ: «Аçуна çунашка çине ларт та тарăн вара леçсе пăрах», – тенĕ. Чăнах та, пĕр шартлама сивĕ кун ватă çынна ывăлĕ çунашка çине лартать те туртса каять. Вĕсемпе пĕрле пĕр çичĕ-сакăр çулхи ачи те ерсе пырать.

Акă аслашшĕ, ашшĕ тата мăнукĕ тарăн çырма хĕррине çитеççĕ. Ватă çынна ывăлĕ çунашкипе пĕрлех çыран хĕрринчен çырманалла тĕксе антарса ярать. Çунашка хыççăн çырма тĕпнелле пĕчĕк ача та ана пуçлать.

«Ăста каятăн? Сана эпĕ кивви вырăнне çĕнĕ çунашка илсе парăп», – тет ашшĕ. Ачи вара ашшĕне итлесе тăмасть – васкасах çырма тĕпнелле анать. Вăхăт нумай та иртмест – ачи çунашкана сĕтĕрсе хăпарать. Çĕлĕкĕ чалăшса кайнă хăйĕн, сывлăшĕ те аран тухать. «Мĕншĕн нушаланатăн? Çĕнĕ çунашка туянма сăмах патăм-çке сана», – тет ашшĕ.



«Çĕннине илсе парăн-ха эсĕ, – тет ача ашшĕне. – Эпир çунашкана лаççа кĕртсе хурăпăр та, вăл пирĕн ваттисене турттарса леçмелли пулĕ. Аннепе эсĕ ватăлсан та сире çак çунашкапа хам килсе пăрахăп».

Ача ашшĕ хăй ватăласса нихçан шутламан та-и тен? Çавăнпа ачин сăмахне илтсен тарласа каять, куççульне пытарма тăрăшать. Çырманалла васкаса чупса анать те хăйĕн ашшĕне юр ăшĕнчен туртса кăларса каллех килне илсе таврăнать. Килĕнче ывăлĕн сăмахне пĕтĕмпе арăмне каласа парать.

Çакăн хыççăнах ват çыннăн пурнăçĕ лайăхланать. Ватта килте урăх нихçан та никам та кӳрентермест. Кинĕпе ывăлĕ ват çынна пит лайăх пăхаççĕ, хăйсен айăпне каçарттарма тăрăшаççĕ.

«Ватта сума сăвакан хăй те ватă пулакан, ватта хурлăх тăвакан хăй те хурлăх куракан», – тесе ахаль каламан çав. *(Г. Волков.)*

### 2-мĕш пай

***Алла панă текста тĕплĕ, васкамасăр вуласа тухăр, 2.1–2.13 ĕçсене тăвăр.***

(1)Пĕрле вĕреннĕ çичĕ тус вăтăр çул иртнĕ хыççăн тĕл пулаççĕ. (2)Ку тĕл пулу пĕр класра ларнă çынсемшĕн чăн-чăн уяв. (3)Пĕр-пĕрне пăхса ытараймаççĕ, харпăр хăй пурнăçĕ çинчен кала-кала параççĕ.

(4)Пĕрин çав тери чаплă машина пур иккен, теприн – кермен пек хваттер, виççĕмĕшĕн арăмĕ чи юлашки модăпа тумланса çӳрет, тăваттăмĕшĕн дачинче çичĕ тинĕс леш енчи чечексемпе улма-çырла ӳсет, пиллĕкмĕшĕ пысăк премипе сумлă ят илнĕ, улттăмĕшĕн кĕрӳшĕ таçти ют çĕр-шыва командировкăна кайнă та тем те пĕр туянса килнĕ ...

(5)Аса илеççĕ, кулаççĕ, савăнаççĕ, каллех мухтанма пуçлаççĕ. (6)Пĕри пысăк сумма выляса илнĕ, теприн пиччĕшĕ хĕрĕ валли çав тери чаплă туй туса панă, виççĕмĕшĕ служба картлашкипе çӳлерех хăпарнă, тăваттăмĕшĕн кирлĕ çыхăнусем пур, пиллĕкмĕш тинĕс хĕррине кайса килнĕ, килĕнче тупри тăкăнса тăрать имĕш. (7)Улттăмĕшĕн те куçĕ телейпе çиçет, мĕншĕн тесен тупас, туянас, илес тенине тупнă, туяннă, илнĕ.

(8)Улттăмĕшĕнчен тĕлĕннĕ çынсен пит-куçĕ пĕр вăхăт çуталса илет те самантранах тĕксĕмленет. (9)Ăмсаннипе.

(10)Пурте кăмăллă, пурте телейлĕ. (11)Пурин те пурте пур. (12)Хăшĕсем хăйсене мĕн çитменнине те пĕлмеççĕ. (13)Тата мĕн çинчен каласа памалла-ши пĕрле вĕреннĕ туссене, тата мĕнпе мухтанмалла?

(14)Сасартăк курах каяççĕ: вĕсенчен пĕри килнĕренпех шăпăрт ларать. (15)Ыттисем каланине тимлĕн итлет те сайра хутра тута хĕррипе кулса илет. (16)Ачалăхăмри юлташăмсемех лараççĕ-ши кунта тенĕ евĕр тухать ун кулли. (17)Вĕсем уншăн ют-и, е вăл вĕсемшĕн ют-и?

(18)Тинех пурте ун çине пăхаççĕ, вăл мĕн каласса кĕтеççĕ. (19)Çак пурнăçран мĕн илме пултарнă вăл, мĕн пур унăн? (20)Тепри пулсан хак парса, виççе те сăнаса пăхакан темиçе куç пĕр харăс хăй çине тăраннипе çухалсах кайĕччĕ. (21)Ку вара пăшăр-ханмасть те, кулянмасть те. (22) Лăпкăн çеç çапла каласа хурать:

(23)– Анне мана паян салма яшки пĕçерсе çитерчĕ. (24)Шăп ачалăхри пеккине. (25)Шăрши те çавах. (26)Тĕсĕ те. (27)Аннем хăй те улшăнман. (28)Ватăлнă паллах, анчах малтанхи пекех илемлĕ те ырă чунлă. (29)Яшкине тăм чашăка ярса пачĕ. (30)Хĕррипе танах. (31)Мĕнле упраса хăварнă-ши çав чашăка? (32)Ĕмĕрхискер вĕт. (33)Аттеренех юлнă йывăç кашăка туртса кăларчĕ. (34)Килте тунăскере. (35)Аттен алли ылтăнччĕ.

(36)Юлташĕсем шыв сыпнă пек шăпăртланнине асăрхасан хайхискер сăмахне малалла тăсать:

(37)– Тĕлĕнмелле анне манăн... (38)Халĕ те мана ача вырăнне хурса пăхать. (39)Тавах ăна: эрне тутă çӳрĕп. (40)Ачалăхăмри яшкана çинипех тăранса лартăм. (41)Чуна канлĕх, ӳт-пĕвĕме вăй кĕнĕн туйăнчĕ.

(42)Калаçма чарăнса кăкăр туллин сывласа илчĕ те çапла хушса хучĕ:

(43)– Манăн анне халĕ те сывă. (44)Ку – мĕн тери телей!..

(45)Çакна илтсен юлташĕсем маларах хăйсем мĕнпе мухтанни ниме те пĕлтерменнине туйса илчĕç те калавçă çине ăмсанса пăхрĕç.

(46)Çапла, тĕнчере анне пĕçернĕ яшка чи хакли те чи тутли иккен, уйрăмах атте тунă кашăкпа çисен. *(Г. Волков.)*



**2.1.** Итленĕ текстпа вуланă текста мĕнле шухăш пĕрлештерет?
1) Ырă çын умĕнче эпир парăмра.
2) Атте-анне – чи хакли.
3) Чыса çамрăкран упра.
4) Этем ăсĕпе ырă.

**2.2.** Хăвăр вуланă текстра автор шухăшне хăш предложени уçса парать?
1) 2 2) 17 3) 37 4) 46

**2.3.** Текста мĕнле стильпе çырнă?
1) калаçу стилĕ
2) наука стилĕ
3) публицистика стилĕ
4) илемлĕ литература стилĕ

**2.4.** 5–9-мĕш предложенисенчен хăшĕнче антоним пулакан глаголсем пур?
1) 5 2) 6 3) 7 4) 8

**2.5.** 2-мĕш предложенире сасă шучĕ сас палли шутĕнчен ытларах сăмах хăшĕ?
1) пĕр 2) класра 3) уяв 4) çынсемшĕн

**2.6.** 36-мĕш предложенире мĕнле илемлĕх мелĕ пур?
1) танлаштару 2) метафора 3) сăпатлантару 4) эпитет

**2.7.** 16-мĕш предложенири иккĕмĕшле сăмах (*ачалăхăмри)* мĕнле пулнă?
1) *ача* япала ячĕ çумне *-лăхăмри* аффикс хушăннипе
2) *а* евĕрлев сăмахĕ çумне *-чалăх* аффикс хушăннипе
3) *ача* япала ячĕ çумне *-лăх* аффикс хушăннипе
4) *ачал* глагол çумне *-ăхăмри* аффикс хушăннипе

**2.8.** 4-мĕш предложенире *улма-çырла* сăмаха мĕншĕн де-фиспа çырнă?
1) мăшăр сăмах пулнă пирки

2) хутлă сăмах пулнă пирки
3) икĕ хут калакан сăмах пулнă пирки
4) *çырла* татăка яланах дефиспа çырнă пирки

**2.9.** 4-мĕш предложенири *пек* сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулать?
1) паллă ячĕ 2) япала ячĕ 3) глагол 4) хыç сăмах

**2.10.** *Виççĕмĕшĕ служба картлашкипе çӳлерех хăпарнă* предложенире (6 №) шухăш тĕшши хăш сăмахсем çине ӳкет?
1) виççĕмĕшĕ 2) служба картлашкипе 3) çӳлерех 4) хăпарнă

**2.11.** *Анне мана паян салма яшки пĕçерсе çитерчĕ* предложенире (23 №) подлежащи пулакан сăмах хăшĕ?
1) анне 2) мана 3) салма 4) яшки

**2.12.** 14-мĕш предложени тытăмĕ енчен хăш ушкăна кĕрет?
1) сыпăнуллă хутлă предложени
2) çыхăну паллисĕр хутлă предложени
3) пайĕсене деепричасти аффиксĕпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложени
4) пайĕсене вырăнĕ-йĕркипе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложени

**2.13.** 5-мĕш предложенире запятой лартнин сăлтавне ăнлантарăр.
1) пĕр йышши членсем союзсăр çыхăннă пирки
2) кӳртĕм сăмах сказуемăй умĕн унпа юнашар тăман пирки
3) чĕнӳллĕ предложени пулнă пирки
4) çыхăну паллисĕр хутлă предложени пайĕсем умлăн-хыçлăн пулса иртекен ĕçсене кăтартнă пирки

**3-мĕш пай**

***Итленĕ тата вуланă текстсемпе усă курса 14.1, 14.2 е 14.3 ĕçсенчен пĕрне тăвăр. Хайлав çырас умĕн суйласа илнĕ ĕçĕн номерне палăртăр: 14.1, 14.2 е 14.3.***

**14.1. «Аçу-аннӳне хисепле – хăвнах ырă пулĕ»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине усă парăр.



Хăвăр шухăшăра икĕ аргументпа ĕнентерĕр: пĕр аргументне итленĕ текстран, теприне вуланă текстран илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**14.2.** Вуланă текстра палăртнă **«Атте-анне сывă пулни – телей!..»** шухăша усса парса калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине усса парăр.

Хăвăр шухăшăра вуланă текстри икĕ аргументпа ĕнентерĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**14.3.** ***Тăванлăх*** сăмаха эсир мĕнле ăнланатăр? Хăвăр панă определение усса парăр. **«Мĕн вăл тăванлăх?»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр.

Тезис вырăнне хăвăр панă определенипе усă курăр. Тезиса аргументлама икĕ аргумент тĕслĕхпе усă курăр: пĕр аргументне вуланă текстран, теприне хăвăр пурнăçăр опытĕнчен илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

## *3-мĕш вариант*

**1-мĕш пай**

***Текста тимлĕ итлĕр те ăна çывăх изложени çырăр.***

Паян эпĕ, ĕнерхи салтак, нумайранпа пулман тăван яла таврăнатăп…

Килтисенчен никамах та курăнмарĕ-ха – пӳрте пĕчченех кĕтĕм. Кĕрсе тăтăм çеç – кĕтмен çĕртен ман куç тĕлне мачча каштинчен çакăнса тăракан сăпка курăнса кайрĕ. Тăруках иртме хăяймасăр эпĕ алăк умĕнчех чарăнса тăтăм. Сăпка! Эпир пĕчĕк чухнехи сăпка-çке ку. Вăл çак самантра маншăн тахçан-тахçан

иртсе кайнă, манми ачалăха аса илтерекен темле асамлă, çав вăхăтрах калама çук хаклă япала пек туйăнса кайрĕ. Çапла пĕр самант пек хытса тăнă хыççăн чĕрне вĕççĕн пусса эпĕ çывăхарах пырса тăтăм. Кипке ăшĕнче пуканерен кăшт пысăкрах, шурă калпак тăхăнтартнă чăмăркка выртать. Тин кăна шăтса тухнă пурнăç чечекĕ… Пурин çинчен те манса эпĕ пĕрре сăпкара çывăракан ача çине, тепре сăпкине сăнатăп. Мĕнле майпа сыхланса юлма пултарнă-ши çак сăпка? Ĕлĕкхи çынсем ăсталанă япаласем майĕпен сахалланса пыраççĕ. Эх, асăрханса тыткаласчĕ хамăрăн асаттесем туса хăварнă савăт-сапана, сĕтел-пукана. Хупран е хăваран хитрен авса тунă пĕчĕк ача сăпкисене. Çав сăпкаран тухнă та ĕнтĕ атте-аннен Çĕр-шыва тивĕçлĕ ывăлĕ-хĕрĕ. Çав сăпкарах çитĕнсе çитнĕ-çке-ха эпир те. Çитĕнсе çитсен çунат хушса Тăван çĕр-шыва сыхлама тухса кайнă. Ан тив, кивĕ пултăр, апла пулин те пӳлĕме илем кĕртет, ăшă çутă парса тăрать.

Çенĕкре анне ура сасси илтĕнсен ăна хирĕç чупса тухрăм.

– Ывăлăм! Пĕчĕкскерĕм! – урăх нимех те чĕнеймерĕ вăл мана курсан аран чĕтренсе тухакан сассипе.

…Кăкăр çумне ăшшăн çупăрласа аннене кушăрхаса хытнă аллинчен, пĕркеленсе пĕтнĕ питĕнчен чуп тăватăп. Çӳç кăвакарсан та аннесемшĕн эпир яланах «пĕчĕк» пулĕ çав.

Пире пурсăмăра та пурнăç панă анне! Çак сăпка умĕнче сана пуç таятăп. Пирĕн умра нумай юрланă, хăш чухне, чирлесен, çĕрĕ-çĕрĕпе те куç хупман аннеçĕм. Çĕр, пин çул пурăнасчĕ санăн! Темĕн чухлĕ тав тусан та, темĕн чухлĕ каçару ыйтсан та – сан умра эпир ĕмĕр-ĕмĕрех парăмра.

Ан тив, сиктĕр сар хăва сăпки, сăпка юрри юрлатăрччĕ анне!

### 2-мĕш пай

***Алла панă текста тĕплĕ, васкамасăр вуласа тухăр, 2.1–2.13 ĕçсене тăвăр.***

(1)Юлашки вăхăтра час-часах аннене тĕлĕкре куракан пултăм: ун çинчен ытларах шухăшлатăп пулас. (2)Çук, ăна хальччен те манман-ха: яла тăтăшах çӳретĕп, пулăшсах тăратăп, канăва та çемьепе тăван килтех ирттеретпĕр. (3)Аннене хам патăмра пурăнтарас тетĕп. (4)Шел, килĕшмест. (5)Хăйĕн сывлăхĕ вара хавшанăçемĕн хавшать. (6)Миçе хутчен çăмăл машинăпа лартса килмерĕм-ши ăна – вăл пур хулара ик-виç кунран ытла тӳсеймест, кичемленме, тунсăхлама тытăнать.

(7)Хальхинче те чиперех каласса татăлнăччĕ: анне пирĕн патра çуркуннеччченех юлма килĕшрĕ. (8)«Мăнукпа иксĕмĕр аптăрасах каймăпăр-ха», – лăплантарчĕ хăй.

(9)Вăхăтне анне, чăнах та, ытларах виççĕри Çерушпа ирттеретчĕ, унпа выляса ача пек савăнатчĕ. (10)Каçсерен вара, ĕçрен таврăнсан, унпа хам ытларах кĕрмешрĕм.

(11)Пĕррехинче анне эп Çерушпа вылянине сăнаса ларчĕ-ларчĕ те: «Çапла çав, харпăр хăй ачинчен хакли çук. Эпĕ те сире çавăн пекех юратса çитĕнтертĕм…» – терĕ. (12)Сăнĕ темшĕн пăшăрханнă пек туйăнчĕ. (13)Мана ӳпкелерĕ-ши? (14)Ним калама та пĕлеймерĕм.

(15)Çывăрма выртсан аннен сăмахĕсем хăлхара нумаййчен янăрарĕç. (16)Тĕрĕсех, маншăн халĕ ывăлтан хакли çук. (17)Уншăн эпĕ тем тума та хатĕр, пурнăçа та шеллемĕп. (18)Пире те анне çаплах юратнă ĕнтĕ. (19)Юратса çитĕнтернĕ. (20)Шел, тин, хамăн ача çуралсан çеç çакна туйса илтĕм. (21)Кусăм халĕ кăна уçăлса çитрĕ пулас.

(22)Çапла вара, атте-анне юратăвĕ – иксĕлми. *(С. Павлов.)*

**2.1.** Итленĕ текстпа вуланă текста мĕнле шухăш пĕрлештерет?
1) Этем хитре ĕçĕпе.
2) Атте-анне – чи хакли.
3) Çурт лартма йывăр мар, никĕсне хывма йывăр.
4) Халăх калани яланах тĕрĕс.

**2.2.** Хăвăр вуланă текстра автор шухăшне хăш предложени уçса парать?
1) 2 2) 17 3) 18 4) 22

**2.3.** Текста мĕнле стильпе çырнă?
1) калаçу стилĕ
2) наука стилĕ
3) публицистика стилĕ
4) илемлĕ литература стилĕ

**2.4.** 1-6-мĕш предложенисенчен хăшĕнче синоним пулакан глаголсем пур?

1) 5 2) 6 3) 1 4) 2

**2.5.** 1-мĕш предложенире сасă шучĕ сас палли шутĕнчен ытларах сăмах хăшĕ?

1) çинчен 2) ытларах 3) юлашки 4) тунсăхлатăп

**2.6.** 9-мĕш предложенире мĕнле илемлĕх мелĕ пур?

1) танлаштару 2) метафора 3) сăпатлантару 4) эпитет

**2.7.** 1-мĕш предложенири иккĕмĕшле сăмах (*шухăшлатăп)* мĕнле пулнă?

1) *шухă* паллă ячĕ çумне *-латăп* аффикс хушăннипе
2) *шу* евĕрлев сăмахĕ çумне *-хăшлатăп* аффикс хушăннипе
3) *шухăш* япала ячĕ çумне *-ла* аффикс хушăннипе
4) *шухăшла* глагол çумне *-атăп* аффикс хушăннипе

2.8. 22-мĕш предложенире *атте-анне* сăмаха мĕншĕн дефиспа çырнă?

1) мăшăр сăмах пулнă пирки
2) хутлă сăмах пулнă пирки
3) икĕ хут калакан сăмах пулнă пирки
4) *анне* татăка яланах дефиспа çырнă пирки

**2.9.** 9-мĕш предложенири *пек* сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулать?

1) паллă ячĕ 2) япала ячĕ 3) глагол 4) хыç сăмах

**2.10.** *Çывăрма выртсан аннен сăмахĕсем хăлхара нумайччен янăрарĕç* предложенире (15 №) шухăш тĕшши хăш сăмахсем çине ӳкет?

1) аннен сăмахĕсем 2) хăлхара 3) нумайччен 4) янăрарĕç

**2.11.** *Куçăм халĕ кăна уçăлса çитрĕ пулас* предложенире (21 №) подлежащи пулакан сăмах хăшĕ?

1) куçăм 2) халĕ 3) уçăлса 4) çитрĕ



**2.12.** 6-мĕш предложени тытăмĕ енчен хăш ушкăна кĕрет?

1) сыпăнуллă хутлă предложени
2) çыхăну паллисĕр хутлă предложени
3) пайĕсене деепричасти аффиксĕпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложени
4) пайĕсене вырăнĕ-йĕркипе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложени

**2.13.** 16-мĕш предложенире запятой лартнин сăлтавне ăнлантарăр.

1) пĕр йышши членсем союзсăр çыхăннă пирки
2) кӳртĕм сăмах сказуемăй умĕн унпа юнашар тăман пирки
3) чĕнӳ пур пирки
4) çыхăну паллисĕр хутлă предложени пайĕсем умлăнхыçлăн пулса иртекен ĕçсене кăтартнă пирки

**3-мĕш пай**

***Итленĕ тата вуланă текстсемпе усă курса 14.1, 14.2 е 14.3 ĕçсенчен пĕрне тăвăр. Хайлав çырас умĕн суйласа илнĕ ĕçĕн номерне палăртăр: 14.1, 14.2 е 14.3.***

**14.1. «Атте-анненрен хакли никам та çук тĕнчере»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.

Хăвăр шухăшăра икĕ аргументпа ĕнентерĕр: пĕр аргументне итленĕ текстран, теприне вуланă текстран илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**14.2.** Вуланă текстра палăртнă **«Атте-анне юратăвĕ – иксĕлми»** шухăша уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.

Хăвăр шухăшăра вуланă текстри икĕ аргументпа ĕнентерĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви,

тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**14.3.** ***Юрату*** сăмаха эсир мĕнле ăнланатăр? Хăвăр панă определение уçса парăр. **«Мĕн вăл юрату?»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр.

Тезис вырăнне хăвăр панă определенипе усă курăр. Тезиса аргументлама икĕ аргумент тĕслĕхпе усă курăр: пĕр аргументне вуланă текстран, теприне хăвăр пурнăçăр опытĕнчен илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

## *4-мĕш вариант*

### 1-мĕш пай

***Текста тимлĕ итлĕр те ăна çывăх изложени çырăр.***

Ватăлса çитнĕ ашшĕ ачисене ăс парасшăн, анчах лешсем итлесшĕн мар. «Хамăрах пĕлетпĕр, эсĕ ват супнă ĕнтĕ», – тесе калаççĕ те туха-туха каяççĕ. «Эх, ачамсем, итлеместĕр пурнăç курнă çынна. Эп вилсен мăрьерен тĕтĕм те кăлараймăр та-ха…» – тесе калать те ашшĕ вилсе каять. Кусем ашшĕн юлашки сăмахĕсем пулчĕç.

Ачисем ватă ашшĕ вилсенех кăмакана тислĕклĕ улăм тăнккаса тултарчĕç тет. «Атте тĕтĕм кăлараймăр тетчĕ, мĕнле çăра тĕтĕм тухать», – тесе савăнса пăхса тăраççĕ тет кусем тулта. Алă çупса ташша яманни кăна.

Иртсе пыракан кӳршĕ арăмĕ каларĕ тет: «Эсир, айвансем, аçăр шахвăртса каланине те ăнланайман вĕт-ха. Сирĕн пек пурăнсан пурнăç малалла кайманнине, çурт хупăнма пултарнине пĕлтерет вĕт аçăр калани», – терĕ тет.

Ашшĕ ачисене лайăх пĕлнĕ-мĕн. Услапсем çав каçах шăнса ĕнтĕркенĕ. Хĕл каçма кӳрше тухма тиврĕ тет вара.

Ашшĕ калани тĕрĕсе килнĕ: хĕлĕпех кусен мăрйинчен тĕтĕм тухнине куракан пулман. Ачисем ашшĕ çурчĕн вучахне упраймарĕç – сӳнтерчĕç. *(Г. Волков.)*



### 2-мĕш пай

***Алла панă текста тĕплĕ, васкамасăр вуласа тухăр, 2.1–2.13 ĕçсене тăвăр.***

(1)Кил хапхине питĕрмен. (2)Вера аллинчи чăматанне юр çине лартса картиш йĕри-тавра пăхса çаврăнчĕ. (3)Тăмпа шăлса сапланă кивĕ пӳрчĕ хĕллехи çил-тăманран хăраса ӳпĕннĕ пек мĕскĕннĕн лăпчăнса ларать. (4)Ахаль те пĕчĕк пӳрт ăш-чикне аран-аран çутатакан чӳречисене юр шăлса лартнипе çутă таврашĕ курăнмасть. (5)Вера пӳрт алăкĕ патне пычĕ. (6)Алăка çурри таран юр шăлса лартнă та, çын тухса çӳренĕ йĕр таврашĕ çук. (7)Вера çӳçенсе илчĕ. (8)Ӳт-пĕвĕ тăрăх сивĕ чупа-чупа хăпарчĕ.

(9)Вера асăрхануллăн алăк çумне сĕртĕнчĕ, хуллен шаккарĕ. (10)Итлесе тăчĕ, каллех шаккарĕ, анчах сасă таврашĕ илтĕнмерĕ. (11)Хĕрĕн ал-ура вăйĕ кайрĕ, çамки çине сивĕ тар тапса тухрĕ.

(12)Маруç инке каллех шухăшланипе çеç арпашатăп пулĕ тесе алăкне часах уçмарĕ.

(13)– Аннем, аннем, эп килтĕм, уç-ха… Аннем, сывă-и эсĕ? – тенĕ сасса илтсен Маруç инке вырăн çинчен хыпаланса анчĕ те чĕтрекен аллипе питĕркĕçе васкаса шырарĕ.

(15)Вера çийĕнчи сивĕ тумтирне хăвăрт хывса амăшне кăкăрĕ çумне пăчăртарĕ, пӳрт ăш-чикне пăхса çаврăнчĕ. (17)Хĕпĕртенĕ амăшĕ кăкăрĕ çумне çулçă пек лăпчăнсан Вера тăван çынтан вăрттăн куçне шăла-шăла типĕтрĕ. (18)Мĕн тери ырă иккен ача-пăча çумра пулсан!

(19)Хĕр краççын çутрĕ. (20)Кăмакине хутса ячĕ, чей вĕретрĕ. (21)Кайран çĕрĕпе çывăраймасăр асапланчĕ. (22)Тул çутăлсанах телефонпа пиччĕшне шăнкăравларĕ.

(23)Йăмăкĕпе калаçнă хыççăн Григорий Антоновичăн та чĕри çăпан пек сурса ыратма тытăнчĕ. (24)Вăл ĕçрен пушансанах такси тытса тăван килне тухса кайрĕ.

(25)Çапла, анне умĕнче эпир ĕмĕр-ĕмĕрĕпех парăмра пулнине манма юрамасть. *(Н. Петровская.)*

**2.1.** Итленĕ текстпа вуланă текста мĕнле шухăш пĕрлештерет?
1) Çынпа çын пурăнать.
2) Ĕмĕр сакки сарлака.
3) Анне умĕнче эпир пурте парăмра.

4) Чăн сăмахăн суйи çук.

**2.2.** Хăвăр вуланă текстра автор шухăшне хăш предложени уçса парать?

1) 8 2) 11 3) 15 4) 25

**2.3.** Текста мĕнле стильпе çырнă?

1) калаçу стилĕ
2) наука стилĕ
3) публицистика стилĕ
4) илемлĕ литература стилĕ

**2.4.** 11–18-мĕш предложенисенчен хăшĕнче синоним пулакан глаголсем пур?

1) 11 2) 12 3) 13 4) 18

**2.5.** 6-мĕш предложенире сасă шучĕ сас палли шутĕнчен ытларах сăмах хăшĕ?

1) çурри 2) юр 3) çӳренĕ 4) йĕр

**2.6.** 17-мĕш предложенире мĕнле илемлĕх мелĕ пур?

1) танлаштару 2) метафора 3) сăпатлантару 4) эпитет

**2.7.** 12-мĕш предложенири иккĕмĕшле сăмах (*шухăшланипе)* мĕнле пулнă?

1) *шухăш* япала ячĕ çумне *-ла* аффикс хушăннипе
2) *шух* евĕрлев сăмахĕ çумне *-ăшла* аффикс хушăннипе
3) *шухă* паллă ячĕ çумне *-шла* аффикс хушăннипе
4) *шухăшла* глагол çумне *-нипе* аффикс хушăннипе

**2.8.** 11-мĕш предложенире *ал-ура* сăмаха мĕншĕн дефиспа çырнă?

1) мăшăр сăмах пулнă пирки
2) хутлă сăмах пулнă пирки
3) икĕ хут калакан сăмах пулнă пирки
4) *ура* татăка яланах дефиспа çырнă пирки



**2.9.** 3-мĕш предложенири *пек* сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулать?

1) паллă ячĕ 2) япала ячĕ 3) глагол 4) хыç сăмах

**2.10.** *Кайран çĕрĕпе çывăраймасăр асапланчĕ* (21 №) шухăш тĕшши хăш сăмахсем çине ӳкет?

1) кайран 2) çĕрĕпе 3) çывăраймасăр 4) асапланчĕ

**2.11.** *Вера çийĕнчи сивĕ тумтирне хăвăрт хывса амăшне кăкăрĕ çумне пăчăртарĕ, пӳрт ăш-чикне пăхса çаврăнчĕ* предложенире (15 №) подлежащи пулакан сăмах хăшĕ?

1) Вера 2) тумтитрне 3) кăкăрĕ 4) пӳрт

**2.12.** 11-мĕш предложени тытăмĕ енчен хăш ушкăна кĕрет?

1) сыпăнуллă хутлă предложени
2) çыхăну паллисĕр хутлă предложени
3) пайĕсене деепричасти аффиксĕпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложени
4) пайĕсене вырăнĕ-йĕркипе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложени

**2.13.** 15-мĕш предложенире запятой лартнин сăлтавне ăнлантарăр.

1) пĕр йышши членсем союзсăр çыхăннă пирки
2) кӳртĕм сăмах сказуемăй умĕн унпа юнашар тăман пирки
3) чĕнӳ пур пирки
4) çыхăну паллисĕр хутлă предложени пайĕсем умлăнхыçлăн пулса иртекен ĕçсене кăтартнă пирки

**3-мĕш пай**

***Итленĕ тата вуланă текстсемпе усă курса 14.1, 14.2 е 14.3 ĕçсенчен пĕрне тăвăр. Хайлав çырас умĕн суйласа илнĕ ĕçĕн номерне палăртăр: 14.1, 14.2 е 14.3.***

**14.1. «Атте-анне яланах хисепре пултăр»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.

Хăвăр шухăшăра икĕ аргументпа ĕнентерĕр: пĕр аргументне итленĕ текстран, теприне вуланă текстран илĕр. Çакна тума

ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев сыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**14.2.** Вуланă текстра палăртнă **«Анне умĕнчи парăма манас марччĕ»** шухăша уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.

Хăвăр шухăшăра вуланă текстри икĕ аргументпа ĕнентерĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев сыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**14.3.** ***Тивĕç*** **сăмаха эсир мĕнле ăнланатăр? Хăвăр панă определение уçса парăр. «Мĕн вăл тивĕç?» темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр.** Тезис вырăнне хăвăр панă определенипе усă курăр. Тезиса аргументлама икĕ аргумент тĕслĕхпе усă курăр: пĕр аргументне вуланă текстран, теприне хăвăр пурнăçăр опытĕнчен илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе сахалтан та икĕ хут усă курăр.

### *5-мĕш вариант*

#### 1-мĕш пай

***Текста тимлĕ итлĕр те ăна çывăх изложени çырăр.***

Ирхине алăка шаккани илтĕнчĕ. Пӳлĕме Константин Иванов кĕрсе тăчĕ те Чĕмпĕр чăваш шкулĕн директорне темиçе тетрадь тăсса пачĕ.

Иванов тетрачĕсене пăхма Иван Яковлевич Яковлевăн вăхăт шкулпа çыхăннă ĕçсем пĕтсен тин тупăнчĕ. Чи малтан Иван Яковлевич çиеле хунă тетраде тытрĕ.

– «Нарспи», – вуларĕ Яковлев тетрадь хуплашки çинче çырнине. – Поэма. Кур-ха эс ăна, шăпăрлана: поэма та çырнă. Хăш вăхăтра ĕлкĕрет-ха Константин?! Ĕçчен, ĕçчен. Ĕçчен те, сăпайлă та, талантлă та.



Яковлев çамрăк поэт мĕн çырнине малалла вулама пуçларĕ. Иванов çырăвĕ шăрçа пек. Поэма сăвви шыв юххи пек юхать.

Константин Иванов талантлă çамрăк иккенне Иван Яковлевич питĕ лайăх пĕлет, çапах та вун çиччĕри яш çапла хитре çырасса шутламанччĕ. Малалла вуланăçемĕн поэма Яковлевăн пĕтĕм чун-чĕрине ярса илчĕ. Шкул директорĕ каç пулнине те, апат çиме вăхăт çитнине те, хăй тĕрлĕ ĕç туса ыйăннине те манса кайрĕ. Арăмĕ кĕрсе тăрсан тин пуçне çĕклерĕ.

– Катенька, Катя! – терĕ Иван Яковлевич арăмне. – Пĕлетĕн-и, мĕскер вуларăм эпĕ? Тĕлĕнмелле поэма! «Нарспи» ятлă. Гени ăс-тăнĕпе çырнă. Авторĕ – пирĕн Константин Иванов! Пирĕн пек çынсенчен пин хут ытла тарăнрах шухăшлать! Çакнашкал хăват вун улттă тултарса вун çичче çеç кайнă ачара ăçтан тупăннă-ха? Мĕнле талант?! Нарспи вара – ытарайми чăваш пики сăнарĕ!

Каллех хавхаланса, хăпартланса вулать Яковлев. Иван Яковлевичăн сасси пĕрре савăнса çĕкленсе каять, тепре поэмăра сăнланă çынсемпе ĕçсемшĕн кулянса чĕтреме тытăнать.

Акă поэмăн юлашки сăмахĕсем янăрарĕç. Иван Яковлевич куçне тулнă куççульне тутăрĕпе шăлчĕ, ним тума пĕлеймесĕр арăмĕ çумне пырса тăчĕ. Калаçрĕ те калаçрĕ, хăй çав тери ывăннине те манса кайрĕ. Чăвашла та чаплă хайлавсем çырма пулнишĕн çав тери савăнчĕ. (*Юхма Мишши.)*

#### 2-мĕш пай

***Алла панă текста тĕплĕ, васкамасăр вуласа тухăр, 2.1–2.13 ĕçсене тăвăр.***

(1)Кашни халăх сĕм авалтанпах хăйĕн туйăмĕсен, ăнлавĕсен тата идейисен кĕлеткине тăван чĕлхерен илсе пырать. (2)Вĕсене вăл хăйĕн ăс-тăнĕн вăйĕпе тата майĕпе усă курса тунă… (3)Чĕлхе вăл çав ăс-тăнăн пуянлăхĕн хуппи пулса тăрать, анчах çав хупă хăйĕн ăш-чиккипе пĕрле ӳссе ларать, унтан уйрăлмасть.

(4)Чĕлхе хăйне пултарнă халăхпа кăна вилет. (5)Çавăнпа та халăх хăйĕн тăван чĕлхине мантăр тени çав халăха вилĕм сунниiпе пĕр танах. (6)Ĕмĕрсем хушши хăй тĕллĕн аталаннă кашни халăх хăй ăс-хакăлĕн вăй-халĕпе çуратса аталантарнă туйăмăн,

ӑнлавӑн, шухӑшӑн кӗлеткине малалла ӳстерсе-сыпӑнтарса пырать. (7)Ҫавсем халӑхпа пӗрле кӑна пӗтме пултараççӗ.

(8)Чӗлхе – халӑхӑн ӑс-хакӑл пуянлӑхӗ, унӑн тулаш витӗмӗ çеç, анчах вӑл та халӑхпа пӗрле, унран уйрӑлми аталанса ӳссе пырать. (9)Ӗмӗр-ӗмӗр пӗр йышпа пурӑнакан халӑхран унӑн чӗлхине вӑйпа уйӑрса-татса илме çук. (10)Апла тӑвас пулсан вӑл халӑх чӗрине вырӑнсӑр ыраттарнисӗр, ытлашши асап кӑтартнисӗр, халӑх кӑмӑл-туйӑмне амантнисӗр пуçне урӑх нимӗн те кӳрес çук.

(11)Тӑван чӗлхе пулӑшнипе вара кивӗ ӑнлавсене çӗнетсе аталантарма та, çӗнӗ хунавсем ӳстерме те май пур, ахальлӗн ку таранччен тунӑ ӳсӗмсене аркатма, çӗмӗрме пулать. (*И.Я. Яковлев.)*

**2.1.** Итленӗ текстпа вуланӑ текста мӗнле шухӑш пӗрлештерет?
1) Этем ӗçӗпе хитре.
2) Чӑваш чӗлхипе пур çӗрте те усӑ курма пулать.
3) Виçӗ хут уйла, пӗр хут суйла.
4) Пӗр алӑпа тӗвӗ салтма та йывӑр.

**2.2.** Хӑвӑр вуланӑ текстра автор шухӑшне хӑш предложени уçса парать?
1) 1 2) 5 3) 7 4) 11

**2.3.** Текста мӗнле стильпе çырнӑ?
1) калаçу стилӗпе
2) наука стилӗпе
3) публицистика стилӗпе
4) илемлӗ литература стилӗпе

**2.4.** Хӑш предложенире антоним пулакан паллӑ ячӗсем пур?
1) 1 2) 4 3) 7 4) 11

**2.5.** 3-мӗш предложенире сасӑ шучӗ сас палли шутӗнчен ытларах сӑмах хӑшӗ?
1) чӗлхе 2) пӗрле 3) пуянлӑхӗн 4) уйрӑлмасть

**2.6.** 4-мӗш предложенире мӗнле илемлӗх мелӗ палӑрать?
1) танлаштару 2) метафора 3) сӑпатлантару 4) эпитет



2.7. 1-мӗш предложенири иккӗмӗшле сӑмах (*туйӑмӗсен)* мӗнле пулнӑ?
1) *ту* глагол çумне *-йӑм* тата *-ӗсен* аффикссем хушӑннипе
2) *туй* япала ячӗ çумне *-ӑм* тата *-ӗ* аффикссем хушӑннипе
3) *туй* глагол çумне *-ӑм* аффикс хушӑннипе
4) *туйӑм* глагол çумне *-ӗ* аффикс хушӑннипе

2.8. 8-мӗш предложенире *ӑс-хакӑл* сӑмаха мӗншӗн дефиспа çырнӑ?
1) мӑшӑр сӑмах пулнӑ пирки
2) хутлӑ сӑмах пулнӑ пирки
3) икӗ хут калакан сӑмах пулнӑ пирки
4) *хакӑл* татӑка яланах дефиспа çырнӑ пирки

**2.9.** 1-мӗш предложенири *тата* сӑмах мӗнле пуплев пайӗ пулать?
1) паллӑ ячӗ 2) союз 3) наречи 4) татӑк

**2.10.** *Вӗсене вӑл хӑйӗн ӑс-тӑнӗн вӑйӗпе тата майӗпе усӑ курса тунӑ* предложенире (2 №) шухӑш тӗшши хӑш сӑмахсем çине ӳкет?
1) вӗсене
2) вӑл
3) хӑйӗн ӑс-тӑнӗн вӑйӗпе тата майӗпе усӑ курса
4) тунӑ

**2.11.** *Чӗлхе хӑйне пултарнӑ халӑхпа кӑна вилет* предложенире (4 №) подлежащи пулакан сӑмах хӑшӗ?
1) чӗлхе 2) хӑйне 3) халӑхпа 4) вилет

**2.12.** 3-мӗш предложени тытӑмӗ енчен хӑш ушкӑна кӗрет?
1) сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени
2) çыхӑну паллисӗр хутлӑ предложени
3) пайӗсене деепричасти аффиксӗпе çыхӑнтаракан пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени
4) пайӗсене вырӑнӗ-йӗркипе çыхӑнтаракан пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени

**2.13.** 6-мӗш предложенире запятой лартнин сӑлтавне ӑнлантарӑр.

1) пӗр йышши членсем союзсӑр ҫыхӑннӑ пирки
2) кӳртӗм сӑмах сказуемӑй умӗн унпа юнашар тӑман пирки
3) чӗнӳ пур пирки
4) ҫыхӑну паллисӗр хутлӑ предложени пайӗсем умлӑнхыҫлӑн пулса иртекен ӗҫсене кӑтартнӑ пирки

**3-мӗш пай**

***Итленӗ тата вуланӑ текстсемпе усӑ курса 14.1, 14.2 е 14.3 ӗҫсенчен пӗрне тӑвӑр. Хайлав ҫырас умӗн суйласа илнӗ ӗҫӗн номерне палӑртӑр: 14.1, 14.2 е 14.3.***

**14.1. «Ялан янра, чӑваш сӑмахӗ»** темӑпа калӑпӑшӗпе пысӑках мар (70 сӑмахран кая ан пултӑр) ӑслав хайлавӗ ҫырӑр. темӑпа калӑпӑшӗпе пысӑках мар (70 сӑмахран кая ан пултӑр) ӑслав хайлавӗ ҫырӑр. Тема пирки хӑвӑр мӗн шухӑшланине уҫса парӑр.

Хӑвӑр шухӑшӑра икӗ аргументпа ӗнентерӗр: пӗр аргументне итленӗ текстран, теприне вуланӑ текстран илӗр. Ҫакна тума ӑславӑн ӗнентерӳ мелӗсемпе (кӳртӗм сӑмахсемпе, ыйтупа хурав пӗрлӗхӗпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тӗллевпе услови, хирӗҫлев ҫыхӑнӑвне палӑртакан чӗлхе мелӗсемпе) сахалтан та икӗ хут усӑ курӑр.

**14.2.** Вуланӑ текстра палӑртнӑ **«Тӑван чӗлхе пулӑшнипе вара кивӗ ӑнлавсене ҫӗнетсе аталантарма та, ҫӗнӗ хунавсем ӳстерме те май пур, ахальӗн ку таранччен тунӑ ӳсӗмсене аркатма, ҫӗмӗрме пулать»** шухӑша уҫса парса калӑпӑшӗпе пысӑках мар (70 сӑмахран кая ан пултӑр) ӑслав хайлавӗ ҫырӑр. Тема пирки хӑвӑр мӗн шухӑшланине уҫса парӑр.

Хӑвӑр шухӑшӑра вуланӑ текстри икӗ аргументпа ӗнентерӗр. Ҫакна тума ӑславӑн ӗнентерӳ мелӗсемпе (кӳртӗм сӑмахсемпе, ыйтупа хурав пӗрлӗхӗпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тӗллевпе услови, хирӗҫлев ҫыхӑнӑвне палӑртакан чӗлхе мелӗсемпе) сахалтан та икӗ хут усӑ курӑр.

**14.3.** ***Тӑван чӗлхе пуласлӑхӗ*** ӑнлава эсир мӗнле ӑнланатӑр? Хӑвӑр панӑ определение уҫса парӑр. **«Мӗн вӑл тӑван чӗлхе пуласлӑхӗ?»** темӑпа калӑпӑшӗпе пысӑках мар (70 сӑмахран кая ан пултӑр) ӑслав хайлавӗ ҫырӑр.

Тезис вырӑнне хӑвӑр панӑ определенипе усӑ курӑр. Тезиса аргументлама икӗ аргумент тӗслӗхпе усӑ курӑр: пӗр аргументне вуланӑ текстран, теприне хӑвӑр пурнӑҫӑр опытӗнчен илӗр. Ҫакна тума ӑславӑн ӗнентерӳ мелӗсемпе (кӳртӗм сӑмахсемпе, ыйтупа хурав пӗрлӗхӗпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тӗллевпе услови, хирӗҫлев ҫыхӑнӑвне палӑртакан чӗлхе мелӗсемпе) сахалтан та икӗ хут усӑ курӑр.

## *6-мӗш вариант*

**1-мӗш пай**

***Текста тимлӗ итлӗр те ӑна ҫывӑх изложени ҫырӑр.***

Кашни этемӗн телей виҫи хӑйне майлӑ. Пӗриншӗн лайӑх мӑшӑр тупни – чи пысӑк телей. Иккӗмӗшӗ сӑра курки аллине лексенех хӑйне телейлӗ тесе шутлать. Виҫҫӗмӗшӗн телейӗ тырпул хӑҫан тата мӗнле акса хӑварнипе ҫыхӑннӑ. Иван Яковлевич вара хӑй телейне халӑх телейӗнчен уйрӑм курма пултараймасть. Тӑван халӑх хӑйне паян телейлӗ тесе каласан вӑл та хӑйне паян эпӗ телейлӗ тесе калӗ. Шел те, паянлӑха халӑх апла калаймасть-ха. Эппин, Иван Яковлевич та хӑйне телейлӗ тесе шутлаймасть. Унӑн халӑха телейлӗ тӑвассишӗн ытларах та ытларах ӗҫлес пулать.

Арҫын ачасен класӗнче вӗренекенсем питӗ килӗшеҫҫӗ Иван Яковлевича. Чӑнах та, маттур ачасем унта. Вӗсемшӗн савӑнмалӑх пур. Ҫакӑ – унӑн телейӗн пӗр пайӗ. Вӗренекенсем – тӗрлӗ ҫӗртен. Акӑ Константин Иванов… Пушкӑрт чӑвашӗ, маларах икӗ ҫул арҫын ачасен шкул ҫумӗнчи пуҫламӑш училищинче вӗренчӗ. Питӗ маттурскер: сӑрлама та, ҫырма та пултарать, юрлама та ӑста. Тӑрӑшсан чӑн-чӑн художника та тухӗ…

Николай Васильев – Шупашкар енчисем, Иккасси ялӗнчен. Тӗлӗнмелле ҫивӗч чӗлхеллӗ.

Тепӗр ача килӗшрӗ Яковлева. Ку вӑл – Етӗрне енчен Исментер ялӗнчен килнӗ Данил Семенов.

Сӗве тӑрӑхӗнчен килнӗ Тӑхӑрьял ачи Тимкка Семенов (ӑна ялта Тайӑр Тимкки теҫҫӗ иккен) питӗ маттур пулас, тем те пӗлесшӗн ҫунать…

«Кусем халăхшăн тăрăшакансем пулĕç», – шухăшларĕ Яковлев ачасем патĕнчен черетлĕ урокран тухнă май. (*Юхма Мишши.)*

**Çырса памалли сăмахсем**: *Николай Васильев, Иккасси, Етĕрне, Исментер, Тимкка Семенов.*

**2-мĕш пай**

***Алла панă текста тĕплĕ, васкамасăр вуласа тухăр, 2.1–2.13 ĕçсене тăвăр.***

(1)Тăван чĕлхемĕрçĕм…(2)Ку сăмахсене çын хăйĕн пĕтĕм юратăвне, чĕрери туйăмне пуçтарса калать. (3)Шухăшлатăн та тĕлĕнетĕн: мĕнле тарăн пĕлтерĕшлĕ çак икĕ сăмах!

(4)Тăван чĕлхе – чун енчĕкĕнче ылтăн-кĕмĕл пек шăнкăртатакан пуянлăх. (5)Унта – тăван çĕр-шывăн сенкер пĕлĕчĕ, уçă сывлăшĕ, аслати-çиçĕмĕ, хирĕ-уйĕ, улăхĕ-çаранĕ, тăвĕ-сăрчĕ, Атăлĕ-Пăли, унăн ытарайми юманлăхĕпе шĕшкĕлĕхĕ… (6)Пурнăçра ăру хыççăн ăру иртет: пĕр ăру вилет, тепри çуралать, вĕсен пурин те ăс-пуç пуянлăхĕ чĕлхере упранса юлать. (7)Халăх сăвви-юрринче, юмах-халапĕнче, халăх сăмахлăхĕнче этемшĕн тăван çĕр-шыв чи хакли пулни уйрăммăнах уççăн палăрса тăрать.

(8)Халăх мĕн авалтанпах çамрăксене хăйсен тăван чĕлхине юратма, хисплеме вĕрентнĕ. (9)Çавăнпа та-и, тен, пирĕн халăхăн пултарулăхĕнче тăван ашшĕ-амăш чĕлхине манакансенчен тăрăхласа кулаççĕ, ун пек çынсем çине халăх ашшĕ-амăшне маннă çынсем çине пăхнă пекех йĕрĕнсе пăхать.

(10)Аслашшĕсен чĕлхине пĕлмен чăваш мĕскĕне тухнă, маннине – шелленĕ, телейсĕр тесе шутланă, пĕлес темене – айван тенĕ, юратманнине – ылханса ятланă.

(11)Тăван чĕлхе – халăхăн аваллăхĕ, тăван чĕлхе халăхăн сумлă та телейлĕ малашлăхĕ. (*Г.Н. Волков.)*

**2.1.** Итленĕ текстпа вуланă текста мĕнле шухăш пĕрлештерет?
1) Атте-анне ăшши çеç ачана телей кÿрет.
2) Чыса çамрăкран упра.
3) Тăван халăх, тăван чĕлхе малашлăхĕ пирĕнтен килет.
4) Ĕç – пурнăç илемĕ.



**2.2.** Хăвăр вуланă текстра автор шухăшне хăш предложени уçса парать?
1) 1 2) 6 3) 8 4) 11

**2.3.** Текста мĕнле стильпе çырнă?
1) калаçу стилĕпе
2) наука стилĕпе
3) публицистика стилĕпе
4) илемлĕ литература стилĕпе

**2.4.** Хăш предложенире антоним пулакан глаголсем пур?
1) 1 2) 4 3) 6 4) 11

**2.5.** 2-мĕш предложенире сасă шучĕ сас палли шутĕнчен ытларах сăмах хăшĕ?
1) сăмахсене 2) пĕтĕм 3) юратăвне 4) калать

**2.6.** 4-мĕш предложенире мĕнле илемлĕх мелĕ палăрать?
1) танлаштару 2) перифраз 3) сăпатлантару 4) гипербола

**2.7.** 5-мĕш предложенири иккĕмĕшле сăмах (*юманлăхĕпе)* мĕнле пулнă?
1) *ю* евĕрлев сăмахĕ çумне *-манлăхĕпе* аффикс хушăннипе
2) *юм* япала ячĕ çумне *-ан* тата *-лăх* аффикссем хушăннипе
3) *юман* япала ячĕ çумне *-лăх* аффикс хушăннипе
4) *юманлăх* япала ячĕ çумне *-пе* аффикс хушăннипе

**2.8.** 5-мĕш предложенире *улăхĕ-çаранĕ* сăмаха мĕншĕн дефиспа çырнă?
1) мăшăр сăмах пулнă пирки
2) хутлă сăмах пулнă пирки
3) икĕ хут калакан сăмах пулнă пирки
4) *çаран* татăка яланах дефиспа çырнă пирки

**2.9.** 11-мĕш предложенири *та* сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулать?
1) паллă ячĕ 2) местоимени 3) союз 4) глагол

**2.10.** *Ку сăмахсене çын хăйĕн пĕтĕм юратăвне, чĕрери туйăмне пуçтарса калать* предложенире (2 №) шухăш тĕшши хăш сăмахсем çине ӳкет?

1) ку сăмахсене
2) çын
3) хăйĕн пĕтĕм юратăвне, чĕрери туйăмне пуçтарса
4) калать

**2.11.** *Халăх мĕн авалтанпах çамрăксене хăйсен тăван чĕлхине юратма, хисплеме верентнĕ* предложенире (8 №) подлежащи пулакан сăмах хăшĕ?

1) халăх 2) çамрăксене 3) хисеплеме 4) вĕрентнĕ

**2.12.** 9-мĕш предложени тытăмĕ енчен хăш ушкăна кĕрет?

1) сыпăнуллă хутлă предложени
2) çыхăну паллисĕр хутлă предложени
3) пайĕсене деепричасти аффиксĕпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложени
4) кăткăс тытăмлă хутлă предложени

**2.13.** 5-мĕш предложенире запятойсем лартнин сăлтавне ăнлантарăр.

1) пĕр йышши членсем союзсăр çыхăннă пирки
2) кӳртĕм сăмах сказуемăй умĕн унпа юнашар тăман пирки
3) чĕнӳ пур пирки
4) çыхăну паллисĕр хутлă предложени пайĕсем умлăнхыçлăн пулса иртекен ĕçсене кăтартнă пирки

### 3-мĕш пай

***Итленĕ тата вуланă текстсемпе усă курса 14.1, 14.2 е 14.3 ĕçсенчен пĕрне тăвăр. Хайлав çырас умĕн суйласа илнĕ ĕçĕн номерне палăртăр: 14.1, 14.2 е 14.3.***

**14.1. «Тăван халăх телейĕшĕн тăрăшакансем»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.



Хăвăр шухăшăра икĕ аргументпа ĕнентерĕр: пĕр аргументне итленĕ текстран, теприне вуланă текстран илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**14.2.** Вуланă текстра палăртнă **«Тăван чĕлхе – халăхăн аваллăхĕ, тăван чĕлхе халăхăн сумлă та телейлĕ малашлăхĕ»** шухăша уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.

Хăвăр шухăшăра вуланă текстри икĕ аргументпа ĕнентерĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**14.3.** ***Тăван чĕлхемĕр*** ăнлава эсир мĕнле ăнланатăр? Хăвăр панă определение уçса парăр. **«Мĕн вăл тăван чĕлхемĕр?»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр.

Тезис вырăнне хăвăр панă определенипе усă курăр. Тезиса аргументлама икĕ аргумент тĕслĕхпе усă курăр: пĕр аргументне вуланă текстран, теприне хăвăр пурнăçăр опытĕнчен илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

## *7-мĕш вариант*

### 1-мĕш пай

***Текста тимлĕ итлĕр те ăна çывăх изложени çырăр.***

Пӳлĕме тултан кун çути çапрĕ. Урампа утă лавĕсем иртеççĕ. Хулара выльăх усракан нумай, кашни килте тенĕ пекех ĕне пур. Шăнса кӳтнĕ чăвашсем курăнса кайрĕç, пасара васкаççĕ. Пĕри çурăмĕ хыçне пысăк çыхă – çăпата çакнă, тепри пĕчĕк çунашки çине сип-симĕс хурăн милĕкĕсем хурса çыхнă. Ун хыççăнах

карчăк туяпа тĕкĕлтетсе пырать. Шурă пиртен çĕленĕ хутаççинче е хура çăкăр татăкĕ, е хытă чăкăт çаврашки пулĕ ĕнтĕ…

Чăвашсене кусăран çухаличченех ăсатрĕ Иван Яковлевич. Унтан васкаса çăкăр татăкĕпе пĕр стакан чей ĕçрĕ те университета тухса утрĕ.

Паçăр иртсе кайнă чăвашсем Иван Яковлевич шухăша ячĕç. Чăнах та, вĕсем, çав чăвашсем, ĕмĕрĕнче кĕнеке тытса та пăхман ĕнтĕ. Иван вара – университет студенчĕ, математика факультетĕнче вĕренет, паллă профессорсен лекцийĕсене итлет. Пурăнăç пусми тăрăх хăпарнăçемĕн хăпарать вăл. Унăн тăван халăхне ырă тума, чăваш чĕлхине аталантарма ăс илмелле. Çапла тумашкăн ырми-канми тăрăшмалла, кашни ялалана тĕплĕн туса пымалла. «Кĕлтесене чипер хумасан лайăх капан пулмасть: е чалăшать, е тӳнет», – тетчĕ аслашшĕ. Çавăнпа Иван питĕ тăрăшса вĕренет, хăй факультетĕнчи лекцисене çӳренисĕр пуçне ытти курссенчи профессорсене итлет, тăван халăхшăн ырă ĕç тума ĕмĕтленет. (*Тихăн Петĕркки.)*

**2-мĕш пай**

***Алла панă текста тĕплĕ, васкамасăр вуласа тухăр, 2.1–2.13 ĕçсене тăвăр.***

(1)– Паян эпĕ сирĕнпе тăван чĕлхе пирки калаçасшăн, – терĕ Яковлев. (2)– Тăван чĕлхе вăл çынсене хыпар-хăнар пĕлтерме çеç мар, пĕр чăмăра пĕрлештерме те кирлĕ вăй пулса тăрать. (3)Тăван чĕлхе сывă-чĕрĕ чухне халăх пĕтмест. (4)Тăван чĕлхе вилсен вара халăх хăйĕн сăн-питне çухатать, ют йăхсемпе хутшăнса кайса ним паллисĕр çĕтет… (5)Пирĕн пурсăмăр та чун-чĕререн юратакан тăван чĕлхемĕр пулман пулсан чăвашсем тахçанах тутара е вырăса тухса пĕтнĕ пулĕччĕç…

(6)Чăваш юрри пек янăравлă та кĕвĕллĕ, калама çук пуян пирĕн тăван чĕлхемĕр. (7)Чăваш чĕлхипе кирек мĕнле туйăма та палăртма, тем тери пысăк шухăша та каласа кăтартма май пур. (8)Тăван чĕлхе çепĕçрен чăваш çынни хăна-вĕрлене ăшă та тараватт сăмахсемпе савăнтарать. (9)Чăваш калаçнă чухне сар кайăк сассине те, тăрна кикаклатнине те, çил вĕрнине те, çырма шăнкăртатса юхнине те, аслати кĕмсĕртетнине те илтме пулать. (10)Акă аса илер-ха халăх юрри-такмакне, халăх юмах-халапне е тата пурсăмăр та чунтан юратакан Константин Иванов-Пăртта сăвви-поэмине! (11)Мĕн тери çепĕççĕн, мĕн тери ытарайми янăрать! (12)Кашни сăмахĕ, кашни йĕрки!

(13)Тăван чĕлхе – тĕнче ăс-хакăлĕ. (14)Юратăр, ачасем, асаттесен чĕлхине, тĕпчĕр, вĕренĕр. (15)Эсир тăрăшсан тăван чĕлхемĕр, халăха хăват парса пурнăç пиллекен аслă чысăмăр, малалла аталанса, лайăхланса пырĕ, малашне те пурăнĕ, вилмĕ. (*Юхма Мишши*.)

**2.1.** Итленĕ текстпа вуланă текста мĕнле шухăш пĕрлештерет?
1) Атте-анне пурнăçра чи хакли.
2) Çиччĕ виç те пĕрре кас.
3) Хамăр тăрăшсан чĕлхене упраса хăварăпăр.
4) Ĕçрен ан хăра, вăл хăй санран хăратăр.

**2.2.** Хăвăр вуланă текстра автор шухăшне хăш предложени уçса парать?
1) 1 2) 6 3) 8 4) 15

**2.3.** Текста мĕнле стильпе çырнă?
1) калаçу стилĕпе
2) наука стилĕпе
3) публицистика стилĕпе
4) илемлĕ литература стилĕпе

**2.4.** Хăш предложенире антоним пулакан глаголсем пур?
1) 1 2) 4 3) 11 4) 15

**2.5.** 5-мĕш предложенире сасă шучĕ сас палли шутĕнчен ытларах сăмах хăшĕ?
1) чăвашсем 2) тахçанах 3) юратакан 4) пурсăмăр

**2.6.** 6-мĕш предложенире мĕнле илемлĕх мелĕ палăрать?
1) танлаштару 2) перифраз 3) сăпатлантару 4) гипербола

**2.7.** 9-мĕш предложенири иккĕмĕшле сăмах (*шăнкăртатса)* мĕнле пулнă?

1) *шăнкăр* евĕрлев сăмахĕ çумне *-тат* аффикс хушăннипе

2) *шăн* япала ячĕ çумне *-кăр* тата *-тат* аффикссем хушăннипе

3) *шăнкăр* евĕрлев сăмахĕ çумне *-татса* аффикс хушăннипе

4) *шăнкăртат* глагол çумне *-са* аффикс хушăннипе

**2.8.** 3-мĕш предложенире *сывă-чĕрĕ* сăмаха мĕншĕн дефиспа çырнă?

1) мăшăр сăмах пулнă пирки

2) хутлă сăмах пулнă пирки

3) икĕ хут калакан сăмах пулнă пирки

4) *чĕрĕ* татăка яланах дефиспа çырнă пирки

**2.9.** 9-мĕш предложенири *чухне* сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулать?

1) паллă ячĕ 2) местоимени 3) хыç сăмах 4) глагол

**2.10.** *Тăван чĕлхе çепĕçрен чăваш çынни хăна-вĕрлене ăшă та тараван сăмахсемпе савăнтарать* предложенире (8 №) шухăш тĕшши хăш сăмахсем çине ӳкет?

1) савăнтарать

2) тăван чĕлхе

3) ăшă та тараван сăмахсемпе

4) чăваш çынни

**2.11.** *Тăван чĕлхе – тĕнче ăс-хакăлĕ. предложенире* (13 №) подлежащи пулакан сăмах хăшĕ?

1) тăван 2) чĕлхе 3) тĕнче 4) ăс-хакăлĕ

**2.12.** 4-мĕш предложени тытăмĕ енчен хăш ушкăна кĕрет?

1) сыпăнуллă хутлă предложени

2) çыхăну паллисĕр хутлă предложени

3) пайĕсене деепричасти аффиксĕпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложени

4) пайĕсене вырăнĕ-йĕркипе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложени



**2.13.** 6-мĕш предложенире запятойсем лартнин сăлтавне ăнлантарăр.

1) пĕр йышши членсем союзсăр çыхăннă пирки

2) сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсем умлăн-хыçлăн пулса иртекен ĕçсене кăтартнă пирки

3) сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсем пĕр вăхăтра пулса иртекен ĕçсене кăтартнă пирки

4) çыхăну паллисĕр хутлă предложени пайĕсем умлăн-хыçлăн пулса иртекен ĕçсене кăтартнă пирки

### 3-мĕш пай

***2-мĕш пайра вуланă текстпа усă курса 14.1, 14.2 е 14.3 ĕçсенчен пĕрне тăвăр. Хайлав çырас умĕн суйласа илнĕ ĕçĕн номерне палăртăр: 14.1, 14.2 е 14.3.***

**14.1. «Хамăр тăрăшсан чĕлхене упраса хăварăпăр»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине усса парăр.

Хăвăр шухăшăра икĕ аргументпа ĕнентерĕр: пĕр аргументне итленĕ текстран, теприне вуланă текстран илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**14.2.** Вуланă текстра палăртнă **«Эсир тăрăшсан тăван чĕлхемĕр, халăха хăват парса пурнăç пиллекен аслă чысăмăр, малалла аталанса, лайăхланса пырĕ, малашне те пурăнĕ, вилмĕ»** шухăша усса парса калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр.

Хăвăр шухăшăра вуланă текстри икĕ аргументпа ĕнентерĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**14.3. *Чăваш чĕлхи*** ăнлава эсир мĕнле ăнланатăр? Хăвăр панă определение усса парăр. **«Мĕн вăл чăваш чĕлхи?»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хай-

лавĕ çырăр. Тезис вырăнне хăвăр панă определенипе усă курăр. Тезиса аргументлама икĕ аргумент тĕслĕхпе усă курăр: пĕр аргументне вуланă текстран, теприне хăвăр пурнăçăр опытĕнчен илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

## *8-мĕш вариант*

### 1-мĕш пай

***Текста тимлĕ итлĕр те ăна çывăх изложени çырăр.***

Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче ĕçсем хуллен йĕркеленсе çитрĕç. Çавăнпа И.Я. Яковлев тĕп ĕçне çине тăрса туса пĕтерме шутларĕ. Тĕп ĕçĕ унăн халь – чăваш çырулăхне тăвасси. Çырулăх тумасăр, кĕнеке пичетлемесĕр халăха çутта кăларас тени вăл юхса выртакан шыв çинче йĕпсĕр тĕрĕ тĕрлес тени пекех. Çакна Иван Яковлевич лайăх ăнланать.

Каçсерен хăй пӳлĕмĕнче И. Яковлев çĕнĕ çырулăх мĕнле пулмалли пирки пин тĕрлĕ шухăш та турĕ. «Çырулăх! – шухăшларĕ вăл. – Мĕн чухлĕ çын сана тăвассишĕн тăрăшнă, анчах мĕншĕн тăвайман-ха? Çырулăх! Пулнах эсĕ ĕлĕк, анчах мĕнлерех пулнă-ши? Çамка çине çырнинчен иртме çук тесе ахальтен каламан ваттисем. Кунта та çырулăх пирки сăмах пырать. Çырулăх çинчен калакан сăвă-юрă халăхра нумай иккен. Апла, чăваш çынни ĕлĕк кĕпи çине те çыру çырма пултарнă: тăванăн ятне, шухăш-кăмăлне унта палăртнă. Эппин, чăвашсем çырнă та, вуланă та…Çыру тăрăх хăйсен пурнăçне йĕрлесе пынă…»

Мĕн тĕрлĕ шухăш çаврăнмарĕ И. Яковлев пуçĕнче. Çамрăк студент çырулăх тăвасси çинчен çеç мар, этемĕн çак тĕнчери тивĕçĕ çинчен те шухăшларĕ. Чăнах та, мĕншĕн çуралать-ха этем çак тĕнчене? Этем пурнăçĕ – самант. Çав саманта этемĕн тăван халăхĕ валли май çитнĕ таран ытларах ырă ĕç туса хăварма тăрăшмалла! Халăхăн пуянлăхĕ – чĕлхе. Çав пуянлăха упраса хăвармалла. (*Юхма Мишши.*)



### 2-мĕш пай

***Алла панă текста тĕплĕ, васкамасăр вуласа тухăр, 2.1–2.13 ĕçсене тăвăр.***

(1)Пирĕн тăван чĕлхе – чăваш чĕлхи. (2)Чăваш чĕлхипе пирĕн асатте-асанне калаçнă. (3)Чăваш чĕлхине аслă ăру пире пехиллесе хăварнă. (4)Ытти чĕлхесем тем пек чаплă пулсан та, пирĕншĕн ют. (5)Çын лаши тем пек маттур пулсан та ун çине утланса ларса мухтанса çӳреймĕн.

(6)Темĕн тĕрлĕ чаплă пуян çын тумтирне тăхăнса хам тумтирĕм тесе калаймăн. (7)Хăвăнни вара ытлашши чиперех пулмасан та, шанчăклăрах. (8)Çын япалипе усă курнăшăн сана никам та тиркемĕ, хăвăн нимĕн те çук тесе никам та ӳпкелеймĕ. (9)Эсĕ çыннăнне йышăнсан кирек кам та сана пырса тĕртсе хурлăха хăварĕ.

(10)– Хăйĕн нимĕскер те çук, мĕскĕн, çыннăннипе анчах пурăнать, – тесе калĕç ун пек чухне.

(11)Çакăн пек сăмаха илтни сана намăслантармĕ-и, пите хĕретмĕ-и? (12)Çакна нихăш чăвашăн та ниçта та манса каяс марччĕ – эпир чухăн мар. (13)Пирĕн пуян чĕлхе пур.(14) Вăл çĕр çинчи чи ватă чĕлхесенчен пĕри.

(15)Чăвашсем, чĕлхемĕре ан манăр, ăна ан çухатăр – ăна çухатсан эпир хамăр та çухалăпăр, чăваш ячĕ те çухалĕ! *(Тăваньялсем Сергей.)*

**2.1.** Итленĕ текстпа вуланă текста мĕнле шухăш пĕрлештерет?

1) Атте-анне пурнăçра чи хакли.
2) Çиччĕ виç те пĕрре кас.
3) Тăван чĕлхене манас марччĕ.
4) Ĕçрен ан хăра – вăл хăй санран хăратăр.

**2.2.** Хăвăр вуланă текстра автор шухăшне хăш предложени уçса парать?

1) 1 2) 6 3) 8 4) 15

**2.3.** Текста мĕнле стильпе çырнă?

1) калаçу стилĕпе

2) наука стилĕпе
3) публицистика стилĕпе
4) илемлĕ литература стилĕпе

**2.4.** Хăш предложенире синоним пулакан глаголсем пур?
1) 2 2) 5 3) 7 4) 8

**2.5.** 4-мĕш предложенире сасă шучĕ сас палли шутĕнчен ытларах сăмах хăшĕ?
1) ытти 2) чĕлхесем 3) пирĕншĕн 4) ют

**2.6.** 4-мĕш предложенире мĕнле илемлĕх мелĕ палăрать?
1) танлаштару 2) перифраз 3) сăпатлантару 4) гипербола

**2.7.** 7-мĕш предложенири иккĕмĕшле сăмах (*шанчăклăрах)* мĕнле пулнă?
1) *ш* евĕрлев сăмахĕ çумне *-анчăк* аффикс хушăннипе
2) *шанчăк* япала ячĕ çумне *-лăрах* аффикс хушăннипе
3) *шăнчăклă* паллă ячĕ çумне *-рах* аффикс хушăннипе
4) *шан* глагол çумне *-чăк* тата *-лă* аффикссем хушăннипе

**2.8.** 2-мĕш предложенире *асатте-асанне* сăмаха мĕншĕн дефиспа çырнă?
1) мăшăр сăмах пулнă пирки
2) хутлă сăмах пулнă пирки
3) икĕ хут калакан сăмах пулнă пирки
4) *асанне* татăка яланах дефиспа çырнă пирки

**2.9.** 5-мĕш предложенири *пек* сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулать?
1) паллă ячĕ 2) местоимени 3) хыç сăмах 4) глагол

**2.10.** *Çын япалипе усă курнăшăн сана никам та тиркемĕ* предложенире (8 №) шухăш тĕшши хăш сăмахсем çине ӳкет?
1) çын япалипе 2) усă курнăшăн 3) сана 4) никам та

**2.11.** *Пирĕн тăван чĕлхе – чăваш чĕлхи* предложенире (1 №) подлежащи пулакан сăмах хăшĕ?



1) тăван 2) чĕлхе 3) чăваш 4) чĕлхи

**2.12.** 9-мĕш предложени тытăмĕ енчен хăш ушкăна кĕрет?
1) сыпăнуллă хутлă предложени
2) çыхăну паллисĕр хутлă предложени
3) пайĕсене деепричасти аффиксĕпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложени
4) чĕнӳллĕ хутсăр предложени

**2.13.** 11-мĕш предложенире запятойсем лартнин сăлтавне ăнлантарăр.
1) пĕр йышши членсем союзсăр çыхăннă пирки
2) çыхăну паллисĕр хутлă предложени пайĕсем пĕр-пĕрне хирĕçленĕ пирки
3) сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсем пĕр вăхăтра пулса иртекен ĕçсене кăтартнă пирки
4) чĕнӳллĕ предложени пулнă пирки

**3-мĕш пай**

***2-мĕш пайра вуланă текстпа усă курса 14.1, 14.2 е 14.3 ĕçсенчен пĕрне тăвăр. Хайлав çырас умĕн суйласа илнĕ ĕçĕн номерне палăртăр: 14.1, 14.2 е 14.3.***

**14.1.** **«Эпир – тăван чĕлхенĕн пуласси»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.

Хăвăр шухăшăра икĕ аргументпа ĕнентерĕр: пĕр аргументне итленĕ текстран, теприне вуланă текстран илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**14.2.** Вуланă текстра палăртнă **«Чăвашсем, чĕлхемĕре ан манăр, ăна ан çухатăр – ăна çухатсан эпир хамăр та çухалăпăр, чăваш ячĕ те çухалĕ!“** шухăша уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр.

Хăвăр шухăшăра вуланă текстри икĕ аргументпа ĕнентерĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**14.3.** ***Чĕлхене упрасси*** ăнлава эсир мĕнле ăнланатăр? Хăвăр панă определение уçса парăр. **«Мĕн вăл чĕлхене упрасси?»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тезис вырăнне хăвăр панă определенипе усă курăр.

Хăвăр шухăшăра икĕ аргументпа ĕнентерĕр: пĕр аргументне вуланă текстран, теприне хăвăр пурнăçăр опытĕнчен илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.



## ЭКЗАМЕНА ХАТĔРЛЕНМЕЛЛИ ТĔСЛĔХСЕМ

### *1-мĕш вариант*

### 1-мĕш пай

***Текста тимлĕ итлĕр те ăна çывăх изложени çырăр.***

Мĕн-ши вăл илем тени? Мĕнрен килет, ăçтан тухать-ши унăн асамлă хăвачĕ? Уяр çанталăкра янкăр тăрă тӳпе тĕлĕнмелле хитре! Вăл чуна лăплантарать, ăшра ырă канлĕх туйăмĕ вăратать. Акă тата каçхи тĕттĕме сирекен çутă уйăх пĕлĕт хушшинчен ярăнса тухать те тулли питлĕ сарă хĕр пек курăнать.

Кашни халăхăн пекех, чăвашсен те хăйне евĕрлĕ хӳхĕм юрри-кĕвви, çивĕч кулăшĕ-сăмахĕ, капăр эрешĕ, çыпăçуллă та ăслă йăли-йĕрки нумай.

Хитрелĕхе этем авалтанпах кулленхи пурнăçа явăçтарнă, хăй аллипе ăсталма тăрăшнă. Вăл профессиллĕ искусствăсем – илемлĕ литература, ӳкерчĕк тăвас пултарулăх, музыка, театр, архитектура, скульптура, кино тата ытти те шухăшласа кăларнă. Акăш-макăш чаплă хайлавсенче илем пурнăç чăнлăхĕпе пĕтĕçсе чуна хускатакан хăват пулса тăнă. *(Г. Хлебников.)*

**Изложени тексчĕн микротемисем**

| Абзац номерĕ | Микротема |
|---|---|
| 1 | Уяр çанталăкра янкăр тăрă тӳпе те, каçхи çутă уйăх та илемлĕ. |
| 2 | Чăвашсен те хăйне евĕр хӳхĕм юрри-кĕвви, кулăш-сăмахĕ, эрешĕ, йăли-йĕрки нумай. |
| 3 | Çын хăй аллипе те илемлĕхе ăсталама тăрăшнă. |

### 2-мĕш пай

**2–8-мĕш ĕçсен хуравĕ сăмах (темиçе сăмах) е цифрăсен йĕрки пулма пултарать.**

**2** *Синтаксис тишкерĕвĕ*

Текста тĕплĕ, васкамасăр вуласа тухăр.

*(1)Çурла уйăхĕнче çанталăк сивĕтет. (2)Çавна пăхмасăрах эпĕ улăха çара уранах чуптартăм. (3)Тусанлă çулпа пынă чух сиввине туймарăм. (4)Улăха хăвăрт çитрĕм. (5)Таврара шап-шурă.*

Предложенисен тĕп членĕсене тĕрĕс палăртнă вариантсене кăтартăр.

1) *çанталăк сивĕтет* (1-мĕш предложени);
2) *эпĕ чуптартăм* (2-мĕш предложени);
3) *сиввине туймарăм* (3-мĕш предложени);
4) *улăха çитрĕм* (4-мĕш предложени);
5) *таврара шап-шурă* (5-мĕш предложени).

**Хуравĕ: __________________________**

**3** ***Пунктуаци тишкерĕвĕ***

Чарăну палли лартмалли вырăнсене кăтартакан цифрăсене çырăр.

*Çунасем (1) машинăсем (2) çуран çынсем хыççăн (3) юр пĕтĕрĕне-пĕтĕрĕне чупать (4) пÿртсемпе юпасем (5) тата йывăççемпе (6) тĕмсем тавра шурă вăйă карти çаврăнать (7) çулсене-сукмаксене кĕрпеклĕ юр ним курăнми шăла-шăла лартать.*

**Хуравĕ: __________________________**

**4** ***Синтаксис тишкерĕвĕ***

*Пирĕн вăрмансенче пурăнакан тискер кайăксем* сăмах майлашăвĕн тĕп компонентне çырăр.

**Хуравĕ: __________________________**

**5** ***Орфографи тишкерĕвĕ.***

**Паллă тунă сăмахсене мĕнле çырнине тĕрĕс ăнлантарнă хурав варианчĕсен номерĕсене çырăр.**

1) ***килеть*** – çемçе сыпăкри хупă сасă çемçен илтĕнсен çемçелĕх палли çырмалла;
2) ***уй-хир*** **–** мăшăр сăмахсене дефиспа çырмалла;
3) ***чи илемлĕ*** *– чи* татăка паллă ятĕнчен уйрăм çырмалла;
4) ***килеттĕм*** – ĕмĕт наклоненийĕнчи глаголсенче 1-2-мĕш сăпатсенче икĕ *т* çырмалла;
5) ***кур-ха*** – *ха* междометие яланах дефиспа çырмалла.

**Хуравĕ: __________________________**



**Текста вуласа тухăр та 6–9-мĕш ĕçсене тăвăр.**

(1)Хитрене чăваш питĕ юрататъ. (2)Çавăнпа чăваш юррисенче хитре çинчен нумай каласа юрланă. (3)Мĕн хитре?

(4)Хитре вăрман – çĕмĕрт çурăлнă чух, хурăн çулçи сарăлнă чух; хитре пахча – унта мăкăньсем тата ытти чечексем шăтнă чух; хитре хир, уй – унта симĕс курăк шăтнă чух; хитре тĕнче – ăна хĕвел пăхса çутатнă чух; хитре урам – урамра ача-пăча выляса çÿренĕ чух.

(5)Мĕнле çын пирки чăваш хитре тесе шухăшлать?

(6)Юрăра çÿллĕ çынна, тÿрĕ, сарлака кĕлеткене, вăйлă çынна, çирĕп кăкăрлă, сутă сăнлă, тулли питлĕ, таса уçă сăслă, çăмăл уралла çынна хисеплеççĕ.

(7)Илемлĕ хĕрсен, авалхи шутпа, тухья тăхăнмалла, мăя шăрçа, çуха çыхмалла, çурăм çине утма ямалла, ума – шÿлкеме, тенкĕ.

(8)Ар çыннăн вăйлă пулас пулать, пули-пулми çынна парăнас пулмасть, хăйĕн чысне питĕ тимлес пулать.

(9)Чăваш юррисенче хитрепе юнашар усал çинчен калани те пур. (10) Юрăра усалтан мăшкăлласа кулни питĕ нумай. (11)Апла пулин те уксак-чăлахран, чирлесе усалланнă çынтан чăваш кулмасть. (12)Çын хăйне хăй хитре вырăнне хурса мухтанни чи усал шутланать, ун пеккисене чăваш хĕрхенмест. *(Ф. Павлов*.)*

****Федор Павлов*** *(1892–1931) – чăвашсен паллă çыравçи тата композиторĕ.*

**6** ***Текст содержанийĕн тишкерĕвĕ***

**Текст содержанийĕпе хăш предложенисем тÿр килеççĕ?**

1) Улмуççи çурăлнă чух вăрман хитре.
2) Юрăра çÿллĕ çынна хисеплеççĕ.
3) Хитре хĕрсен, авалхи шутпа, хушпу тăхăнмалла.
4) Ар çыннăн савăнăçлă пулас пулать.
5) Чăваш чирлесе усалланнă çынтан кулмасть.

**Хуравĕ: __________________________**

**7** *Илемлĕх мелĕсене тишкерни*

**Эпитетлă предложенисен номерĕсене кăтартăр.**

(1) Хитрене чăваш питĕ юрататъ.

(2) Çавăнпа чăваш юррисенче хитре çинчен нумай каласа юрланă.

(3) Юрăра çӳллĕ çынна, тӳрĕ, сарлака кĕлеткене, вăйлă çынна, çирĕп кăкăрлă, çутă сăнлă, тулли питлĕ, таса уçă саслă, çăмăл уораллă çынна хисеплеççĕ.

(4) Чăваш юррисенче хитрепе юнашар усал çинчен калани те пур.

(5) Юрăра усалтан мăшкăлласа кулни питĕ нумай**.**

**Хуравĕ: ___________________________**

**8** *Лексика тишкерĕвĕ*

*Илемлĕ* сăмахăн (7-мĕш предложени) синонимне текстра тупса çырăр.

**Хуравĕ: ___________________________**

**2–8-мĕш ĕçсен хуравĕсене хурав бланкне куçарса çырма ан манăр. Кашни ĕçĕн хуравĕ тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнине тепĕр хут пăхса тухăр.**

### 3-мĕш пай

**2-мĕш пайра вуланă текстпа усă курса 9.1, 9.2 е 9.3 ĕçсенчен пĕрне тăвăр. Хайлав çырас умĕн суйласа илнĕ ĕçĕн номерне палăртăр: 9.1, 9.2 е 9.3.**

**9.1. «Илем тĕнчене çăлса хăварать»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.

Хăвăр шухăшăра икĕ аргументпа ĕнентерĕр: пĕр аргументне итленĕ текстран, теприне вуланă текстран илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.



**9.2.** Вуланă текстра палăртнă **«Çын хăйне хăй хитре вырăнне хурса мухтанни чи усал шутланать»** шухăша уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.

Хăвăр шухăшăра вуланă текстри икĕ аргументпа ĕнентерĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**9.3.** ***Илем*** сăмаха эсир мĕнле ăнланатăр? Хăвăр панă определение уçса парăр. **«Мĕн вăл илем?»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр.

Тезис вырăнне хăвăр панă определенипе усă курăр. Тезиса аргументлама икĕ аргумент тĕслĕхпе усă курăр: пĕр аргументне вуланă текстран, теприне хăвăр пурнăçăр опычĕнчен илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**Кашни ĕçĕн хуравĕ тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнине тепĕр хут пăхса тухăр.**

## *2-мĕш вариант*

### 1-мĕш пай

***Текста тимлĕ итлĕр те ăна çывăх изложени çырăр.***

Хитрене чăваш питĕ юрататъ. Çавăнпа чăваш юррисенче хитре çинчен нумай каласа юрланă. Мĕн хитре? Хитре вăрман – çĕмĕрт çурăлнă чух, хурăн çулçи сарăлнă чух; хитре пахча – унта мăкăньсем тата ытти чечексем шăтнă чух; хитре хир, уй – унта симĕс курăк шăтнă чух; хитре тĕнче – ăна хĕвел пăхса çутатнă чух; хитре урам – урамра ача-пăча выляса çӳренĕ чух.

Мĕнле çын пирки чăваш хитре тесе шухăшлать? Юрăра çӳллĕ çынна, тӳрĕ, сарлака кĕлеткене, вăйлă çынна, çирĕп кăкăрлă, çутă сăнлă, тулли питлĕ, таса уçă саслă, çăмăл уораллă

çынна хисеплеççĕ. Хитре хĕрсен, авалхи шутпа, тухья тăхăнмалла, мăя шăрçа, çуха çыхмалла, çурăм çине утма ямалла, ума – шӳлкеме, тенкĕ. Ар çыннăн вăйлă пулас пулать, пули-пулми çынна парăнас пулмасть, хăйĕн чысне питĕ тимлес пулать.

Чăваш юррисенче хитрепе юнашар усал çинчен калани те пур. Усалтан юрăра мăшкăлласа кулни питĕ нумай. Апла пулин те уксак-чăлахран, чирлесе усалланнă çынтан чăваш кулмасть. Çын хăйне хăй хитре вырăнне хурса мухтанни чи усал шутланать, ун пеккисене чăваш хĕрхенмест. *(Ф. Павлов.)*

**Изложени тексчĕн микротемисем**

| Абзац номерĕ | Микротема |
|---|---|
| **1** | Хитрене чăваш юратать; çут çанталăк ешернĕ чух хитре тесе шутлать. |
| **2** | Чăваш вăйлă çынна, сутă сăнлă çынна хисеплет. Хитре хĕрсен чăваш тумĕ тăхăнмалла. |
| **3** | Чăваш уксак-чăлахран кулмасть, мухтанчăка хĕрхенмест. |

**2-мĕш пай**

**2–8-мĕш ĕçсен хуравĕ сăмах (темиçе сăмах) е цифрăсен йĕрки пулма пултарать.**

**2** ***Синтаксис тишкерĕвĕ***

Текста тĕплĕ, васкамасăр вуласа тухăр.

*(1)Кăвак шуçăм килчĕ. (2)Çумăр çума чарăнчĕ. (3)Унта та кунта пĕлĕт татăкĕсем хăмăшлăх хушшинчи çаврашка кӳлĕсем пек курăнкала пуçларĕç. (4)Умри вăрман енчен сывлăша çурса кĕпер çийĕпе пĕр снаряд уласа вĕçсе иртрĕ те хыçри вăрмана ӳксе таврари шăплăха чĕтрентерсе илчĕ. (5)Çакăн хыççăн снарядсем умлăн-хыçлăн уласа çынсене хăратма пуçларĕç.*

Предложенисен тĕп членĕсене тĕрĕс палăртнă вариантсене кăтартăр.

1) *шуçăм килчĕ* (1-мĕш предложени);
2) *çумăр çума чарăнчĕ* (2-мĕш предложени);
3) *кӳлĕсем пек курăна пуçларĕç* (3-мĕш предложени);
4) *снаряд чĕнтрентерсе ячĕ* (4-мĕш предложени);
5) *çынсене хăратма пуçларĕç* (5-мĕш предложени).

**Хуравĕ: ___________________________**

**3** ***Пунктуаци тишкерĕвĕ***

Чарăну палли лартмалли вырăнсене кăтартакан цифрăсене çырăр.

*Пĕр алă утăм чупсан тин (1)Назаров ирхинех палăртса хунă (2) ватă юман хыçне вирхĕнсе ӳкрĕ (3) каялла çаврăнса пăхрĕ (4) ура çине çĕкленме тăрăшрĕ (5) анчах вăй çитереймерĕ.*

**Хуравĕ: ___________________________**

**4** ***Синтаксис тишкерĕвĕ***

*Ял хыçĕнчи вăрманăн яштака хырĕсем* сăмах майлашăвĕн тĕп компонентне çырăр.

**Хуравĕ: ___________________________**

**5** ***Орфографи тишкерĕвĕ***

**Паллă тунă сăмахсене мĕнле çырнине тĕрĕс ăнлантарнă хурав варианчĕсен номерĕсене çырăр.**

1) ***муньча*** – çемçе сыпăкри хупă сасă çемçен илтĕнсен çемçелĕх палли çырмалла;
2) ***атă-пушмак*** – хутлă сăмахсене дефиспа çырмалла;
3) ***чи вăрăм*** – *чи* татăка паллă ятĕнчен уйрăм çырмалла;
4) ***чĕнеттĕм*** – ĕмĕт наклоненийĕнчи глаголсенче 1-2-мĕш сăпатсенче икĕ *т* çырмалла;
5) ***кала-ха*** – *ха* татăка яланах дефиспа çырмалла.

**Хуравĕ: ___________________________**

**Текста вуласа тухăр та 6–9-мĕш ĕçсене тăвăр.**

(1)Çын çумĕнче яланах икĕ тĕрлĕ хитрелĕх. (2)Пĕри сăнпитрен, ӳт-пӳрен килĕшӳллĕ пулни. (3)Çакă, паллах, ашшĕ-амăшĕн парни. (4)Турă пани тесен те ытлашшиех мар.

(5)Тепри вара – çын хăй тăрăшса пуянлатнă хитрелĕх. (6)Кунта пур тăхăнма пĕлни, ыттисен умĕнче сăпайлă тытма

хăнăхни, таврари илеме хаклама пĕлни. (7)Чун илемĕ тейĕпĕр. (8)Çакă вара пĕтĕмпех хамăртан килет.

(9)Сăнран хитре çуралнисем, чечек пек илемлисем пур-ха, анчах чун илемĕ чухăнрах. (10)Тепри ав сăн-питрен ыттисенчен уйрăлсах тăмасть, чун илемне пула питĕ хитрен курăнать.

(11)Пурнăçра пур пĕрех чун илемĕ пахарах, мĕншĕн тесен вăл ыттисене ăшă парса тăрать, нумая пырать. *(А. Кипеч*.)*

***Анатолий Кипеч** (1937 çулта çуралнă) – чăвашсен паллă çыравçи, педагогика ăслăлăхĕсен кандидачĕ.*

**6** *Текст содержанийĕн тишкерĕвĕ*

**Текст содержанийĕпе хăш предложенисем тӳр килеççĕ?**

1) Çын çумĕнче яланах вичĕ тĕрлĕ хитрелĕх.
2) Хитрелĕх – ашшĕ-амăшĕн парни.
3) Хитре çуралнисем чунпа та яланах илемлĕ.
4) Чун илемне кура çын питĕ хитрен курăнать.
5) Пурнăçра пурпĕрех сăн илемĕ пахарах.

**Хуравĕ:** ___________________________

**7** *Илемлĕх мелĕсене тишкерни*

**Танлаштаруллă предложенисен номерĕсене кăтартăр.**

(1) Çын çумĕнче яланах икĕ тĕрлĕ хитрелĕх.
(2) Çакă, паллах, ашшĕ-амăшĕн парни.
(3) Тепри вара – çын хăй тăрăшса пуянлатнă хитрелĕх.
(4) Çакă вара пĕтĕмпех хамăртан килет.
(5) Сăнран хитре çуралнисем, чечек пек илемлисем пур-ха, анчах чун илемĕ чухăнрах.

**Хуравĕ:** ___________________________

**8** *Лексика тишкерĕвĕ*

*Сивĕ* сăмахăн антонимне текстра тупса çырăр.

**Хуравĕ:** ___________________________

**2–8-мĕш ĕçсен хуравĕсене хурав бланкне куçарса çырма ан манăр. Кашни ĕçĕн хуравĕ тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнине тепĕр хут пăхса тухăр.**



## 3-мĕш пай

**2-мĕш пайра вуланă текстпа усă курса 9.1, 9.2 е 9.3 ĕçсенчен пĕрне тăвăр. Хайлав çырас умĕн суйласа илнĕ ĕçĕн номерне палăртăр: 9.1, 9.2 е 9.3.**

**9.1. «Мĕнле çынна хитре тетпĕр?»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине усса парăр.

Хăвăр шухăшăра икĕ аргументпа ĕнентерĕр: пĕр аргументне итленĕ текстран, теприне вуланă текстран илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**9.2.** Вуланă текстра палăртнă **«Пурнăçра пур пĕрех чун илемĕ пахарах, мĕншĕн тесен вăл ыттисене ăшă парса тăрать, нумая пырать»** шухăша усса парса калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине усса парăр.

Хăвăр шухăшăра вуланă текстри икĕ аргументпа ĕнентерĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**9.3.** ***Чун илемĕ*** ăнлава эсир мĕнле ăнланатăр? Хăвăр панă определение усса парăр. **«Мĕн вăл чун илемĕ?»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр.

Тезис вырăнне хăвăр панă определенипе усă курăр. Тезиса аргументлама икĕ аргумент тĕслĕхпе усă курăр: пĕр аргументне вуланă текстран, теприне хăвăр пурнăçăр опытĕнчен илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

## *3-мĕш вариант*

### 1-мĕш пай

***Текста тимлĕ итлĕр те ăна çывăх изложени çырăр.***

Мĕн вăл тăван кĕтес? Хамăра кун панă атте-анне, çывăх пĕлĕш-тăван, хурăнташсем, кÿршĕсем, ял-йыш. Вăл – тăван кил-çурт, сад пахчи, çуралса ÿснĕ ял. Вăл – пÿрт умĕнчи лаштра йăмрапа йăрăс хурăн, лупас хыçĕнчен пуçланакан çĕр улми йăранĕсем, садри улмуççипе чиесем, пĕчĕк хăмла пахчи, вĕллесем. Вăл – укăлчаран инçех мар иртекен юхан шыв, хамăр акса çитĕнтернĕ икĕ хырлăх, ултă-çичĕ çухрăма çити тăсăлакан уйсемпе хирсем. Вăл – хамăр ялăн шăпипе кун-çулĕ, унăн аваллăхĕ. Вăл – хамăрăн лăпкă та сăпайлă халăхăн çепĕç чĕлхи-калаçăвĕ, сăвви-юрри, вăййи-кулли, йăли-йĕрки, ĕçĕ-шывĕ...

Пархатарлă та ырă чунлă кашни çыншăнах тăван кĕтес хаклă та сăваплă. Мĕншĕн? Çуратнăшăн, çут тĕнчене кăларнăшăн. Пăхнăшăн, лăпканăшăн, ачашланăшăн, ятланăшăн, хăтăрнăшăн, çын тунăшăн. Чуна тасалăхпа та тÿрĕлĕхпе, сăпайлăхпа та сапăрлăхпа, маттурлăхпа та аптраманлăхпа пуянлатнăшăн. Йывăрлăхсемпе чăрмавсене çĕнтерме, усал-тĕселсене аркатма, çут тĕнчепе этемлĕхе юратма хăнăхтарнăшăн.

Çамрăк çыннăм, кирек мĕнле пысăк çын пулса тăрсан та пуçна ан каçăрт. Кирек ăçта аякка кайсан та Тăван çĕр-шывăн ырă сывлăшне, çăкăр-тăварне, аçăр-аннĕр çĕрне, чĕлхине, йăлине, юррине манас марччĕ, килсех тăрасчĕ тăван кĕтесе, ăна пуç таясчĕ, малалла аталанма пулăшасчĕ. *(Сантăр Аксар.)*

**Изложени тексчĕн микротемисем**

| Абзац номерĕ | Микротема |
|---|---|
| 1 | Тăван кĕтес вăл – атте-анне, кÿршĕсем, ял-йыш, тăван кил-çурт, тăван халăхăн чĕлхи-калаçăвĕ, сăвви-юрри, вăййи-кулли, йăли-йĕрки... |
| 2 | Кашни çыншăнах тăван кĕтес çуратнăшăн, йывăрлăхсемпе чăрмавсене çĕнтерме, çут тĕнчене юратма хăнăхтарнăшăн хаклă та сăваплă. |
| 3 | Кирек ăçта кайсан та тăван кĕтесе манас марччĕ, ăна пуç таясчĕ, малалла аталанма пулăшасчĕ. |



### 2-мĕш пай

**2–8-мĕш ĕçсен хуравĕ сăмах (темиçе сăмах) е цифрăсен йĕрки пулма пултарать.**

**2** ***Синтаксис тишкерĕвĕ***

Текста тĕплĕ, васкамасăр вуласа тухăр.

*(1)Çанталăк самаях уçă. (2)Хĕвеллĕ кунсен вăхăчĕ те иртмен. (3)Шыв сивĕнсех çитеймен. (4)Уяр та тÿлек кунсем авăн уйăхĕнче уйрăмах илемлĕ пек. (5)Тавралăх инçе-инçе курăнать.*

Предложенисен тĕп членĕсене тĕрĕс палăртнă вариантсене кăтартăр.

1) *çанталăк уçă* (1-мĕш предложени);
2) *кунсен иртмен* (2-мĕш предложени);
3) *сивĕнсех çитеймен* (3-мĕш предложени);
4) *кунсем илемлĕ пек* (4-мĕш предложени);
5) *инçе-инçе курăнать* (5-мĕш предложени).

**Хуравĕ:** ___________________________

**3** ***Пунктуаци тишкерĕвĕ***

Чăрăну палли лартмалли вырăнсене кăтартакан цифрăсене çырăр.

*Ачасем шкул пахчине улмуççисем (1) чиепе (2) слива йывăççисем (3) хурлăханпа йĕплĕ çырла тĕмĕсем (4) пилешпе палан (5) тата çĕр çырли лартса хăварчĕç.*

**Хуравĕ:** ___________________________

**4** ***Синтаксис тишкерĕвĕ***

*Лаç çумĕнчи хурăнăн кăтра çулçисем* сăмах майлашăвĕн тĕп компонентне çырăр.

**Хуравĕ:** ___________________________

**5** ***Орфографи тишкерĕвĕ***

**Паллă тунă сăмахсене мĕнле çырнине тĕрĕс ăнлантарнă хурав варианчĕсен номерĕсене çырăр.**

1) ***мăкăль*** – çемçе сыпăкри хупă сасă çемçен илтĕнсен çемçелĕх палли çырмалла;

2) ***атте-анне*** – хутлă сăмахсене дефиспа çырмалла;
3) ***чăн çамрăк*** – *чăн* татăка паллă ятĕнчен уйрăм çырмалла;
4) ***кайрĕ-ши*** – *ши* союза дефиспа çырмала;
5) ***кайнă-çке*** – *-çке* татăка яланах дефиспа çырмалла.

**Хуравĕ:** ___________________________

**Текста вуласа тухăр та 6–9-мĕш ĕçсене тăвăр.**

(1)Хĕвеллĕ кун, пĕтĕм тавралăх юмахри пек асамлă вăхăтра, хĕллехи вăрманпа пыма питĕ кăмăллă. (2)Ура айĕнче юр кĕвĕллĕн кăчăр кăчăртатать – санпа тем çинчен пуплет тейĕн. (3)Асамлă вăрман вăрттăнлăхне уçса парасшăн пулĕ. (4)Юр чĕлхине ăнланма хĕн: ун кĕвви çын кăмăлĕпе килĕшӳллĕ пулсан чуна ырă. (5)Чун вырăнта пулмасан – çав кăчăртату та тăвăнтарать.

(6)Исментей Иванович Мулендеевăн чунĕ тăвăнмасть: сăлтавĕ çук. (7)Ар çын сарлакан пусса утать. (8)Исментей Иванович тĕрлĕ йывăç ӳсекен çакăнти вырăна хĕрĕх çула яхăн пĕлет ĕнтĕ. (9)Акă куç умĕнчех кĕмĕл пĕрчи йăлтăртатса илет: турат çинчен пас татăлса аннă-мĕн. (10)Ăна хĕвел пайăрки çиçтерсе илсе илем парать. (11)Çывăхрах так-так! так-такăр! янăраса каять. (12)Вăрман тусĕ ула такка хăй ĕçне питĕ тимлĕн тăрăшса тăвать.

(13)Кĕрт тарăн çав кăçал. (14)Пăшисем, апат шыраса çӳрекенскерсем, юр ашса иртнĕ – ăвăслăха кайнă ĕнтĕ. (15)Юратса çиеççĕ вĕсем çамрăк ăвăс тураттисене. (16)Пăшисем валли ятарласа хатĕрленĕ «столовăй» та пур. (17)Унпа çеç çырлахаççĕ-и мăнаçлă чĕр чунсем? (18)Хайсен те тăрăшас пулать: çут çанталăк йĕрки çапла.

(19)Пĕлтĕр пакшасене тытма чарнăччĕ те – кăçал вĕсен йышĕ ӳснĕ. (20)Авă чăрăш турачĕсем шурă юр çинче выртаççĕ: ирхи апат туса кайнă ĕнтĕ пакшасем. (21)Апат хыççăн çапла тăкса хăварас йăли пур çав пакша таврашĕн. (22)Хуначчăрах.

(23)Çыннăн йывăç-курăка, ӳсен-тăрана, чĕр чунсене хунаттарма, ĕрчетме тăрăшмалла. (24)Тепĕр чух манса каятпăр çав: акман-туман, лартман-ӳстермен – касатпăр, вататпăр, чĕррине перетпĕр, тытатпăр.

(25)Çут çанталăка упрасси – кашнин тивĕçĕ. (*Г. Ефимов**.)

****Георгий Ефимов** (1928–2005) – чăвашсен паллă çыравçи, Чăваш Республикин халăх поэчĕ.*



**6** *Текст содержанийĕн тишкерĕвĕ*

**Текст содержанийĕпе хăш предложенисем тӳр килеççĕ?**

1) Исментей Иванович тĕрлĕ йывăç ӳсекен çакăнти вырăна çирĕм çула яхăн пĕлет ĕнтĕ.
2) Вăрман тусĕ ула такка хăй ĕçне питĕ тимлĕн тăрăшса тăвать.
3) Пăшисем çамрăк юман тураттисене юратса çиеççĕ.
4) Пĕлтĕр пакшасене тытма чарчĕç те, кăçал вĕсен йышĕ самаях ӳсрĕ.
5) Пакшасем апатланса кайни хурама турачĕсем шурă юр çинче выртнинчен паллă.

**Хуравĕ:** ___________________________

**7** *Илемлĕх мелĕсене тишкерни*

**Эпитетлă предложенисен номерĕсене кăтартăр.**

(1) Исментей Иванович Мулендеевăн чунĕ тăвăнмасть: сăлтавĕ çук.
(2) Асамлă вăрман вăрттăнлăхне уçса парасшăн пулĕ.
(3) Пĕлтĕр пакшасене тытма чарнăччĕ те – кăçал вĕсен йышĕ ӳснĕ.
(4) Апат хыççăн çапла тăкса хăварас йăла пур çав пакша таврашĕн.
(5) Çыннăн йывăç-курăка, ӳсен-тăрана, чĕр чунсене хунаттарма, ĕрчетме тăрăшмалла.

**Хуравĕ:** ___________________________

**8** *Лексика тишкерĕвĕ*

*Йĕрки* сăмахăн (18-мĕш предложени) синонимне текстра тупса çырăр.

**Хуравĕ:** ___________________________

**2–8-мĕш ĕçсен хуравĕсене хурав бланкне куçарса çырма ан манăр. Кашни ĕçĕн хуравĕ тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнине тепĕр хут пăхса тухăр.**

### 3-мĕш пай

**2-мĕш пайра вуланă текстпа усă курса 9.1, 9.2 е 9.3 ĕçсенчен пĕрне тăвăр. Хайлав çырас умĕн суйласа илнĕ ĕçĕн номерне палăртăр: 9.1, 9.2 е 9.3.**

**9.1. «Çут çанталăк шăпи пирĕн алăра»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.

Хăвăр шухăшăра икĕ аргументпа ĕнентерĕр: пĕр аргументне итленĕ текстран, теприне вуланă текстран илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**9.2.** Вуланă текстра палăртнă **«Çут çанталăка упрасси – кашнин тивĕçĕ»** шухăша уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.

Хăвăр шухăшăра вуланă текстри икĕ аргументпа ĕнентерĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**9.3.** ***Çут çанталăк управçи*** ăнлава эсир мĕнле ăнланатăр? Хăвăр панă определение уçса парăр. **«Кам-ши вăл çут çанталăк управçи?»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр.

Тезис вырăнне хăвăр панă определенипе усă курăр. Тезиса аргументлама икĕ аргумент тĕслĕхпе усă курăр: пĕр аргументне вуланă текстран, теприне хăвăр пурнăçăр опычĕнчен илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**Кашни ĕçĕн хуравĕ тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнине тепĕр хут пăхса тухăр.**



## *4-мĕш вариант*

### 1-мĕш пай

***Текста тимлĕ итлĕр те ăна çывăх изложени çырăр.***

Темле те каяççĕ вăрмана: пăчкă-пуртăпа та, пăшалпа та. Эх, кĕрлет те вăрман! Йывăç хыççăн йывăç ӳксе ахлатать. Тем чухлĕ кайăк, пурнас чĕр чун вăхăтсăр пĕтет. Мĕн тăвăн? Кирлĕ теççĕ. Çапли çаплах пуль те, илеме пĕтернине, тавралăха чухăнлатнине курма питĕ йывăр.

Çав хушăрах карçинккапа çеç вăрмана каякана чун çав тери кăмăллать. Йывăçа та, тискер кайăка та пĕтермест, сăтăр тумасть вăл, кăмпа татать çеç. Вăрмана кăмпаçă çулла е кĕркунне тин мар, çуркунне юр ирĕлсе пĕтнĕ-пĕтменех утма тытăнать. Юр ӳкмесĕр е çĕр шăнтмасăр кайма пăрахмасть. Мĕн кирлĕ ăна? Кăмпа кăна-и? Çук, вăл кăмпашăн ытлах çунмасть. Çӳрессе те васкамасăр, ăпкăн çӳрет, унталла-кунталла пăхса чарăнса тăркалать, итлет, тинкерет. Тăван тавралăха чунтан юратать, унпа киленет. Чи хакли çыншăн – илемлĕх.

«Çут çанталăка сăнани искусствăран ытларах хавхалантарать», – тенĕ П.И. Чайковский. Çут çанталăка чăннипех юратакансем май килсен кирек хăçан та е уй-хирте пулма, е шыв хĕррине кайса ларма, е вăрмана çитсе пăхма ăнтăлаççĕ. Курса савăнмалли тăван кĕтесĕн, чăн та, питĕ нумай. Уйрăмах вăрман илемлĕ. Çуркунне те, çулла та – кирек хăш вăхăтра та. Çакна çут çанталăкăн чăн-чăн тусĕ çеç ç ăнланма пултарать. (*Г. Орлов.*)

**Изложени тексчĕн микротемисем**

| Абзац номерĕ | Микротема |
|---|---|
| 1 | Вăрмана пăчкă-пуртăпа, пăшалпа кайнине, çапла майпа илеме пĕтернине, тавралăха чухăнлатнине курма питĕ йывăр. |
| 2 | Кăмпаçăшăн, тăван тавралăха чунпа юратса унпа киленекеншĕн, чи хакли – илемлĕх. |
| 3 | Курса савăнмалли тăван кĕтесĕн кирек хăçан та питĕ нумай. |

## 2-мӗш пай

**2–8-мӗш ӗҫсен хуравӗ сӑмах (темиҫе сӑмах) е цифрӑсен йӗрки пулма пултарать.**

**2** ***Синтаксис тишкерӗвӗ***

Текста тӗплӗ, васкамасӑр вуласа тухӑр.

*(1)Каллех ылтӑн кӗркунне ҫитрӗ. (2)Ял ҫумӗнчи вӑрман ҫине пӑхӑр-ха. (3)Йывӑҫсем мӗн тери шукӑль тумланнӑ. (4)Ҫӑка ҫулсисем сап-сарӑ та тап-таса (5)Ҫулҫӑсем ҫинче пӗр хуранчӑк та ҫук.*

Предложенисен тӗп членӗсене тӗрӗс палӑртнӑ вариантсене кӑтартӑр.

1) *ылтӑн ҫитрӗ* (1-мӗш предложени);
2) *вӑрман ҫине пӑхӑр-ха* (2-мӗш предложени);
3) *йывӑҫсем тумланнӑ* (3-мӗш предложени);
4) *ҫулҫисем сап-сарӑ, тап-таса* (4-мӗш предложени);
5) *ҫулҫӑсем ҫук* (5-мӗш предложени).

**Хуравӗ:** ___________________________

**3** ***Пунктуаци тишкерӗвӗ***

Чарӑну палли лартмалли вырӑнсене кӑтартакан цифрӑсене ҫырӑр.

*Ура айӗнчи (1) типшӗрсе кушӑрканӑ (2) сарӑ (3) хӗрлӗ (4) хӑмӑр (5) ҫулҫӑсене чӑштӑртаттарса утатпӑр.*

**Хуравӗ:** ___________________________

**4** ***Синтаксис тишкерӗвӗ***

*9-мӗш класра вӗренекен ачан тӗрӗслев ӗҫӗ* сӑмах майлашӑвӗн тӗп компонентне ҫырӑр.

**Хуравӗ:** ___________________________

**5** ***Орфографи тишкерӗвӗ***

**Паллӑ тунӑ сӑмахсене мӗнле ҫырнине тӗрӗс ӑнлантарнӑ хурав вариантӗсен номерӗсене ҫырӑр.**

1) ***супӑньпе*** – *ь* паллӑпа вӗҫленекен сӑмах ҫумне хупӑ сасӑпа пуҫланакан аффикс хушӑнсан ҫемҫелӗх палли ҫырмалла;



2) ***ача-пӑча*** – хутлӑ сӑмахсене дефиспа ҫырмалла;
3) ***ан кай*** – *ан* татӑка глаголтан уйрӑм ҫырмалла;
4) ***вӗренӗттӗм*** – темиҫе иртнӗ вӑхӑтри глаголсенче 1-2-мӗш сӑпатсенче икӗ *т* ҫырмалла;
5) ***вӗрен-ха*** – *ха* татӑка яланах дефиспа ҫырмалла.

**Хуравӗ:** ___________________________

**Текста вуласа тухӑр та 6–9-мӗш ӗҫсене тӑвӑр.**

(1)Ҫут ҫанталӑка, вӑрмана, уй-хире савма мӗн пӗчӗкрен хӑнӑхтармалла. (2)Вӑрмантан эпир ҫеҫпӗл, лантӑш, ытти тӗрлӗ чечек татса килетпӗр. (3)Татнӑ чухне тымарӗ-мӗнӗпех тӑпӑлтаратпӑр. (4)Тунине вара татса илме пӗлейместпӗр-ҫке! (5)Чечек тымарне пӗр шелсӗррӗн пӑрахса ҫеҫ хӑваратпӑр. (6)Кайран вара: «Вӑрманта чечексем сахаллана пуҫларӗҫ», – тесе калаҫма тапрататпӑр. (7)Ку хамӑрӑн тимсӗрлӗхрен килет. (8)Кунта аслӑ, ҫулланнӑ ҫынсем, ашшӗ-амӑшӗ ачи-пӑчине вӑхӑтра ӑс парса вӗрентсен лайӑх. (9)«Вӑрманпа туслӑ ҫыннӑн ӗмӗрӗ вӑрӑм», – теҫҫӗ халӑхра. (10)Апла пулсан, ҫынни ҫеҫ мар, ҫыннӑн ӗмӗрӗ те ҫӗр-ҫӗр, пин-пин ҫула пырӗ. (11)Вӑрманӑн та, ҫыннӑн та пӗр-пӗринпе туслӑ пулмалла.

(12)Кӑмпана сахал ҫӳретпӗр-и эпир? (13)«Эй, мӗн вӑл кӑмпа?» – тейӗр эсир. (14)Апла калани тӗрӗс мар ҫав. (15)Кӑмпа вӑрмана аталанма пулӑшать, йывӑҫ тымарӗшӗн усӑллӑ япаласем кӑларать. (16)Вӑрманшӑн санитар пекех. (17)Ҫав хушӑрах эпир кӑмпа татнӑ чухне ӑна тымарӗ-мӗнӗпех тӑпӑлтаратпӑр. (18)Кӑмпа татма мӗншӗн кӗсье тӗпне пӗчӗк ҫӗҫӗ чиксе тухас мар-ха? (19)Пӗрре те йывӑр япала мар вӗт. (20)Вӑрман пире хӑйӗн пурлӑхне пӗр шеллемесӗр парать пулсан пирӗн вӑрмана юратма, упрама вӗренмелле. (21)Вӑрман, ҫут ҫанталӑк тусӗсем сахал мар пирӗн.

(22)Ҫут ҫанталӑк тусӗ тени – ырӑ ят. (23)Ӑна илтрӗмӗр пулсан – ӗмӗрлӗхех тавралӑх тусӗ пулар. (24)Вӑрманта усӑлса ҫӳреме юрататпӑр, кӑмпа-ҫырла пухатпӑр, усӑ сывлӑшпа киленетпӗр пулсан – киленнӗ, савӑннӑ чухне ҫеҫ мар, ҫут ҫанталӑка йывӑр чухне те унӑн тусӗ пулсах юлар. (*Г. Ефимов**.)

****Георгий Ефимов* *(1928 –2005) – чӑвашсен паллӑ ҫыравҫи, Чӑваш Республикин халӑх поэчӗ.*

**6** *Текст содержанийĕн тишкерĕвĕ*

**Текст содержанийĕпе хăш предложенисем тӳр килеççĕ?**

1) Вăрмантан эпир çеçпĕл, утмăл турат, ытти тĕрлĕ чечек татса килетпĕр.

2) Вăрманта чĕр чунсем сахаллана пуçлани çинчен калаçма тапрататпăр.

3) «Кайăкпа туслă çыннăн ĕмĕрĕ вăрăм», – теççĕ халăхра.

4) Çав хушăрах эпир кăмпа татнă чухне ăна тымарĕ-мĕнĕпех тăпăлтаратпăр.

5) Вăрман пире хăйĕн пурлăхне пĕр шеллемесĕр парать пулсан пирĕн вăрмана юратма, упрама вĕренмелле.

**Хуравĕ: ________________________**

**7** *Илемлĕх мелĕсене тишкерни*

**Танлаштаруллă предложенисен номерĕсене кăтартăр.**

(1) Вăрмантан эпир çеçпĕл, лантăш, ытти тĕрлĕ чечек татса килетпĕр.

(2) Чечек тымарне пĕр шелсĕррĕн пăрахса çеç хăваратпăр.

(3) Кунта аслă, çулланнă çынсем, ашшĕ-амăшĕ ачи-пăчине вăхăтра ăс парса вĕрентсен лайăх.

(4) Вăрманшăн санитар пекех.

(5) Çут çанталăк тусĕ тени – ырă ят.

**Хуравĕ: ________________________**

**8** *Лексика тишкерĕвĕ*

*Савма* сăмахăн (1-мĕш предложени) синонимне текстра тупса çырăр.

**Хуравĕ: ________________________**

**2–8-мĕш ĕçсен хуравĕсене хурав бланкне куçарса çырма ан манăр. Кашни ĕçĕн хуравĕ тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнине тепĕр хут пăхса тухăр.**



**3-мĕш пай**

**2-мĕш пайра вуланă текстпа усă курса 9.1, 9.2 е 9.3 ĕçсенчен пĕрне тăвăр. Хайлав çырас умĕн суйласа илнĕ ĕçĕн номерне палăртăр: 9.1, 9.2 е 9.3.**

**9.1. «Вăрман кирек хăçан та илемлĕ»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.

Хăвăр шухăшăра икĕ аргументпа ĕнентерĕр: пĕр аргументне итленĕ текстран, теприне вуланă текстран илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**9.2.** Вуланă текстра палăртнă **«Вăрманта усăлса çӳреме юрататпăр, кăмпа-çырла пухатпăр, усă сывлăшпа киленетпĕр пулсан – киленнĕ, савăннă чухне çеç мар, çут çанталăка йывăр чухне те унăн тусĕ пулсах юлар»** шухăша уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.

Хăвăр шухăшăра вуланă текстри икĕ аргументпа ĕнентерĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**9.3.** ***Çут çанталăк тусĕ*** ăнлава эсир мĕнле ăнланатăр? Хăвăр панă определение уçса парăр. **«Кам вăл çут çанталăк тусĕ?»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр.

Тезис вырăнне хăвăр панă определенипе усă курăр. Тезиса аргументлама икĕ аргумент тĕслĕхпе усă курăр: пĕр аргументне вуланă текстран, теприне хăвăр пурнăçăр опытĕнчен илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**Кашни ĕçĕн хуравĕ тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнине тепĕр хут пăхса тухăр.**

## *5-мӗш вариант*

### 1-мӗш пай

***Текста тимлӗ итлӗр те ӑна ҫывӑх изложени ҫырӑр.***

Кирук кукамӑшӗсем патӗнчен тухнӑ чухнех хӗвел анас патне ҫитнӗччӗ. Ача килнелле хӑвӑрт утрӗ. Тӗттӗмленсе лариччен яла ҫитме тӑрӑшрӗ. Ҫурма ҫулта Кирук пӗр пысӑк кайӑк вӗҫнине асӑрхарӗ. Вӑл пӗр самант Кирук тавра ҫаврӑнкаласа ҫӳрерӗ, унтан тӑруках, тем асӑрханӑ пек, ҫӗре персе анчӗ.

Кирук ҫултан пӑрӑнчӗ те кайӑк персе аннӑ ҫӗрелле, люцерна ани ҫине, чупрӗ. Кайӑк сарлака ҫуначӗсене лаш-лаш силлесе тепре вӗҫсе ҫӗкленчӗ. Ҫав вӑхӑтра сурӑх макӑрса яни илтӗнчӗ. Кирук лайӑххах пӑхрӗ те ҫав сӑрӑ кайӑк хыҫҫӑн шурӑ сурӑх чупса пынине курах кайрӗ. Кайӑк сурӑхран пӑрӑнса пӗчӗк путеке ҫӗклесе тарма тӑрӑшать. Кӗтмен ҫӗртен пырса тухнӑ ачаран кайӑк хӑрарӗ, ҫунатне ҫине-ҫине сулларӗ, аялаллах анса пычӗ. Чӗрнисемпе пӑталаса тытнӑ хура путек халь ҫӗре перӗнес пек суллануть. Кирук ҫывӑхах чупса ҫитрӗ. Ача хытӑран та хытӑ кӑшкӑрса чупнине кура караппӑл пӗчӗк путеке пӑрахса вӗҫсе кайрӗ.

Кирук хыҫҫӑн сурӑх та чупса пычӗ. Вӑл хӑйӗн кӑтра путекне шӑршларӗ, макӑрса ячӗ, ҫуларӗ. Кирук путек умне чӗркуҫленсе ларсан сурӑх ҫулама чарӑнчӗ те айккинелле чупса кайрӗ. Кирук сумкинчен кучченеҫ ҫыхнӑ тутӑра кӑларса илчӗ те путеке чӗркерӗ. Вара хуллен кӑна йӑтса хӑлхи патне ҫывхартрӗ. «Сывлать! Чӗрӗ!» – терӗ ача. Вара сумкипе путеке йӑтса сурӑх чупса кайнӑ еннелле васкарӗ. Инҫех каймарӗ, паҫӑрхи пысӑк сурӑха курчӗ. Ун ҫумӗнче тепӗр путек тӑрать. Кирук аманнӑ путеке йӑтса ял еннелле утрӗ. Путеккине ертсе сурӑх ача хыҫҫӑн хуллен пычӗ. *(В. Ухли.)*

**Изложени тексчӗн микротемисем**

| Абзац номерӗ | Микротема |
|---|---|
| 1 | Кирук кукамӑшӗсем патӗнчен килнелле утнӑ чух пӗр пысӑк кайӑк люцерна ани ҫине персе аннине асӑрхарӗ. |
| 2 | Путек йӑтса ҫӗкленнӗ караппӑл кӗтмен ҫӗртен пырса тухнӑ Кирукран хӑрарӗ, путеке пӑрахса вӗҫсе кайрӗ. |
| 3 | Кирук кучченеҫ ҫыхнӑ тутӑрпа аманнӑ путеке чӗркерӗ, ӑна йӑтса ял еннелле утрӗ, сурӑхӗ тепӗр путеккине ертсе хӑтаруҫӑ хыҫҫӑн пычӗ. |



### 2-мӗш пай

**2–8-мӗш ӗҫсен хуравӗ сӑмах (темиҫе сӑмах) е цифрӑсен йӗрки пулма пултарать.**

**2** ***Синтаксис тишкерӗвӗ***

Текста тӗплӗ, васкамасӑр вуласа тухӑр.

*(1)Манӑн асаттепе асанне ялта пурӑнаҫҫӗ. (2)Вӗсен ялӗ Ҫавал шывӗ хӗрринче вырнаҫнӑ. (3)Тӗлӗнмелле илемлӗ вырӑнсем пур унта. (4)Йӗри-тавра вӑрман ешерет. (5)Ҫуркунне ял шапшурӑ пӗркенчӗк тӑхӑннӑ евӗр туйӑнать.*

Предложенисен тӗп членӗсене тӗрӗс палӑртнӑ вариантсене кӑтартӑр.

1) *асаттепе асанне пурӑнаҫҫӗ* (1-мӗш предложени);
2) *Ҫавал вырнаҫнӑ* (2-мӗш предложени);
3) *вырӑнсем пур* (3-мӗш предложени);
4) *йӗри-тавра ешерет* (4-мӗш предложени);
5) *пӗркенчӗк тӑхӑннӑ* (5-мӗш предложени).

**Хуравӗ:** ___________________________

**3** ***Пунктуаци тишкерӗвӗ***

Чарӑну палли лартмалли вырӑнсене кӑтартакан цифрӑсене ҫырӑр.

*Ҫил-тӑвӑл (1) пахчана (2) хӳтӗ вырӑнсене (3) тем пысӑкӑш (4) кӗрт-сӑрт (5) купаласа тултарать.*

**Хуравӗ:** ___________________________

**4** ***Синтаксис тишкерӗвӗ***

*Нарӑс уйӑхӗн ҫил-тӑманлӑ каҫӗсем* сӑмах майлашӑвӗн тӗп компонентне ҫырӑр.

**Хуравӗ:** ___________________________

**5** *Орфографи тишкерĕвĕ*

**Паллă тунă сăмахсене мĕнле çырнине тĕрĕс ăнлантарнă хурав варианчĕсен номерĕсене çырăр.**

1) ***пĕлĕт*** – çемçе сыпăкри хупă сасă çемçен илтĕнсен çемçелĕх палли çырмалла мар;

2) ***чун-чĕре*** **–** хутлă сăмахсене дефиспа çырмалла;

3) ***чи типтерлĕ*** – *чи* татăка паллă ятĕнчен уйрăм çырмалла;

4) ***вĕренĕттĕм*** – темиçе иртнĕ вăхăтри глаголсенче 1-2-мĕш сăпатсенче икĕ *т* çырмалла;

5) ***кайрĕ-ши*** **–** *ши* хыç сăмаха яланах дефиспа çырмалла.

**Хуравĕ:** ___________________________

**Текста вуласа тухăр та 6–9-мĕш ĕçсене тăвăр.**

(1)Ăçта-ши халĕ шавлă кĕтÿллĕ улăх-çаран, пулăпа кĕшĕлтетекен пĕчĕк кÿлĕсемпе çырмасем? (2)Авă сулахай енче шыв айне пулнă йывăç çеç юлашки вăйне пухса этемрен çăлăнăç кĕтсе макăрать. (3)Чечеклĕ çаран вырăнне хăйăр-чул, тимĕр-тăмăр пăрахса тултарнă. (4)Патвар юмансемпе ачаш хурăнсем вырăнне пĕлĕтелле пуçĕсене касăртнă тăрна пек крансем йышăннă. (5)Сивĕ, çанталăк ăшă пулин те чуна сивĕ.

(6)Халь Атăл та хăй патне малтанхилле туртмасть ĕнтĕ. (7)Пирĕнтен сивĕннĕ, хурланса пĕр сассăр йĕрет. (8)Эх, этем, этем! (9)Хăçан ăса кĕрсе çитĕн-ши эсĕ? (10)Çут çанталăкăн вăрттăн пурнăçри тымарне хăçан хăртма пăрахăн-ши? (11)Тымарсăр юман йĕкел паманнине лайăх пĕлетĕн-çке! (12)Кам ирĕк панă сана хăвна ачашлакан, тăрантаракан, пурнăç паракан тавралăх çине сурма, ăна вĕлермеллех суранлатма? (13)Тепĕр чухне эсĕ тăван тавралăха, Тăван çĕр-шыва анне тесе хаклатăн, анчах вилмелле амантнă çут çанталăк санăн, хăйне вĕлерекенĕн, амăшĕ пуласшăн мар. (14)Çакна ăнланса илейĕн-ши эсĕ?

(15)Тавралăха тĕп туса пĕтереймен-ха эсĕ, хальтерех ăса кĕрсен хăвăн йăнăшусене те тÿрлетме пултаратăн. *(Н. Симунов*.)*

*****Николай Симунов*** *(1937–1997) – чăвашсен паллă çыравçи.*



**6** *Текст содержанийĕн тишкерĕвĕ*

**Текст содержанийĕпе хăш предложенисем тÿр килеççĕ?**

1) Шыв айне пулнă йывăç çеç юлашки вăйне пухса этемрен çăлăнăç кĕтсе макăрать.

2) Чечеклĕ çаран вырăнне хăйăр-чул, тимĕр-тăмăр пăрахса тултарнă.

3) Патвар юмансемпе ачаш хурăнсем вырăнне темиçе хутлă çуртсем йышăннă.

4) Атăл кашни кун мана ĕлĕкхиллех хăй патне туртать, илемĕпе илĕртет.

5) Çут çанталăка пулăшас тесе этем ырми-канми тăрăшать, йывăç-курăк лартать.

**Хуравĕ:** ___________________________

**7** *Илемлĕх мелĕсене тишкерни*

**Танлаштарулла предложенисен номерĕсене кăтартăр.**

(1) Авă сулахай енче шыв айне пулнă йывăç çеç юлашки вăйне пухса этемрен çăлăнăç кĕтсе макăрать.

(2) Пирĕнтен сивĕннĕ вăл, хурланса пĕр сассăр йĕрет.

(3) Патвар юмансемпе ачаш хурăнсем вырăнне пĕлĕтелле пуçĕсене касăртнă тăрна пек крансем йышăннă.

(4) Сивĕ, çанталăк ăшă пулин те чуна сивĕ.

(5) Тавралăха тĕп туса пĕтереймен-ха эсĕ, хальтерех ăса кĕрсен хăвăн йăнăшусене те тÿрлетме пултаратăн

**Хуравĕ:** ___________________________

**8** *Лексика тишкерĕвĕ*

*Макăрать* сăмахăн (2-мĕш предложени) синонимне текстра тупса çырăр.

**Хуравĕ:** ___________________________

**2–8-мĕш ĕçсен хуравĕсене хурав бланкне куçарса çырма ан манăр. Кашни ĕçĕн хуравĕ тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнине тепĕр хут пăхса тухăр.**

### 3-мĕш пай

***Итленĕ тата вуланă текстсемпе усă курса 9.1, 9.2 е 9.3 ĕçсенчен пĕрне пурнăçлăр. Хайлав çырас умĕн суйласа илнĕ ĕçĕн номерне палăртăр: 9.1, 9.2 е 9.3.***

**9.1. «Çут çанталăк тусĕ пулар»** темăпа калăпăшĕпе пысăкках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.

Хăвăр шухăшăра икĕ аргументпа ĕнентерĕр: пĕр аргументне итленĕ текстран, теприне вуланă текстран илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерÿ мелĕсемпе (кÿртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**9.2.** Вуланă текстра палăртнă **«Тавралăха тĕп туса пĕтерейменах эсĕ, хальтерех ăса кĕрсен хăвăн йăнăшусене те тÿрлетме пултаратăн»** шухăша уçса парса калăпăшĕпе пысăкках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.

Хăвăр шухăшăра вуланă текстри икĕ аргументпа ĕнентерĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерÿ мелĕсемпе (кÿртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**9.3.** ***Çут çанталăк сăтăрçи*** ăнлава Эсир мĕнле ăнланатăр? Хăвăр панă определение уçса парăр. **«Кам вăл çут çанталăк сăтăрçи?»** темăпа калăпăшĕпе пысăкках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр.

Тезис вырăнне хăвăр панă определенипе усă курăр. Тезиса аргументлама икĕ аргумент тĕслĕхпе усă курăр: пĕр аргументне вуланă текстран, теприне хăвăр пурнăçăр опытĕнчен илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерÿ мелĕсемпе (кÿртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**Кашни ĕçĕн хуравĕ тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнине тепĕр хут пăхса тухăр.**



### *6-мĕш вариант*

### 1-мĕш пай

***Текста тимлĕ итлĕр те ăна çывăх изложени çырăр.***

Çĕмĕртлĕ çарантан ĕнисене суса киле таврăнать Ульяна Павловна. Аванах-мĕн улăх тăрăх уçă сывлăш сывласа утма! Пĕтĕм хуйхă-суйхă таçта кайса кĕрет. Чун хĕвел шевлин çиппи тăрăх тÿпенелле çĕкленет. Çÿлтен тăван тавралăх çине пăхатăн та ăна хăвăн ытамна илме тăрăшатăн. Тулли ытампа каялла çĕр çине анатăн. Хăватлă вăл – çĕр анне! Вăл тырă-пулă çитĕнтерет, çынна çăкăрлă, аш-пăшлă тăвать. Çĕре хисеплемесен, чунна парса пăхмасан, ачашламасан, тирпейлемесен хăвăрт ватăлма пулать. Пăхăр-ха эсир çĕрĕн сăн-пичĕ çине: мĕн чухлĕ йĕр, çырма унта?! Ку вăл – çĕр аннемĕр асапĕ!

Улăх тăрăх çил касси чупса иртет те, ту сĕвеклĕхĕнче çамрăк йăмрасемпе хурăн турачĕсем хумханса илеççĕ, çулçисем чашлама тытăнаççĕ. Юрататъ Улянь аппа çак вырăна. Кунта унăн ачалăхĕн пĕр пайĕ юлнă. Çак вырăнта Уляньсен купăста пахчиччĕ. Купăстисене Улянь ашшĕ Çĕрпÿ пасарĕнчен илсе килнĕ витресемпе шыв сапатчĕ. Ку тĕлте ту айĕнчен çăл тухать. Леререх пĕр пысăк йăмра ÿсетчĕ. Ăна вăрçă вăхăтĕнче такам вутлăх касса кайнă. Йăмрана кассан çăл вăйсăрланма пуçланăччĕ. «Йывăç пĕтсен – шыв таратъ», – тетчĕ Улянь ашшĕ.

Çак çăл патне Улянь икĕ йăмра турачĕ килсе чикрĕ. Ăшĕнче хăй: «Икĕ ывăл ячĕпе пултăр… Вĕсем вăрăм ĕмĕрлĕ пулсан – йăмрасем чĕрĕлччĕр», – терĕ. Тин çеç иртсе кайнă вăрçă асапĕпе нуши пулнă ĕнтĕ хĕрарăм асĕнче. Чĕрĕлчĕç йăмрасем. Савăнчĕ Улянь. Хĕр çуралсан вара йăмрасен çывăхне хурăн килсе лартрĕ. Вăл та чĕрĕлчĕ. Апла, хĕрĕ те пурнăçлă. Геннадий ячĕпе те йăмра ÿсет ав. Çăл тепĕр хут шăнкăртатма тапратрĕ! Йывăçсем патне шыв килчĕ! *(Г. Ефимов.)*

**Изложени тексчĕн микротемисем**

| **Абзац номерĕ** | **Микротема** |
|---|---|
| **1** | Ĕнисене суса киле таврăнакан Улянь тырă-пулă çитĕнтерекен çĕр анне хăйне пăхмасан хăвăрт ватăлма пултарни çинчен шухăшлать. |

| | |
|---|---|
| 2 | Улянь ачалăхри ÿкерчĕке куç умне кăларать: купăста пахчи, ту айĕнчи çăл, çăл çывăхĕнчи йăмра, вăрçă вăхăтĕнче йăмрана такам кассан çăл вăйсăрланни. |
| 3 | Каснă йăмра вырăнне Ульян йăмрасемпе хурăн лартсан çăл тепĕр хут шăнкăртатма пуçлать. |

## 2-мĕш пай

**2–8-мĕш ĕçсен хуравĕ сăмах (темиçе сăмах) е цифрăсен йĕрки пулма пултарать.**

**2** ***Синтаксис тишкерĕвĕ***

Текста тĕплĕ, васкамасăр вуласа тухăр.

*(1)Эпĕ пăшипе юнашар тăратăп. (2)Пĕр сасă та илтĕнмест. (3)Кăкăрта чĕрем хыттăн-хыттăн тапать. (4)Куçăм пăши чĕрнисем хушшинчи сарăхма пуçланă курăка çеç курать. (5)Мăшăр лĕпĕш пăшиури патĕнче çаврăнчĕ-çаврăнчĕ те куçран çухалчĕ.*

Предложенисен тĕп членĕсене тĕрĕс палăртнă вариантсене кăтартăр.

1) *эпĕ тăратăп* (1-мĕш предложени);
2) *сасă илтĕнмест* (2-мĕш предложени);
3) *кăкăрта тапать* (3-мĕш предложени);
4) *курăка курать* (4-мĕш предложени);
5) *пăши çухалчĕ* (5-мĕш предложени).

**Хуравĕ: ___________________________**

**3** ***Пунктуаци тишкерĕвĕ***

Чарăну палли лартмалли вырăнсене кăтартакан цифрăсене çырăр.

*Чуна тасалăхпа та (1) тÿрĕлĕхпе (2) сăпайлăхпа та сапăрлăхпа (3) маттурлăхпа та (4) антраманлăхпа (5) лăпкăлăхпа та ачашлăхпа (6) тата сăваплăхпа (7) пуянлатнăшăн тав тăватăп.*

**Хуравĕ: ___________________________**



**4** ***Синтаксис тишкерĕвĕ***

*Çут çанталăкăн сиплĕхлĕ сывлăшĕ* сăмах майлашăвĕн тĕп компонентне çырăр.

**Хуравĕ: ___________________________**

**5** ***Орфографи тишкерĕвĕ***

**Паллă тунă сăмахсене мĕнле çырнине тĕрĕс ăнлантарнă хурав варианчĕсен номерĕсене çырăр.**

1) ***кукăлье*** – *ь* паллăпа вĕçленекен сăмах çумне уçă сасăпа пуçланакан аффикс хушăнсан çемçелĕх палли çырмалла;
2) ***йăла-йĕрке*** – хутлă сăмахсене дефиспа çырмалла;
3) ***чи ăнăçлă*** – *чи* татăка паллă ятĕнчен уйрăм çырмалла;
4) ***вĕçĕттĕм*** – ĕмĕт наклоненийĕнчи глаголсенче 1-2-мĕш сăпатсенче икĕ *т* çырмалла;
5) ***тăрăш-ха*** – *ха* междометие яланах дефиспа çырмалла.

**Хуравĕ: ___________________________**

**Текста вуласа тухăр та 6–9-мĕш ĕçсене тăвăр.**

(1)Ун чухне эпĕ çиччĕ-саккăрти ачаччĕ. (2)Аттепе пĕрле лашапа Шăхаль вăрманне кайсаттăмăр. (3)Çамрăк çăкалăх тĕлне çитсен чарăнтăмăр. (4)«Çăпата тума пушăт хатĕрлер-ха кăштах», – терĕ атте. (5)Çав вырăнта çăка нумайччĕ. (6)Тĕмĕн-тĕмĕн ÿсетчĕç. (7)Ал туйи хулăнăшшисем те, сенĕк аври пеккисем те, шертелĕх йышшисем те пурччĕ.

(8)Атте пĕр тĕмĕри çамрăк çăкана касма пуçларĕ, эпĕ – тепринчине. (9)Хам тĕме касса пĕтерес патнех çитнĕччĕ, тепĕр икĕ хунав кăна юлнăччĕ. (10)Сасартăк атте мана чĕнчĕ. (11) Ăна ăнланмасăр куçĕнчен чăл пăхрăм. (12)«Юлччăр, çĕнĕ хунавсем сарччăр, йышланччăр. Тĕппипех пĕтерер мар», – терĕ атте.

(13)Çапла эпир кашни тĕмрех икĕ вулăран кая мар хăварса пытăмăр. (14)Хамăра кирлĕ чухлĕ хатĕрлесен аттепе малалла кайрăмăр. (15)Юманлăха çитсен çĕре тăкăннă йĕкелсене пухма тытăнтăмăр.

(16)«Йĕкел сыснашăн усăллă, – ăнлантарчĕ атте, – ăна çисен вăл лайăх ÿсет, какайĕ таса та тутлă пулать». (17)Эпĕ хавхаланса

кайрăм. (18)Юмансем айĕнчи йĕкелсене пĕр хăварми шăлса пуçтарма пикентĕм. (19)Çакă каллех аттене темшĕн килĕшмерĕ. (20)«Йĕкелсене кăштах хăваркалас та пулать, – терĕ. – Ним юлмасан вăрманти чĕр чунсем мĕнле пурăнĕç, епле хĕл каçĕç? Йĕкелсемсĕр хунав та шăтса тухаймĕ». (21)Эпĕ атте каланă пек турăм...

(22)Çаксене аса илтĕм те, тăван халăхăн çут çанталăка упрас, хӳтĕлес ырă туйăмĕ, йăли-йĕрки куç умне тепĕр хут яр уççăн тухса тăчĕ.

(23)Чăвашăн юратнă йывăçĕ – йăмра. (24)Ăна урама капăрлатнипе пĕрлех вут-кăвартан та хӳтĕленме пулăшать тесе хакланă. (25) Мĕн авалтан çĕмĕрте те хисепленĕ. (26)Çак йывăç çуркунне шурă шупăр пĕркенсе пĕтĕм тавралăха илемлетнĕ. (27)Хĕллесенче вара çĕмĕртĕн типĕтнĕ çимĕçĕнчен хатĕрленĕ чейпе вар-хырăм чир-чĕрĕнчен сипленме усă курнă.

(28)Чăваш çынни тата яланах вĕçен кайăксен çывăх тусĕ пулнă. (29)Эпĕр пĕчĕк чух хам çуралнă Еншикре килсеренех шăнкăрч вĕлли туса çакаттăмăр. (30)Çуркуннепе çулласенче вара пӳрт-çурт тавра çунатлă туссем – кăвакарчăн, чĕкеç, шăнкăрч, пăрчăкан – ярăнса çеç çӳретчĕç. (31)Хăйсен кĕвви-çеммипе тавралăха янрататчĕç, çынсене килентеретчĕç.

(32)Шел те, халĕ эпĕ хамăр ене пырсан шăнкăрч вĕллисене те сайрарах куратăп. (33)Вĕçен кайăксен йышĕ те сахалланнă пек. (34)Йывăç-курăкĕпе те савăнмаллиех çук.

(35) Çут çанталăка хӳтĕлеме пĕтĕм халăхăн, çав шутра ачасен те, хастаррăн хутшăнмалла, ку ĕçри ламран лама куçса пыракан пархатарлă йăлине чăвашсен çĕнĕрен вăйлатса ямалла. *(Сантăр Аксар*.)*

***Сантăр Аксар** (1938 çулта çуралнă) – чăвашсен паллă çыравçи, филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ.*

**6** ***Текст содержанийĕн тишкерĕвĕ***

**Текст содержанийĕпе хăш предложенисем тӳр килеççĕ?**

1) Ашшĕпе ачи машинăпа Шăхаль вăрманне йывăç касма кайнă.

2) Çăпата тума пушăт хатĕрлес тесе çамрăк çăкалăх тĕлне çитсен ашшĕпе ачи чарăннă.



3) Ашшĕпе ывăлĕ кашни тĕмрех икĕ вулăран кая мар хăварса пынă.

4) Чăвашăн юратнă йывăçĕ – юман, вăл пушартан сыхланма пулăшать.

5) Хĕллесенче паланăн типĕтнĕ çимĕçĕнчен хатĕрленĕ чейпе вар-хырăм чир-чĕрĕнчен сипленме усă курнă.

**Хуравĕ: ___________________________**

**7** ***Илемлĕх мелĕсене тишкерни***

**Танлаштаруллă предложенисен номерĕсене кăтартăр.**

(1) Аттепе пĕрле лашапа Шăхаль вăрманне кайсаттăмăр.

(2) Çамрăк çăкалăх тĕлне çитсен чарăнтăмăр.

(3) Ал туйи хулăнăшшисем те, сенĕк аври пеккисем те, шертелĕх йышшисем те пурччĕ.

(4) Юманлăха çитсен çĕре тăканнă йĕкелсене пухма тытăнтăмăр.

(5) Чăваш çынни тата яланах вĕçен кайăксен çывăх тусĕ пулнă.

**Хуравĕ: ___________________________**

**8** ***Лексика тишкерĕвĕ***

*Хисепленĕ* (25-мĕш предложени) сăмахăн антонимне текстра тупса çырăр.

**Хуравĕ: ___________________________**

**2–8-мĕш ĕçсен хуравĕсене хурав бланкне куçарса çырма ан манăр. Кашни ĕçĕн хуравĕ тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнине тепĕр хут пăхса тухăр.**

**3-мĕш пай**

**2-мĕш пайра вуланă текстпа усă курса 9.1, 9.2 е 9.3 ĕçсенчен пĕрне тăвăр. Хайлав çырас умĕн суйласа илнĕ ĕçĕн номерне палăртăр: 9.1, 9.2 е 9.3.**

**9.1. «Çут çанталăк – тупра, эсĕ ăна упра»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.

Хăвăр шухăшăра икĕ аргументпа ĕнентерĕр: пĕр аргументне итленĕ текстран, теприне вуланă текстран илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**9.2.** Вуланă текстра палăртнă **«Çут çанталăка хӳтĕлеме пĕтĕм халăхăн, çав шутра ачасен те, хастаррăн хутшăнмалла, ку ĕçри ламран лама куçса пыракан пархатарлă йăлине чăвашсен çĕнĕрен вăйлатса ямалла»** шухăша уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.

Хăвăр шухăшăра вуланă текстри икĕ аргументпа ĕнентерĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**9.3. Ырă йăла-йĕрке** ăнлава эсир мĕнле ăнланатăр? Хăвăр панă определение уçса парăр. **«Мĕн вăл ырă йăла-йĕрке?»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр.

Тезис вырăнне хăвăр панă определенипе усă курăр. Тезиса аргументлама икĕ аргумент тĕслĕхпе усă курăр: пĕр аргументне вуланă текстран, теприне хăвăр пурнăçăр опытĕнчен илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**Кашни ĕçĕн хуравĕ тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнине тепĕр хут пăхса тухăр.**



### *7-мĕш вариант*

**1-мĕш пай**

***Текста тимлĕ итлĕр те ăна çывăх изложени çырăр.***

Пысăках марччĕ вăл. Хăй хитре сăн-питлĕ, хура куçлă-çӳçлĕ, анчах та никам та нихăçан та вăл кулнине курман. Çулпа илес пулсан та пĕр хĕрĕхсенчеччĕ-ши? Илтессе вăл пачах илтместчĕ, çав айăппах калаçмастчĕ. Унăн хăтланкаларăшĕсем айваннăн туйăннă ĕнтĕ пире, шухăшлама пĕлмен вĕт-шакăра: аллисемпе кăтартса тем ăнлантарма тăрăшни, çăварне вĕçĕмсĕр уçа-уçа хупни, илтейменнипе куçпа та пулин курас тенĕн, пуçне унталла-кунталла çавăркаласа вĕçĕмсĕр йĕри-тавралла пăхкалани… Çуллахи вăхăтра Чĕлхесĕр Иван пирĕн яла пырса та кĕместчĕ. Вăл ун чухне ăçта пулнă, мĕн ĕçленĕ – пĕлместпĕр. Хĕлле вара килĕрен киле çĕвĕ çĕлесе çӳретчĕ: паян пĕрисем патĕнче, вĕсен çĕвĕ ĕçĕ пĕтсен – теприсем патĕнче. Ялта Ивана мĕн те пулин çĕлеттермен кил юлман та пулĕ. Ăсталăх енчен вара такамран та ирттермелле тетчĕç ун пирки: аялтан тăхăнмалли кĕпе-йĕмрен пуçласа пальто таранах çĕлетчĕ. Ял халăхĕ Ивана паян кун та ырăпа асăнать.

Ачасем вара…хăратчĕç Иванран. Çав вăхăтрах чĕлхе кăтартса витлеме те юрататчĕç. Леш касри ачасем çухрашма, сурăхла мекеклетме те ĕнелле мĕкĕрме тапратсанах ку енчисем ăнланаттăмăр: яла Чĕлхесĕр Иван килнĕ. Унпа пĕрлех – хамăра майлă ухмахла уяв. (Урăх мĕнле сăмахпа палăртмалла-ха хамăр выльăхла хăтланнисене?) Чĕлхесĕр Иван урам тăрăх утать. Эпир ун хыççăн тĕпĕр-тĕпĕр чупатпăр, юр чăмăрккисемпе перетпĕр, кăшкăрашатпăр. Вăл çаврăнса тытам пекки тăвать те – эх, таратпăр вара килелле…

Пĕррехинче эпĕ Иван макăрнине куртăм. Ун чухне эпир, ашкăнчăк шăпăрлансем, Чĕлхесĕр Иван хыççăн тĕпĕртетсе пытăмăр. Пиртен тахăшĕ суя лакăм туса хунăччĕ. Чĕлхесĕр Иван, çакна пачах асăрхамансkер, тӳрех лакăма чăмрĕ. Эпир, айванскерсем, ахăлтатса кулатпăр. Эх, савăнăç! Çав каçхине вара, асаннесем патĕнчен таврăннă чухне, Евлампи аппасен çуменчи йăмра патĕнче Чĕлхесĕр Иван тăнине асăрхарăм. Макăратчĕ вăл. Урине шыва чиксе кăларнăшăн макăрать ĕнтĕ ку

тесе шутланăччĕ эпĕ ун чухне. Киле çитсен аннене каласа патăм. Вăл мана хулран тытрĕ те чылайччен куçран пăхса тăчĕ.

– Хĕрĕм, – терĕ вăл, – калаçма пĕлмест тесе макăрма та пĕлмест тетĕн-и эс ăна?! Çын çинчи – йывăç çинчи вăл. Ар çын макăрнине курнă ача тÿрех виçĕ çул аслăланать. Сана хăçан ăс кĕрĕ-ши? Ыр пурнăçранах çапла çÿремест ĕнтĕ Иван пиччÿ. *(Л. Мартьянова.)*

**Изложени тексчĕн микротемисем**

| Абзац номерĕ | Микротема |
|---|---|
| 1 | Чĕлхесĕр Иван çулла ялта курăнмастчĕ, хĕлле килĕрен киле çĕвĕ çĕлесе çÿретчĕ. Ăста пулнăран ял халăхĕ ăна паян кун та ырăпа асăнать. |
| 2 | Ачасем вара хăратчĕç те унран, çав вăхăтрах витлеме те юрататчĕç. |
| 3 | Чĕлхесĕр Иван ачасем тунă суя лакăма кĕрсе ÿкнĕ хыççăн каçхине йăмра патĕнче Чĕлхесĕр Иван макăрса тăнине асăрхарăм. |

**2-мĕш пай**

**2–8-мĕш ĕçсен хуравĕ сăмах (темиçе сăмах) е цифрăсен йĕрки пулма пултарать.**

**2** ***Синтаксис тишкерĕвĕ***

Текста тĕплĕ,васкамасăр вуласа тухăр.

*(1)Атте юпа уйăхĕн вĕçĕнче кăмпана кайрĕ. (2) Вăрмантан тĕлĕнмелле хăнапа – чĕрĕппе таврăнчĕ. (3) Ăна эпир хăмаран тунă ешчĕке вырăн туса патăмăр, апат çитерес терĕмĕр. (4)Чĕрĕп пирĕн апата çимерĕ. (5)Каçалапа йĕплĕ туса пĕчĕк карçинккана хутăмăр та вăрмана утрăмăр.*

Предложенисен тĕп членĕсене тĕрĕс палăртнă вариантсене кăтартăр.

1) *кăмпана кайрĕ* (1-мĕш предложени);
2) *таврăнчĕ* (2-мĕш предложени);
3) *вырăн туса патăмăр* (3-мĕш предложени);



4) *чĕрĕп çимерĕ* (4-мĕш предложени);
5) *каçалапа утрăмăр* (5-мĕш предложени).

**Хуравĕ: ___________________________**

**3** ***Пунктуаци тишкерĕвĕ***

Чарăну палли лартмалли вырăнсене кăтартакан цифрăсене çырăр.

*Çавна пула Илькка (1) темĕн чухлĕ сăвă-юрă пĕлетчĕ (2) хăй тĕллĕн (3) кулăшла такмаксем (4) шухăшласа кăларатчĕ (5) кунĕн-çĕрĕн халап-юмах каласа пама (6) пултаратчĕ.*

**Хуравĕ: ___________________________**

**4** ***Синтаксис тишкерĕвĕ***

*Тăван кĕтесĕн ытарайми хирĕсемпе шывĕсем* сăмах майлашăвĕн тĕп компонентне çырăр.

**Хуравĕ: ___________________________**

**5** ***Орфографи тишкерĕвĕ***

**Паллă тунă сăмахсене мĕнле çырнине тĕрĕс ăнлантарнă хурав вариантĕсен номерĕсене çырăр.**

1) ***кĕсье*** – чăваш сăмахĕсенче икĕ сасса пĕлтерекен *е* сас палли умĕн çемçелĕх палли çырмалла;
2) ***тĕттĕм кăвак*** – мăшăр сăмахсене дефиспа çырмалла;
3) ***чăн тĕрĕс*** *– чи* татăка паллă ятĕнчен уйрăм çырмалла;
4) ***вĕçеттĕм*** – ĕмĕт наклоненийĕнчи глаголсенче 1-2-мĕш сăпатсенче икĕ *т* çырмалла;
5) ***тăрăш-ха*** *– ха* хыç сăмаха яланах дефиспа çырмалла.

**Хуравĕ: ___________________________**

**Текста вуласа тухăр та 6–9-мĕш ĕçсене тăвăр.**

(1)Ырă çын пул. (2)Саккуна пăхăнса тăр.

(3)Ватă çынсене, хăвăнтан аслисене хисепле, тантăшусем умĕнче пуçна ан каçăрт, хăвăнтан кĕçĕннисене пурне те кăмăл ту. (4)Чиркÿ çыннисене, аçупа аннÿне, пуçлăхсене, ырă çынсене пурне те хисепле, вĕсен сăмахĕсенчен ан тух.

(5)Сана усал тума ҫуратман, ырӑ тума ҫуратнӑ! (6)Ӑна эсӗ нихӑҫан та ан ман. (7)Мӗн вӑй-хал ҫитнӗ таран ҫынсене ырӑ тума тӑрӑш. (8)Пуриншӗн те тӳрӗ пурӑн, пӗринпе те урлӑ-пирлӗ ан пул. (9)Усал ӗҫ тума мар, усал сӑмах та ан калаҫ.

(10)Ваттисем калаҫнӑ чух вӗсен сӑмахне ан пӳл, пӗр чӗнмесӗр итлесе тӑр. (11)Чиперех пӗлмен япала ҫинчен пӗлнӗ пек ан пупле – малтан тӗплӗ ыйтса пӗл.

(12)Япала курнине пӗрне те ан хапсӑн, ку манӑн пулинччӗ тесе ан шухӑшла. (13)Ҫынӑнне ан вӑрла, хӑвӑн мӗн пуррипе тутӑ пул. (14)Ҫынтан кивҫен илсессӗн вӑхӑтӗнче каялла пар. (15)Каланӑ сӑмаха тыт. (16)Нихӑҫан та ан суеҫтер.

(17)Наян ан пул – ӗҫчен пул, хастарлӑ пул. (18)Ҫук ҫынсене мӗн вӑй ҫитнӗ таран пулӑш.

(19)Ҫынпа хирӗҫ пулсассӑн ырӑ, ӑшӑ сӑмах кала. (20)Хӑвӑнтан ыйтакан ҫынна тӳррипе каласа пар. (21)Пӗлмен ҫынна вӗрент, хуйхӑллӑ ҫынна йӑпат.

(22)Ҫак каланӑ сӑмахсем тӑрӑх пурӑн. (23)Ырӑ ҫын пулсан санӑн пурнӑҫу та телейлӗ пулӗ: юлташусем, пӗлӗшӳсем пурте юратӗҫ, курайман тӑшманусем нимӗн те тӑваймӗҫ. *(И.Я. Яковлев*.)*

***Иван Яковлевич Яковлев** (1848–1930) – чӑвашсене ҫутта кӑлараканӗ.*

**6** *Текст содержанийӗн тишкерӗвӗ*

**Текст содержанийӗпе хӑш предложенисем тӳр килеҫҫӗ?**

1) Ватӑ ҫынсене, хӑвӑнтан кӗҫӗннисене хисепле.

2) Сана ырӑ тума ҫуратнӑ.

3) Ваттисем калаҫнӑ чух эсӗ те май килнӗ таран ытларах калаҫма тӑрӑш.

4) Ҫынӑнне ан вӑрла, кивҫен илсессӗн вӑхӑтӗнче каялла пар.

5) Ҫынпа хирӗҫ пулсассӑн сӑмах ан чӗн.

**Хуравӗ: ___________________________**

**7** *Илемлӗх мелӗсене тишкерни*

**Танлаштаруллӑ предложенисен номерӗсене кӑтартӑр.**

(1) Сана усал тума ҫуратман, ырӑ тума ҫуратнӑ!

(2) Пуриншӗн те тӳрӗ пурӑн, пӗринпе те урлӑ-пирлӗ ан пул.



(3) Чиперех пӗлмен япала ҫинчен пӗлнӗ пек ан пупле – малтан тӗплӗ ыйтса пӗл.

(4) Наян ан пул – ӗҫчен пул, хастарлӑ пул.

(5) Пӗлмен ҫынна вӗрент, хуйхӑллӑ ҫынна йӑпат.

**Хуравӗ: ___________________________**

**8** *Лексика тишкерӗвӗ*

*Усал* (9-мӗш предложени) сӑмахӑн антонимне текстра тупса ҫырӑр.

**Хуравӗ: ___________________________**

**2–8-мӗш ӗҫсен хуравӗсене хурав бланкне куҫарса ҫырма ан манӑр. Кашни ӗҫӗн хуравӗ тӗрӗс номерпе тӑнипе тӑманнине тепӗр хут пӑхса тухӑр.**

### 3-мӗш пай

**2-мӗш пайра вуланӑ текстпа усӑ курса 9.1, 9.2 е 9.3 ӗҫсенчен пӗрне тӑвӑр. Хайлав ҫырас умӗн суйласа илнӗ ӗҫӗн номерне палӑртӑр: 9.1, 9.2 е 9.3.**

**9.1. «Ырри усала ҫӗнтерет»** темӑпа калӑпӑшӗпе пысӑках мар (70 сӑмахран кая ан пултӑр) ӑслав хайлавӗ ҫырӑр. Тема пирки хӑвӑр мӗн шухӑшланине уҫса парӑр.

Хӑвӑр шухӑшӑра икӗ аргументпа ӗнентерӗр: пӗр аргументне итленӗ текстран, теприне вуланӑ текстран илӗр. Ҫакна тума ӑславӑн ӗнентерӳ мелӗсемпе (кӳртӗм сӑмахсемпе, ыйтупа хурав пӗрлӗхӗпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тӗллевпе услови, хирӗҫлев ҫыхӑнӑвне палӑртакан чӗлхе мелӗсемпе) сахалтан та икӗ хут усӑ курӑр.

**9.2.** Вуланӑ текстра палӑртнӑ **«Ырӑ ҫын пулсан санӑн пурнӑҫу та телейлӗ пулӗ: юлташусем, пӗлӗшӳсем пурте юратӗҫ, курайман тӑшманусем нимӗн те тӑваймӗҫ»** шухӑша уҫса парса калӑпӑшӗпе пысӑках мар (70 сӑмахран кая ан пултӑр) ӑслав хайлавӗ ҫырӑр. Тема пирки хӑвӑр мӗн шухӑшланине уҫса парӑр.

Хăвăр шухăшăра вуланă текстри икĕ аргументпа ĕнентерĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерÿ мелĕсемпе (кÿртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**9.3. Ыр кăмăллăх** ăнлава эсир мĕнле ăнланатăр? Хăвăр панă определение уçса парăр. **«Мĕн вăл ыр кăмăллăх?»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр.

Тезис вырăнне хăвăр панă определенипе усă курăр. Тезиса аргументлама икĕ аргумент тĕслĕхпе усă курăр: пĕр аргументне вуланă текстран, теприне хăвăр пурнăçăр опытĕнчен илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерÿ мелĕсемпе (кÿртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**Кашни ĕçĕн хуравĕ тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнине тепĕр хут пăхса тухăр.**

### *8-мĕш вариант*

#### 1-мĕш пай

***Текста тимлĕ итлĕр те ăна çывăх изложени çырăр.***

Ял пушанса юлчĕ. Ар çынсем пăч-пач кăна курăнкалаççĕ – ватăсем те вĕтĕсем. Пĕтĕм ĕç хĕрарăмсем, ват çынсемпе ачасем çине тиенчĕ. Колхоза ертсе пыма утмăл çултан иртнĕ Назар Егорча хушрĕç. Вăрçа кайнă икĕ бригадир вырăнне хĕрарăмсене суйларĕç. Лашасене пăхма та, çил арманĕнче ĕçлеме те, пушар хуралне те хĕрарăмсем тăчĕç. Ĕçлерĕ вара килте юлнă халăх, çĕрне-кунне пĕлмесĕр, ырми-канми ĕçлерĕ: тыррине те вырчĕ, авăн та çапрĕ, килес çул валли те акса хăварчĕ. Фронт валли те, килтисене çиме те …

Колхозра васкаса тумалли ĕçсем нумай пулнипе вĕренÿ те вăхăтра пуçланаймарĕ. Шкулта парта хушшинче ларас вырăнне амăшĕсемпе, аппăшĕсемпе пĕрле тырă вырчĕç, кĕлте турттарчĕç, авăн çапрĕç, темиçешер пăт туртакан михĕсене иккĕн-виççĕн



тытса лавсем çине тиерĕç…. Вăхăт çитсен кĕр аки турĕç. Ашшĕсем мĕн чухлĕ акнă, çавăн чухлех акса хăварчĕç. Унтан çĕр улми кăларма тытăнчĕç. Хĕр ачасем çум çумларĕç, колхоз пахчинче ĕçлерĕç, кантăр анисем çинче вăй хучĕç.

Аслисем ачасене явапла ĕçсем те шанса пачĕç. Вун ик – вун тăватă çулхи ачасем хăйсен ашшĕсемпе пиччĕшĕсем тăвас ĕçсене турĕç, тырă тиенĕ лавсене çĕр çывăрмасăр Шупашкара турттарчĕç. Ĕç вăхăтĕнче колхоз ясли уçрĕ те, хĕр ачасенчен хăшĕсем ача пăхакансем пулса тăчĕç. Мăннисем пурте уйра ĕçленĕ чух вĕт-шакăрсене хăйсем тĕллĕн мĕнле хăварăн-ха? Вĕсене вара аслăрах хĕр ачасем пăхрĕç. Чăнах та, вăрçă ачасенчен питĕ хăвăрт мăн çынсем туса хучĕ. (*Л. Агаков.*)

**Изложени тексчĕн микротемисем**

| Абзац номерĕ | Микротема |
|---|---|
| 1 | Ар çынсем вăрçа кайнă пирки пĕтĕм ĕç хĕрарăмсем, ват çынсемпе ачасем çине тиенчĕ. |
| 2 | Колхозра васкаса тумалли ĕçсем нумай пулнипе вĕренÿ те вăхăтра пуçланаймарĕ, ачасем аслисемпе пĕрле колхоз хирĕнче ĕçлерĕç. |
| 3 | Аслисем ачасене явапла ĕçсем те шанса пачĕç,вăрçă ачасенчен питĕ хăвăрт мăн çынсем туса хучĕ. |

#### 2-мĕш пай

**2–8-мĕш ĕçсен хуравĕ сăмах (темиçе сăмах) е цифрăсен йĕрки пулма пултарать.**

**2** ***Синтаксис тишкерĕвĕ***

Текста тĕплĕ, васкамасăр вуласа тухăр.

*(1)Юман нумай çул ÿсет. (2)Ăсчахсен шухăшĕпе, хăш-пĕр юман пин çул таран пурăнать. (3)Вăрманта юман çÿллĕ ÿсет, ирĕкре вара симĕс хытă çулçăсемпе витĕннĕ турачĕсене ытларах саратъ. (4)Çуркунне юман ытти йывăçсенчен каярах папка кăларать, кĕркунне каярах çулçине тăкать. (5)Выçлăх çулсенче юман йĕкелне типĕтсе авăртнă, çăнăх тунă.*

Предложенисен тĕп членĕсене тĕрĕс палăртнă вариантсене кăтартăр.

1) *юман ӳсет* (1-мĕш предложени);
2) *çул пурăнать* (2-мĕш предложени);
3) *турачĕсене сарать* (3-мĕш предложени);
4) *юман кăларать, тăкать* (4-мĕш предложени);
5) *юман авăртнă* (5-мĕш предложени).

**Хуравĕ:** ________________________

**3** ***Пунктуаци тишкерĕвĕ***

Чăрăну палли лартмалли вырăнсене кăтартакан цифрăсене çырăр.

*Васансемпе шырлансенче (1) çĕрĕпе шăнкăртатнă шыв сасси (2) çумне кайăк-кĕшĕк чĕвĕлтетни (3) выльăх-чĕрлĕх ĕнĕрлени (4) уçăлса хупăнакан алăк-хапха чĕриклетни (5) йытă вĕрни (6) автансем каçса кайса авăтни (7) çынсем çуйхашни (8) тата ытти çĕр тĕрлĕ сасă хушăнать.*

**Хуравĕ:** ________________________

**4** ***Синтаксис тишкерĕвĕ***

*Ял хĕрринчи çуртăн пысăк чӳречисем* сăмах майлашăвĕн тĕп компонентне çырăр.

**Хуравĕ:** ________________________

**5** ***Орфографи тишкерĕвĕ***

**Паллă тунă сăмахсене мĕнле çырнине тĕрĕс ăнлантарнă хурав варианчĕсен номерĕсене çырăр.**

1) ***супăнь*** – çемçе сыпăкри хупă сасă çемçен илтĕнсен çемçелĕх палли çырмалла;
2) ***уй-хир*** **–** мăшăр сăмахсене дефиспа çырмалла;
3) ***чи хитре*** – *чи* татăка паллă ятĕнчен уйрăм çырмалла;
4) ***каяттăм*** – ĕмĕт наклоненийĕнчи глаголсенче 1-2-мĕш сăпатсенче икĕ *т* çырмалла;
5) ***вула-ха*** – *ха* междометие яланах дефиспа çырмалла.

**Хуравĕ:** ________________________



**Текста вуласа тухăр та 6–9-мĕш ĕçсене тăвăр.**

(1)Вăрçă ... (2)Чылай çын пуçне çирĕ ылханлă вăрçă. (3)Униççепе пĕрле ӳснĕ, пĕрле вĕреннĕ-ĕмĕтленнĕ каччăсене те шеллемерĕ тискер вăрçă. (4)Тăхăр каччă тантăш, тăхăр мал ĕмĕтлĕ чĕре, тăхăр пулас упăшка, тăхăр пулас атте кил тĕлне тупаймарĕç. (5)Хăшĕ пĕтрĕ. (6)Хăшĕ çухалчĕ. (7)Çутă сăнарĕсем кăна тăрса юлчĕç халăхра телейсĕр ăмăрт кайăксен.

(8)Сантăр тантăшĕсенчен телейлĕрех пулчĕ. (9)Тĕнче вăрçин вут-çулăмĕнчен чĕррĕнех тухрĕ яш каччă. (10)Вăл та, Униççе пекех, вăрçă чарăннă-чарăнманах таврăнчĕ яла. (11)Сывах юлчĕ пулсан та вăрçăн тертне-асапне самаях тутанса пăхнă иккен Униççе тантăшĕ. (12)Хаяр тытăçу-çапăçура кăна мар, тăшман тыткăнĕнче çулталăка яхăнах асап тӳснĕ çамрăк каччă. (13)Тыткăнран тарма та, партизансем патне лексе фашистсене хаяррăн тавăрмашкăн та вăй-хал çитернĕ-мĕн каярахпа. (14)Унтан каллех – çар речĕ. (15)Каллех çапăçу, тытăçу. (16)Фашистсен тĕп хулине – Берлина штурмланă çĕре те хутшăннă Сантăр. (17)Унтах аманнă. (18)Ураран суранланнă. (19)Çар службинчен те çав сурана пулах хăтарнă-мĕн ăна…

(20)Вăрçă çухатусăр, терт-асапсăр пулмасть. *(В. Чебоксаров*.)*

****Владимир Чебоксаров** (1929–2010) – чăвашсен паллă çыравçи.*

**6** ***Текст содержанийĕн тишкерĕвĕ***

**Текст содержанийĕпе хăш предложенисем тӳр килеççĕ?**

1) Сантăр – Униççе тантăшĕ.
2) Униççепе пĕрле ӳснĕ ултă каччă вăрçăран киле таврăнаймарĕ.
3) Сантăр вăрçă чарăннă-чарăнманах киле таврăнчĕ.
4) Сантăр вăрçăра урине амантнă.
5) Униççе Берлина штурмланă çĕре хутшăннă.

**Хуравĕ:** ________________________

**7** ***Илемлĕх мелĕсене тишкерни***

**Эпитетлă предложенисен номерĕсене кăтартăр.**

(1) Чылай çын пуçне çирĕ ылханлă вăрçă.

(2) Униççепе пĕрле ӳснĕ, пĕрле вĕреннĕ-ĕмĕтленнĕ каччăсене те шеллемерĕ тискер вăрçă.

(3) Сантăр тантăшĕсенчен телейлĕрех пулчĕ.

(4) Вăл та, Униççе пекех, вăрçă чарăннă-чарăнманах таврăнчĕ яла.

(5) Фашистсен тĕп хулине – Берлина штурмланă çĕре те хутшăннă Сантăр.

**Хуравĕ: ___________________________**

**8** ***Лексика тишкерĕвĕ***

*Яш* сăмахăн (9-мĕш предложени) синонимне текстра тупса çырăр.

**Хуравĕ: ___________________________**

**2–8-мĕш ĕçсен хуравĕсене хурав бланкне куçарса çырма ан манăр. Кашни ĕçĕн хуравĕ тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнине тепĕр хут пăхса тухăр.**

**3-мĕш пай**

**2-мĕш пайра вуланă текстпа усă курса 9.1, 9.2 е 9.3 ĕçсенчен пĕрне тăвăр. Хайлав çырас умĕн суйласа илнĕ ĕçĕн номерне палăртăр: 9.1, 9.2 е 9.3.**

**9.1. «Вăрçă ан пултăр нихăçан»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.

Хăвăр шухăшăра икĕ аргументпа ĕнентерĕр: пĕр аргументне итленĕ текстран, теприне вуланă текстран илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**9.2.** Вуланă текстра палăртнă **«Вăрçă çухатусăр, терт-асапсăр пулмасть»** шухăша уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.



Хăвăр шухăшăра вуланă текстри икĕ аргументпа ĕнентерĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**9.3. Вăрçă** ăнлава эсир мĕнле ăнланатăр? Хăвăр панă определение уçса парăр. **«Мĕн вăл вăрçă?»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр.

Тезис вырăнне хăвăр панă определенипе усă курăр. Тезиса аргументлама икĕ аргумент тĕслĕхпе усă курăр: пĕр аргументне вуланă текстран, теприне хăвăр пурнăçăр опытĕнчен илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**Кашни ĕçĕн хуравĕ тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнине тепĕр хут пăхса тухăр.**

## *9-мĕш вариант*

### 1-мĕш пай

***Текста тимлĕ итлĕр те ăна çывăх изложени çырăр.***

Ял парăнмарĕ. Нимĕç фашисчĕсем кĕнĕрен вара çулталăк та ытла иртрĕ. Çав вăхăтра тăшмансем кашни кун, кашни сехетре тенĕ пекех хăрушă та тискер ĕçсем турĕç, анчах та ял пурĕ пĕрех парăнмарĕ. Совет çыннисем ютран килнĕ кăвак симĕс шинельлĕ хурахсенчен хăраса ӳкмерĕç, вĕсен умĕнче пуçĕсене таймарĕç. Темĕнле хĕн-хур тӳсмелле пулсан та ирĕклĕх сывлăшĕ çынсен кăкрисенчен тухса сирĕлмерĕ, тăшмана нихçан та парăнас çук кăмăлĕ пĕтсе лармарĕ.

Ĕнтĕ темиçе хутчен те яла карательсен отрячĕсем пырапыра çаратса тухрĕç. Кашни пымассеренех кама та пулин е вĕлерсе, е ним пĕлми пуличчен хĕнесе хăварчĕç, е тытса кайрĕç. Тытса кайнисенчен пĕри те каялла таврăнмарĕ. Вĕсене хулари тĕрме хыçĕнче персе пăрахни е асап тӳсеймесĕр вилни çинчен хыпар чылай вăхăт иртсен тин килсе çитрĕ.

Ял ҫыннисем ҫывӑхри вӑрмансенче пӗрлешнӗ партизансемпе куллен ҫыхӑну тытса тӑчӗҫ, вӗсене мӗнпе май килнӗ ҫавӑнпа пулӑшрӗҫ. Кашни килтен, кашни ҫемьерен тенӗ пекех кам та пулин партизанра ҫӳренӗ. Вӗсем килтисем урлӑ тӑшмансен кашни утӑмнех пӗлсе тӑнӑ. Ҫавна пула партизансем фашистсене пачах та кӗтмен ҫӗртен, сасартӑк сиксе тухса питӗ пысӑк сиен кӳнӗ. *(Л. Агаков.)*

**Изложени тексчӗн микротемисем**

| **Абзац номерӗ** | **Микротема** |
|---|---|
| **1** | Совет ҫыннисем хӑраса ӳкмерӗҫ, пуҫӗсене таймарӗҫ, тӑшмана нихҫан та парӑнас ҫук кӑмӑлне пӗтермерӗҫ. |
| **2** | Карательсен отрячӗсем кашни пымассеренех кама та пулин е вӗлерсе, е ним пӗлми пуличчен хӗнесе хӑварчӗҫ, е тытса кайрӗҫ. |
| **3** | Ял ҫыннисем ҫывӑхри вӑрмансенче пӗрлешнӗ партизансемпе куллен ҫыхӑну тытса тӑчӗҫ, вӗсене мӗнпе май килнӗ ҫавӑнпа пулӑшрӗҫ. |

**2-мӗш пай**

**2–8-мӗш ӗҫсен хуравӗ сӑмах (темиҫе сӑмах) е цифрӑсен йӗрки пулма пултарать.**

**2** ***Синтаксис тишкерӗвӗ***

Текста тӗплӗ, васкамасӑр вуласа тухӑр.

*(1)Авӑн уйӑхӗ пуҫланчӗ. (2)Ҫумӑр хуллен ҫеҫ йӑскать. (3)Хурӑн ҫулҫи сап-сарӑ. (4)Хӳме ҫумӗнчи пилешсем ҫулӑмпах ҫунаҫҫӗ. (5)Вӑрмантан килнӗ кӑсӑясем хавассӑн сиккелеҫҫӗ.*

Предложенисен тӗп членӗсене тӗрӗс палӑртнӑ вариантсене кӑтартӑр.

1) *авӑн пуҫланчӗ* (1-мӗш предложени);
2) *ҫумӑр йӑскать* (2-мӗш предложени);
3) *хурӑн сап-сарӑ* (3-мӗш предложени);
4) *пилешсем ҫунаҫҫӗ* (4-мӗш предложени);
5) *кӑсӑясем килнӗ* (5-мӗш предложени).

**Хуравӗ:** ___________________________



**3** ***Пунктуаци тишкерӗвӗ***

Чарӑну палли лартмалли вырӑнсене кӑтартакан цифрӑсене ҫырӑр.

*Пирӗн тавралӑх (1) авӑн уйӑхне (2) тин ҫеҫ кӗр тырри акса хӑварнӑ анасемпе (3) сип-симӗс каюллӑ улӑх-ҫаранпа (4) тӗл-тӗллӗн шупкалнӑ-хӗрелнӗ (5)ката-вӑрманпа (6) кӗтсе илет.*

**Хуравӗ:** ___________________________

**4** ***Синтаксис тишкерӗвӗ***

*Темиҫе ҫул хушши тӑван ялта пулман куккан кӑмӑлӗ* сӑмах майлашӑвӗн тӗп компонентне ҫырӑр.

**Хуравӗ:** ___________________________

**5** ***Орфографи тишкерӗвӗ***

**Паллӑ тунӑ сӑмахсене мӗнле ҫырнине тӗрӗс ӑнлантарнӑ хурав вариантӗсен номерӗсене ҫырӑр.**

1) ***тухья*** – чӑваш сӑмахӗсенче икӗ сасса пӗлтерекен *я* сас палли умӗн ҫемҫелӗх палли ҫырмалла;
2) ***сӗт-турӑх*** – хутлӑ сӑмахсене дефиспа ҫырмалла;
3) ***ҫутӑ кӑвак*** – тӗсе пӗлтерекен паллӑ ячӗсенчен пулнӑ сӑмах майлашӑвӗсене уйрӑм ҫырмалла;
4) ***ӗмӗтленеттӗм*** – ӗмӗт наклоненийӗнчи глаголсенче 1-2-мӗш сӑпатсенче икӗ *т* ҫырмалла;
5) ***тухрӗ-шим*** – *-шим* междометие яланах дефиспа ҫырмалла.

**Хуравӗ:** ___________________________

**Текста вуласа тухӑр та 6–9-мӗш ӗҫсене тӑвӑр.**

(1)Тӑван ҫӗр-шыв ирӗкӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн пынӑ хаяр вӑрҫӑ тӑвата ҫул кӗрленӗ. (2)Тӑватӑ ҫул тӗнче историйӗшӗн пӗчӗк самант кӑна. (3)Этемлӗх историйӗшӗн вара ҫав тӑватӑ ҫул – нихҫан та асран тухман вӑхӑт, вӑрӑм-вӑрӑм ҫул ҫинче аякран курӑнса ларакан чикӗ юпи пекех. (4)Вӑл юпа ҫине хальхи ӑрусем кӑна мар, малашнехи ҫынсем те чарӑна-чарӑна тӑрса пӑхӗҫ, унта мӗн ҫырнине тимлесе вулама тӑрӑшӗҫ. (5)Вӑрҫӑ пуҫланнӑ чухне 18 ҫулта пулнӑ каччӑсенчен вунӑ ҫын пуҫне иккӗшӗ кӑна аманса-сусӑрланса та пулин вӑрҫӑ хирӗнчен таврӑннӑ, ыттисем вара

юнлă вут-çулăмра вилнĕ. (6)Çын çӳремен шурлăхра, кайăк ларман ту хысакĕнче, кашкăр кĕмен вăрман чăтлăхĕнче, суха касси витмен пăрлак тăвайккинче – Тăван çĕр-шывăн кашни утăмĕнче тискер тăшмана çунтарнă вĕсем.

(7)Тăван халăх питĕ лайăх пĕлсе тăнă: Тăван çĕр-шыва ун халăхĕ кăна хӳтĕлесе хăварма пултарать – аякран никам та пулăшаймĕ те, пулăшас та темĕ. (8)Фашизма çĕнтерсе пирĕн аслă ăру Тăван çĕр-шыва, унăн ирĕкĕпе малашлăхне сыхласа хăварнă.

(9)Пирĕн паттăр ентеш салтаксен ретĕнче чăваш çыравçисем те йышлă. (10)Вăрçăра пуç хунисем йышĕнче – М. Данилов-Чалтун, И. Думилин, Хв. Çитта, А. Петтоки, К. Кольцов, В. Бараев, М. Ястран, Е. Еллиев, М. Аттай, И. Викторов, В. Васькин, А. Орлов, Кăтра Мишша, В. Усли, Н. Чурпай, Н. Пиктемир, Ф. Николаев (Сергеев), В. Туртуш. (11)Вĕсен хайлавĕсене пухса вăрçă хыççăн уйрăм кĕнеке е сăвă-калав пуххи кăларнă.

(12)1941–1945 çулсенчи вăрçă вăхăчĕ, ун хыççăнхи ура çине тăнă тапхăр калама çук йывăр пулнă. (13)Нушаллă, юнлă, вилĕмлĕ çулсенче чăваш çыравçисен тĕрĕс сăмахĕ йывăрлăха чăтса ирттерме пулăшнă, шанчăк панă, ĕненĕве вăйлатнă. (*В.П. Станьял**.)

***Виталий Петрович Станьял** (1940 çулта çуралнă) – чăваш литературин тĕпчевçи.*

**6** ***Текст содержанийĕн тишкерĕвĕ***

**Текст содержанийĕпе хăш предложенисем тӳр килеççĕ?**

1) Тăван çĕр-шыв ирĕкĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пынă хаяр вăрçă пилĕк çул кĕрленĕ.

2) Вăрçă пуçланнă чухне 18 çулта пулнă каччăсенчен вăрçă хирĕнчен вунă çын пуçне тăваттăшĕ кăна таврăннă.

3) Пирĕн паттăр ентеш салтаксен ретĕнче чăваш çыравçисем те йышлă.

4) Вăрçăра пуç хунисем йышĕнче В. Бараев та пур.

5) Вăрçă хыççăн чăваш çыравçисен хайлавĕсене уйрăм кĕнекере пичетлесе кăларнă.

**Хуравĕ: __________________________**



**7** ***Илемлĕх мелĕсене тишкерни***

**Эпитетлă предложенисен номерĕсене кăтартăр.**

(1) Тăван çĕр-шыв ирĕкĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пынă хаяр вăрçă тăватă çул кĕрленĕ.

(2) Вăл юпа çине хальхи ăрусем кăна мар, малашнехи çынсем те чарăна-чарăна тăрса пăхĕç, унта мĕн çырнине тимлесе вулама тăрăшĕç.

(3) Çын çӳремен шурлăхра, кайăк ларман ту хысакĕнче, кашкăр кĕмен вăрман чăтлăхĕнче, суха кассии витмен пăрлак тăвайккинче – Тăван çĕр-шывăн кашни утăмĕнче тискер тăшмана çунтарнă вĕсем.

(4) Пирĕн паттăр ентеш салтаксен ретĕнче чăваш çыравçисем те йышлă.

(5) Вĕсен хайлавĕсене пухса вăрçă хыççăн уйрăм кĕнеке е сăвă-калав пуххи кăларнă.

**Хуравĕ: __________________________**

**8** ***Лексика тишкерĕвĕ.***

*Тапхăр* сăмахăн (12-мĕш предложени) синонимне текстра тупса çырăр.

**Хуравĕ: __________________________**

**2–8-мĕш ĕçсен хуравĕсене хурав бланкне куçарса çырма ан манăр. Кашни ĕçĕн хуравĕ тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнине тепĕр хут пăхса тухăр.**

**3-мĕш пай**

**2-мĕш пайра вуланă текстпа усă курса 9.1, 9.2 е 9.3 ĕçсенчен пĕрне тăвăр. Хайлав çырас умĕн суйласа илнĕ ĕçĕн номерне палăртăр: 9.1, 9.2 е 9.3.**

**9.1. «Вăрçă ан пултăр нихăçан»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.

Хăвăр шухăшăра икĕ аргументпа ĕнентерĕр: пĕр аргументне итленĕ текстран, теприне вуланă текстран илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав

пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**9.2.** Вуланă текстра палăртнă **«Нушаллă, юнлă, вилĕмлĕ çулсенче чăваш çыравçисен тĕрĕс сăмахĕ йывăрлăха чăтса ирттерме пулăшнă, шанчăк панă, ĕненĕве вăйлатнă»** шухăша уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.

Хăвăр шухăшăра вуланă текстри икĕ аргументпа ĕнентерĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

**9.3. Шанчăк** сăмаха эсир мĕнле ăнланатăр? Хăвăр панă определение уçса парăр. **«Мĕн вăл шанчăк?»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр.

Тезис вырăнне хăвăр панă определенипе усă курăр. Тезиса аргументлама икĕ аргумент тĕслĕхпе усă курăр: пĕр аргументне вуланă текстран, теприне хăвăр пурнăçăр опытĕнчен илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

(!) **Кашни ĕçĕн хуравĕ тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнине тепĕр хут пăхса тухăр.**



## ĂСЛАВ СОЧИНЕНИЙĔСЕН ТĔСЛĔХĔСЕМ

### Ялан янра, чăваш сăмахĕ

(54-мĕш страницăри 14.1-мĕш ĕç)

Чăваш сăмахĕ… Çепĕç те илемлĕ, мухтавлă та янăравлă, хăватлă та хĕрӳллĕ сăмахăмăр! Унпа пирĕн мăн асаттесемпе асаннесем ирĕклĕн, уççăн калаçнă. Вăйăсемпе улахсенче, туйсемпе уявсенче сăвăланă-такмакланă чухне чĕлхемĕр пуянланса, якалса пынă. Вăхăт иртнĕçемĕн чăваш литератури те аталана пуçланă.

Акă итленĕ текстран эпир И.Я. Яковлев «чăвашла та чаплă хайлавсем çырма май пуршăн» савăннине куратпăр. К.В. Ивановăн «Нарспи» поэминче чăваш сăмахĕ «шыв юххи пек» илтĕнет, чăннипех янрать.

Вуланă текстра И.Я. Яковлев чĕлхе халăх пулсан кăна пуян та янăравлă иккенне калать. Чĕлхемĕр пĕлтерĕшне палăртса аслă çул пуçăмăр «тăван чĕлхе пулăшнипе кивĕ ăнлавсене çĕнетсе аталантарма та, çĕнĕ хунавсем ӳстерме те» пулни çинчен çырать (10-мĕш предложени).

Эпĕ шутланă тăрăх, чăваш чĕлхи ĕмĕрсем хушши янăранă, янăрать те, малашне те янăрĕ. Çапла пултăр тесен пирĕн ăна упраса хăвармалла, малалла аталантармалла. Ялан янратăр чăваш сăмахĕ!

### Тăван чĕлхе пулăшнипе вара кивĕ ăнлавсене çĕнетсе аталантарма та, çĕнĕ хунавсем ӳстерме те пулать, ахальлĕн ку таранччен тунă ӳсĕмсене аркатма, çĕмĕрме пулать

(54-мĕш страницăри 14.2-мĕш ĕç)

Вуланă текстра палăртнă шухăша мĕнле ăнланатăп-ха эпĕ? Мĕнле йĕр хăварать тăван чĕлхе пирĕн ăс-тăнра? Мĕнле майпа аталанса пырать вăл? Манăн шухăшпа, кашни халăхах хăйĕн аталанăвĕнче тăван чĕлхе хăват парса пырать. Çав шутрах ман тăван чăваш халăхне те.

Вуланă текстри тĕп шухăша ĕнентерме 6-мĕш предложени те пулăшать. И.Я. Яковлев ĕмĕрсем хушши хăй тĕллĕн аталаннă кашни халăх хăй ăс-хакăлĕн вăй-халĕпе çуратса аталантарнă

туйăмăн, ăнлавăн, шухăшăн кĕлеткине малалла ӳстерсе-сыпăнтарса пырать тесе палăртать. Ку шухăшпа эпĕ те килĕшетĕп. Тăван чĕлхе пулăшнипе, чăнах та, халăх ăс-тăнĕ те, шухăш-кăмăлĕ те аталанать.

Çав вăхăтрах чĕлхе пуянлăхĕпе усă курмасан, ăна малалла аталантармасан «ку таранччен тунă ӳсĕмсене аркатма, çĕмĕрме пулать». Çавăнпа та чăвашсен, ман шутпа, тăван чĕлхерен писмелле мар, унпа ытларах та ытларах усă курмалла, пулас ăрăва тăван чĕлхене юратма вĕрентмелле.

Пĕтĕмлетсе каласан, тăван халăхăмăра сыхласа хăварас тесен чĕлхемĕре те сыхласа хăвармалла, пирĕн несĕлĕмĕрсем ку таранччен пуçтарнă ăс-хакăла малалла аталантармалла.

## Мĕн вăл тăван чĕлхе пуласлăхĕ?

(54-мĕш страницăри 14.3-мĕш ĕç)

Мĕн вăл тăван чĕлхе? Пур-и унăн пуласлăхĕ? Çак ыйтусем юлашки вăхăтра нумай çынна канăç памаççĕ. Тăван чĕлхе вăл, ман шутпа, чи малтанах атте-аннепе, çывăх çынсемпе хутшăнмалли хатĕр. Тăван чĕлхепе эпĕ шухăшлатăп, ĕмĕтленетĕп, ăстăн пухатăп, хамăн тавра курăма аталантаратăп, çут тĕнчере пурăнма вĕренетĕп.

Кашни çыншăн тăван чĕлхе ĕмĕр пурăнассăн туйăнать. Вуланă текстра И.Я. Яковлев «чĕлхе хăйне пултарнă халăхпа кăна вилет» тесе çырать, халăха хăйĕн тăван чĕлхине мантарни ăна вилĕм суннипе пĕрех тесе палăртать. Апла пулсан, чăваш халăхĕ çĕр çинчен ан çухалтăр тесен чĕлхемĕре упраса хăвармалла, ăна малалла аталантармалла.

Чĕлхе пуласлăхĕ çинчен шутланă май чăвашсен паллă чĕлхеçи М.Р. Федотов çырнă сăмахсем аса килчĕç: «Аçу чĕлхипе эсĕ, сан чĕлхӳпе ачу, ачу чĕлхипе мăнуку калаçсан – чĕлхӳ йĕрĕ çухалмĕ, сыпăкран сыпăка, ăруран ăрăва тăсăлса пырĕ». Чăнах та, кашни чăваш хăйĕн ачипе чăвашла пуплесен чĕлхене упраса хăварасси йывăрах та мар пулĕ.

Апла пулсан, тăван чĕлхе ĕмĕр пурăнтăр тесен пирĕн хамăр ачасене чăвашла вĕрентмелле. Вĕсенче тăван чĕлхемĕр пуласлăхĕ.



## Тăван халăх телейĕшĕн тăрăшакансем

(58-мĕш страницăри 14.1-мĕш ĕç)

Тăван халăх телейĕшĕн тăрăшакансем камсем-ха вĕсем? Эпĕ шутланă тăрăх, халăх телейĕ вăй хумасăр, кĕрешмесĕр пулмасть. Чăваш хăйне телейлĕ тесе шутлать, мĕншĕн тесен ăна вĕрентсе çул кăтартса пыракансем пулнă. Улăпла паттăрсем шутне чи малтанах Иван Яковлевич Яковлева кĕртетпĕр.

Итленĕ текстра аслă вĕрентекенĕмĕр халăха телейлĕ тăвас тесе ырми-канми вăй хуни курăнать. И.Я. Яковлев шутланă пекех, унăн вĕренекенĕсем те (манăн уйрăмах Константин Иванова, Николай Васильева, Тайăр Тимккине асăнас килет) «халăхшăн тăрăшакансем» пулнă.

Манăн шутпа, халăх хăйĕн чĕлхи упранса малалла аталансан телейлĕ. Тăван халăх телейлĕ пултăр тесен пирĕн те тăрăшмалла. Вуланă текстра Г. Волков тăван чĕлхе «халăхăн аваллăхĕ», çав вăхăтрах «сумлă та телейлĕ малашлăхĕ» пулнине палăртать. Тăван чĕлхене манакансене халăх питлени, шеллени, ятлани çинчен çырать (9, 10-мĕш предложенисем).

Çапла вара, тăван халăх телейĕшĕн кĕрешекенсене, тăван чĕлхене упраса хăварас тесе тăрăшакансене эпир сума сăватпăр. Пирĕн те вĕсенчен тĕслĕх илесчĕ, вĕсен ĕçне малалла тăсасчĕ.

## Тăван чĕлхе – халăхăн аваллăхĕ, тăван чĕлхе халăхăн сумлă та телейлĕ малашлăхĕ

(58-мĕш страницăри 14.2-мĕш ĕç)

«Тăван чĕлхе – халăхăн аваллăхĕ, тăван чĕлхе халăхăн сумлă та телейлĕ малашлăхĕ», – тесе çырать Г.Н. Волков чăваш чĕлхин шăпи çинчен шухăшласа. Епле тĕрĕс каланă!

Шухăшлăр-ха: тăван чĕлхе темиçе ĕмĕр витĕр тухса, ăруран ăрăва куçса халăхăмăра тăванлăхра тытса тăрать. «Аслашшĕсен чĕлхине» маннă çынна чăваш «шелленĕ, телейсĕр тесе шутланă», пĕлес теменнине айванпа танлаштарнă, «юратманнине – ылханса ятланă» (10-мĕш предложени). Эпĕ шутланă тăрăх, çак авалтан пыракан йăла шăпах тăван чĕлхемĕре упрать, тăван халăхăмăра малашлăх парнелет.

Малашлăхра та çыравçă тăван чĕлхе «чун енчĕкĕнче ылтăн-кĕмĕл пек шăнкăртатакан пуянлăх» пуласса шанать, мĕншĕн тесен унта «Тăван çĕр-шывăн сенкер пĕлĕчĕ, уçă сывлăшĕ, аслатиçиçĕмĕ, хирĕ-уйĕ, улăхĕ-çаранĕ, тăвĕ-сăрчĕ, Атăлĕ-Пăли, унăн ытарайми юманлăхĕпе шĕшкĕлĕхĕ». 6-мĕш предложенире аслă педагог ăрупа ăру улшăнсан та вĕсен ăс-пуç пуянлăхĕ чĕлхере упранса юлнине палăртать.

Апла пулсан, тăван чĕлхен сумлă та телейлĕ малашлăхĕ пирĕнтен килет. Хамăр тăван чĕлхене манмасан, унăн пуласлăхĕшĕн тăрăшсан вăл çухалмĕ, ăруран ăрăва куçса пырса малалла аталанĕ.

## Мĕн вăл тăван чĕлхемĕр?

(58-мĕш страницăри 14.3-мĕш ĕç)

Тăван чĕлхемĕр вăл – асатте-асанне, кукаçи-кукамай вĕрентĕвĕ, атте-анне ăшши. Тăван чĕлхемĕр вăл – тăван халăхăмăрăн чĕлхи, унăн хисепĕпе пуянлăхĕ.

Тăван чĕлхемĕр халăх пуянлăхĕ пулнине вуланă текстри 4-мĕш предложени те кăтартса парать. Унта автор чĕлхемĕре «чун енчĕкĕнче ылтăн-кĕмĕл пек шăнкăртатакан пуянлăхпа» танлаштарать. Çавăнпа та пирĕн ăна упрамалла, аякра пурăнсан та манмалла мар. Тăван чĕлхене манакансенчен халăх кулни, вĕсене питлени çинчен Г. Волков 9-мĕш предложенире çырса панă. Çакă, ман шутпа, шăпах аслă ăру çамрăксене тăван чĕлхене упрама вĕрентнине кăтартать.

Эпĕ шутланă тăрăх, тăван чĕлхене манса кайни атте-аннене манса кайнипе пĕрех. Çавăнпа Стихван Шавли хăйĕн «Вĕçкĕн Ваçса» сăввинче çапла çырать:

«Аннӳ панă чĕлхерен<br>Ан вăтан эс ӳлĕмрен.<br>Унсăрăн ятна яран,<br>Çамкуна та çаптаран».

Чăнах та, анне панă чĕлхерен вăтанмалла мар, хамăрăн пулас ăрăва та тăван чĕлхене юратма вĕрентмелле. Вара тин эпир тăван чĕлхе вăл атте-анне ăшши, пирĕн пулас ачасемпе мăнуксен çепĕç калаçăвĕ теме пултаратпăр.



## Мĕн вăл илем?

(73-мĕш страницăри 9.3-мĕш ĕç)

Мĕн-ши вăл илем? Ман шутпа, илем – чуна çĕклентерекен, хавхалантаракан, кăмăла уçакан, ырра ĕмĕтлентерекен, куçа илĕртекен, чĕрене тыткăнлакан туйăм.

Вуланă текстра Ф. Павлов чăваш хитрене юратни çинчен çырать, хăйĕн юррисенче те «хитре çинчен нумай каласа юрланине» палăртать. Автор çырса панă çут çанталăк пулăмĕсем, чăнах та, чуна тыткăнлаççĕ, илеме курма тата туйма хăнăхтараççĕ.

Чăвашсен «Илемлĕ» юрри мана кĕввипе те, сăмахĕсемпе те питĕ килĕшет. Ку юрăра чăваш юрри юрлама пĕлсен, чăваш ташши ташлама пĕлсен, чăваш тĕрри тĕрлеме пĕлсен кăна илемлĕхе сыхлани çинчен каланă. Апла пулсан, ман шутпа, кирек мĕнле ĕçе те пĕлсе тата юратса тумалла. Ячĕшĕн тунă япала илемлĕ пулмасть.

Çапла вара, илем куçа та, чуна та савăнтаракан япала. Ăна пирĕн курма-туйма кăна мар, тума та вĕренмелле.

## Çут çанталăк – тупра, эсĕ ăна упра

(98-мĕш страницăри 9.1-мĕш ĕç)

Çут çанталăк пирĕншĕн, чăнах та, тупра. Эпир унпа килнетпĕр, вăл панă пурлăхпа усă куратпăр, анчах та унăн пуласлăхĕ çинчен шутлама манса каятпăр. Эпĕ шухăшланă тăрăх, çут çанталăк пире малашне те савăнтартăр тесен ăна пулăшма пур çыннăн та тивĕç пур.

Итленĕ текстра автор шăпах çут çанталăка вăхăтра пулăшмаллине аса илтерет. Ульяна Павловна вăрçă вăхăтĕнче такам каснă йывăç вырăнне çамрăк хунавсем лартман пулсан типме пуçланă çăл куç та вăй илейместчĕ, йывăççсем те хăйсен илемĕпе савăнтарайместчĕç.

Вуланă текстра Сантăр Аксар чăвашсен çут çанталăка упрас тĕллевпе тунă ĕçри ламран лама куçса пыракан пархатарлă йăлисемпе паллаштарать. Ашшĕпе ывăлĕ вăрманта хунавсене тĕппипе касмаççĕ, «кашни тĕмрех икĕ вулăран кая мар хăварса пыраççĕ» (13-мĕш предложени). Йĕкел пуçтарнă чух та

вăрманти чĕр чунсем валли хăварса пыраççĕ. Автор, çавăн пекех, чăвашсен ытти паха йăлисем çинчен те çырса парать.

Апла пулсан, пирĕн те çут çанталăк тупра пулни çинчен манмалла мар, ăна упрама тăрăшмалла.

**«Çут çанталăка хÿтĕлеме пĕтĕм халăхăн, çав шутра ачасен те, хастаррăн хутшăнмалла, ку ĕçри ламран лама куçса пыракан пархатарлă йăлисене чăвашсен çĕнĕрен вăйлатса ямалла»**
(98-мĕш страницăри 9.2-мĕш ĕç)

«Çут çанталăка хÿтĕлеме пĕтĕм халăхăн, çав шутра ачасен те, хастаррăн хутшăнмалла, ку ĕçри ламран лама куçса пыракан пархатарлă йăлисене чăвашсен çĕнĕрен вăйлатса ямалла», – тесе вĕçлет Сантăр Аксар хăйĕн текстне. Мĕнле ăнланатăп-ха эпĕ ку йĕркесене? Мĕнле йăласем çинчен каласа парать автор? Ман шутпа, чăваш яланах çут çанталăкпа туслă пулнă. Çавна май унăн çут çанталăка упрас йăли те нумай сыхланса юлнă.

Пĕрремĕшĕнчен, автор çамрăк ăрăва кулленхи пурнăçра çут çанталăка упрама мĕнле вĕрентни çинчен çырса парать. Ашшĕ ывăлне вăрманти хунавсене те тĕппипе кастармасть (12-мĕш предложени), йĕкелне те ним хăварми пуçтарттармасть (20-мĕш предложени).

Иккĕмĕшĕнчен, Сантăр Аксара «вĕçен кайăксен йышĕ» сахалланни, «йывăç-курăкĕпе те савăнмаллиех çукки» пăшăрхантарать. Ялсенче ĕлĕкхи пек йывăçсем те лартмаççĕ, шăнкăрч вĕллисем те ăсталамаççĕ.

Апла пулсан, чăвашсен автор çырса панă «çут çанталăка упрас, хÿтĕлес ырă йăли-йĕркине» çĕнĕрен вăйлатса ямалла, ку ĕçе ачасене те явăçтармалла.

**Вăрçă ан пултăр нихăçан**
(108-мĕш страницăри 9.1-мĕш ĕç)

Вăрçă … Мĕн тери хăрушă, чуна ыраттаракан сăмах. .Ман шутпа, вăрçăран хăрушăраххи нимĕн те çук. Мĕн чухлĕ хурлăх, асап, çухату кÿнĕ Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçи, мĕн чухлĕ çын



пурнăçне татнă, хĕрарăмсене мăшăрсăр, ачасене ашшĕ-амăшĕсĕр хăварнă.

Итленĕ текстра ар çынсем вăрçа кайнă пирки пĕтĕм ĕç хĕрарăмсем, ват çынсемпе ачасем çине тиенни, колхозра ĕçсем нумай пулнипе вĕренÿ те вăхăтра пуçланайманни, вăрçă ачасенчен питĕ хăварт мăн çынсем туса хуни çинчен каланă.

В. Чебоксаров та хăйĕн хайлавĕнче вăрçă синкерлĕхĕ çинчен чуна хускатмалла çырса кăтартнă: «Тăхăр каччă тантăш çапăçу хирĕнчен киле таврăнайман» – «çутă сăнарĕсем кăна тăрса юлчĕç халăхра телейсĕр ăмăрт кайăксен» (7-мĕш предложени).

Çапла, этемлĕхе аталанма вышкайсăр пысăк чăрмав, çынна виçесĕр пысăк хуйхă кÿнĕ вăрçă. Ан пултăр вăрçă! Ан тăкăнтăр куççуль! Ан юхтăр юн! Пирĕн Çĕр питне тăнăçлăх хĕвелĕ çеç çутаттăр!

**Вăрçă çухатусăр, терт-асапсăр пулмасть**
(108-мĕш страницăри 9.2-мĕш ĕç)

«Вăрçă çухатусăр, терт-асапсăр пулмасть», – тенине мĕнле ăнланатăп-ха эпĕ? Кирек мĕнле вăрçă та куççульсĕр, çухатусăр пулмасть, пур вăрçă та халăх историйĕнче хурлăхлă йĕр хăварать. Ваттисем вăрçă асаппа инкек акать тесе ахальтен каламан çав. Кашни çемьене пырса тивнĕ вăрçă асапĕ.

Акă В. Чебоксаров çырнă тăрăх, «тăхăр каччă тантăш, тăхăр мал ĕмĕтлĕ чĕре, тăхăр пулас упăшка, тăхăр пулас атте» вăрçăран таврăнайман (4-мĕш предложени).

Кашни çыннăн хăйĕн шăпи, хăйĕн кун-çулĕ, хăйĕн телейĕ… Çак текстрах çыравçă «тĕнче вăрçин вут-çулăмĕнчен чĕррĕнех» тухнă Сантăра палăртать. Сывă юлнă пулсан та вăрçă терт-асапне самаях курнă Сантăр: «тăшман тыткăнĕнче çулталăка яхăнах асап тÿснĕ», «Берлина штурмланă çĕре те хутшăннă», урине те амантнă.

Çапла çав, вăрçă çухатусăр, терт-асапсăр пулмасть. Çавăнпа та Çĕр çинче нихăçан та вăрçă ан пултăр, сенкер тÿпере яланах тăнăçлăх кăвакарчăнĕ вĕçтĕр.

## Мĕн вăл вăрçă?

(109-мĕш страницăри 9.3-мĕш ĕç)

Вăрçă вăл – çапăçу, тытăçу, аркату… Вăрçă вăл – куççуль, асап, инкек… Вăрçă вăл – çухату, вилĕм… Вăрçă асаплă, тискер, хăрушă.. Пин-пин салтак çапăçу хирĕнчех выртса юлнă, пин-пин çын хыпарсăр çухалнă, Тăван çĕр-шывăн пин-пин ывăлĕ-хĕрĕ алăсăр-урасăр, ĕмĕр тӳрленейми суранпа таврăннă…

Чăвашсен паллă çыравçи В. Чебоксаров хăйĕн хайлавĕнче пĕрле ӳснĕ тантăшсем çинчен çырать, «тăхăр каччă тантăш, тăхăр мал ĕмĕтлĕ чĕре, тăхăр пулас упăшка, тăхăр пулас атте» вăрçăран таврăнайманни çинчен чуна витермелле каласа кăтартать.

Эпир, паллах, чăн-чăн вăрçа курман (курмалла та ан пултăр!), анчах та вăрçă синкерĕ нихăш киле те уйăрса хăварманнине чун-чĕрепе туятпăр, пĕлетпĕр. Ват асанне-кукамай арчисенчи виç кĕтеслĕ çырусем те, стена çинчи салтак тăвансен сăн ӳкерчĕкĕсем те, вăрçă ветеранĕсен аса илĕвĕсем те пире вăрçă çинчен манма памаççĕ. Манăн ват асатте те хăрушă вăрçăран киле таврăнайман, асатте те çавна пула ашшĕ хӳттисĕр ӳснĕ.

Чăнах та, вăрçă вăл – çĕр йăтайми инкек, чун ыратăвĕ. Тĕнчере яланах тăнăç пурнăç хуçалантăр.



## ЭКЗАМЕН ĔÇĔСЕНЕ ХАКЛАМАЛЛИ КРИТЕРИСЕМ

### 1-мĕш пай

### Изложение хакламалли критерисем

| № | Изложение хакламалли критерисем | Балл |
|---|---|---|
| **И1** | **Изложенире оригинал текстăн содержанийĕ палăрни** | |
| | Текст содержанийĕ пĕртте пăсăлман, палăртнă пур микротемăна та уçса панă | 2 |
| | Текстăн тĕп содержанине уçса панă, анчах пĕр микротемăна сиктерсе хăварнă е хушса панă | 1 |
| | Текстăн тĕп содержанине уçса панă, анчах пĕр микротемăран ытларах сиктерсе хăварнă е хушса панă | 0 |
| **И2** | **Оригинал текстăн содержанине уçса панă чухнехи шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ** | |
| | Ĕçре шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ палăрать, логика йăнăшĕсем çук; текста абзацсене пайланă чухне йăнăшсем çук | 2 |
| | Ĕçре шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ палăрать, анчах логика йăнăшĕ 1 пур, тата/е абзацсем тунă чух 1 йăнăш кайнă | 1 |
| | Ĕçре шухăш çыхăнулăхĕ палăрать, анчах логика йăнăшĕ 1-рен ытла тунă, тата/е абзацсем тунă чух 2 йăнăш кайнă | 0 |
| **И3** | **Пуплев тĕрĕслĕхĕ, уçăмлăхĕ** | |
| | Шухăша тĕрĕс те ăнланмалла уçса пама шкул ачи йышлă лексикăпа, тĕрлĕ грамматика хатĕрĕсемпе усă курнă | 2 |
| | Ачан сăмах пуянлăхĕ пур, анчах пĕрешкел грамматика хатĕрĕсемпе вĕçĕмсĕр усă курни сисĕнет | 1 |
| | Сăмах çӳпçи чухăн, пĕрешкел грамматика хатĕрĕсемпе вĕçĕмсĕр усă курнă | 0 |
| | **Пур критерие те (И1–И3) тулли тивĕçтерсе çырнăшăн пухнă пĕтĕм балл сумми** | **6** |

### 2-мĕш пай

### Тест ыйтăвĕсене хуравланине хакламалли критерисем

2-мĕш пайăн ĕçĕсене тĕрĕс тусан шкул ачи кашни ĕçшĕн 1-ер балл илет. Хурав тĕрĕс пулмасан е вăл пачах пулмасан – 0 балл лартаççĕ. Пурне те тĕрĕс тусан пĕтĕмпе 7 балл пухма пулать.

**3-мĕш пай**

**9-мĕш (9.1, 9.2 е 9.3) ĕçе хакламалли критерисем**

**9.1-мĕш ĕçе хакламалли критерисем**

| № | Ăслав сочинение хакламалли критерисем | Балл |
|---|---|---|
| **C1** | **Ача çырнă ĕç сĕннĕ темăпа тӳр килни** | |
| | Сочинени содержанийĕ сĕннĕ темăпа тӳр килет | 2 |
| | Сочинени содержанийĕ сĕннĕ темăпа тӳр килет, анчах çырнă текстра темăран пăрăннă 1 вырăн пур | 1 |
| | Сочинени панă темăпа тӳр килмест, е ача ĕçĕнче темăран пăрăннă 2 е ытларах вырăн пур | 0 |
| **C2** | **Шкул ачин шухăшĕ палăрни** | |
| | Текст авторĕсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе шкул ачи хăйĕн позицине уçăмлă кăтартать | 2 |
| | Текст авторĕсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе шкул ачи хăйĕн позицине уçăмлă кăтартаймасть | 1 |
| | Вуланă тата итленĕ текстсем пирки шкул ачи хăй шухăшне каламасть е хăй позицийĕ çинчен ячĕшĕн çеç *Эпĕ авторсемпе килĕшетĕп. Эпĕ авторсемпе килĕшместĕп* йышши предложенисем çырать | 0 |
| **C3** | **Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсне тӳр килни** | |
| | Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсĕпе тӳр килет, шухăша çирĕплетме 2 (пĕр тĕслĕхне итленĕ текстран, теприне вуланă текстран илнĕ) аргументпа усă курнă | 2 |
| | Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсĕпе тӳр килет, анчах 1 аргументпа кăна усă курнă | 1 |
| | Ăслава пăхăнман текст хайланă | 0 |
| **C4** | **Шухăш пĕр пĕтĕмлĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ тата шухăшсене йĕркипе уçса пыни** | |
| | Ĕçре шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ палăрать, логика йăнăшĕсем çук; текста абзацсене пайланă чухне йăнăшсем çук | 2 |
| | Ĕçре шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ палăрать, анчах логика йăнăшĕ 1 пур, тата/е абзацсем тунă чух 1 йăнăш кайнă | 1 |
| | Ĕçре шухăш çыхăнулăхĕ палăрать, анчах логика йăнăшĕ 1-рен ытла тунă, тата/е абзацсем тунă чух 2 йăнăш кайнă | 0 |
| **C5** | **Пуплев тĕрĕслĕхĕ, уçăмлăхĕ** | |
| | Шухăша тĕрĕс те ăнланмалла уçса пама йышлă лексикăпа, тĕрлĕ грамматика хатĕрĕпе усă курнă | 2 |
| | Ачан сăмах пуянлăхĕ пур, анчах пĕрешкел грамматика хатĕрĕпе усă курнă | 1 |
| | Сăмах çӳпçи чухăн, пĕрешкел грамматика хатĕрĕпе вĕçĕмсĕр усă курнă | 0 |
| | **Сочинени çырса пухнă пĕтĕм балл сумми (C1–C5 критерисемпе)** | **10** |



**9.2-мĕш ĕçе хакламалли критерисем**

| № | Ăслав сочинение хакламалли критерисем | Балл |
|---|---|---|
| **C1** | **Вуланă текстра палăртнă шухăша уçса пани** | |
| | Вуланă текстра палăртнă шухăша тĕрĕс уçса панă | 2 |
| | Вуланă текстра палăртнă шухăша пĕтĕмĕшле тĕрĕс уçса панă, анчах çырнă текстра темăран пăрăннă 1 вырăн пур | 1 |
| | Вуланă текстра палăртнă шухăша тĕрĕс уçса паман, е çырнă текстра темăран пăрăннă 2 е ытларах вырăн пур | 0 |
| **C2** | **Шкул ачин шухăшĕ палăрни** | |
| | Текст авторĕсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе шкул ачи хăйĕн позицине уçăмлă кăтартать | 2 |
| | Текст авторĕсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе шкул ачи хăйĕн позицине уçăмлă кăтартаймасть | 1 |
| | Вуланă тата итленĕ текстсем пирки шкул ачи хăй шухăшне каламасть е хăй позицийĕ çинчен ячĕшĕн çеç *Эпĕ авторсемпе килĕшетĕп. Эпĕ авторсемпе килĕшместĕп* йышши предложенисем çырать | 0 |
| **C3** | **Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсне тӳр килни** | |
| | Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсĕпе тӳр килет: текст тĕп шухăша (тезиса) пăхăнать, ку шухăша çирĕплетме вуланă текстран илнĕ 2 аргументпа усă курнă | 2 |
| | Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсĕпе тӳр килет, анчах 1 аргументпа кăна усă курнă | 1 |
| | Ăслава пăхăнман текст хайланă | 0 |
| **C4** | **Шухăш пĕр пĕтĕмлĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ тата шухăшсене йĕркипе уçса пыни** | |
| | Ĕçре шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ палăрать, логика йăнăшĕсем çук; текста абзацсене пайланă чухне йăнăшсем çук | 2 |
| | Ĕçре шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ палăрать, анчах логика йăнăшĕ 1 пур, тата/е абзацсем тунă чух 1 йăнăш кайнă | 1 |
| | Ĕçре шухăш çыхăнулăхĕ палăрать, анчах логика йăнăшĕ 1-рен ытла тунă, тата/е абзацсем тунă чух 2 йăнăш кайнă | 0 |
| **C5** | **Пуплев тĕрĕслĕхĕ, уçăмлăхĕ** | |
| | Шухăша тĕрĕс те ăнланмалла уçса пама йышлă лексикăпа, тĕрлĕ грамматика хатĕрĕпе усă курнă | 2 |
| | Ачан сăмах пуянлăхĕ пур, анчах пĕрешкел грамматика хатĕрĕпе усă курнă | 1 |
| | Сăмах çӳпçи чухăн, пĕрешкел грамматика хатĕрĕпе вĕçĕмсĕр усă курнă | 0 |
| | **Сочинени çырса пухнă пĕтĕм балл сумми (C1–C5 критерисемпе)** | **10** |

## 9.3-мĕш ĕçе хакламалли критерисем

| № | Ăслав сочинение хакламалли критерисем | Балл |
|---|---|---|
| С1 | **Сăмах (ăнлав) пĕлтерĕшне ăнлантарса пани** | |
| | Ача сăмахăн определенине çырнă, пĕлтерĕшне ăнлантарса панă | 2 |
| | Ача сăмахăн определенине çырнă, анчах пĕлтерĕшне ăнлантарса паман | 1 |
| | Ача сăмахăн определенине тĕрĕс çырман е пĕлтерĕшне ăнлантарса паман | 0 |
| С2 | **Шкул ачин шухăшĕ палăрни** | |
| | Текст авторĕсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе шкул ачи хăйĕн позицине уçăмлă кăтартать | 2 |
| | Текст авторĕсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе шкул ачи хăйĕн позицине уçăмлă кăтартаймасть | 1 |
| | Вуланă тата итленĕ текстсем пирки шкул ачи хăй шухăшне каламасть е хăй позицийĕ çинчен ячĕшĕн çеç *Эпĕ авторсемпе килĕшетĕп. Эпĕ авторсемпе килĕшместĕп* йышши предложенисем çырать | 0 |
| С3 | **Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсне тӳр килни** | |
| | Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсĕпе тӳр килет: текст тĕп шухăша (тезиса) пăхăнать, ку шухăша çирĕплетме 2 (пĕр тĕслĕхне вуланă текстран, теприне пурнăç опытĕнчен илнĕ) аргументпа усă курнă | 2 |
| | Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсĕпе тӳр килет, анчах 1 аргументпа кăна усă курнă | 1 |
| | Ăслава пăхăнман текст хайланă | 0 |
| С4 | **Шухăш пĕр пĕтĕмлĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ тата шухăшсене йĕркипе уçса пыни** | |
| | Ĕçре шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ палăрать, логика йăнăшĕсем çук; текста абзацсене пайланă чухне йăнăшсем çук | 2 |
| | Ĕçре шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ палăрать, анчах логика йăнăшĕ 1 пур, тата/е абзацсем тунă чух 1 йăнăш кайнă | 1 |
| | Ĕçре шухăш çыхăнулăхĕ палăрать, анчах логика йăнăшĕ 1-рен ытла тунă, тата/е абзацсем тунă чух 2 йăнăш кайнă | 0 |
| С5 | **Пуплев тĕрĕслĕхĕ, уçăмлăхĕ** | |
| | Шухăша тĕрĕс те ăнланмалла уçса пама йышлă лексикăпа, тĕрлĕ грамматика хатĕрĕпе усă курнă | 2 |
| | Ачан сăмах пуянлăхĕ пур, анчах пĕрешкел грамматика хатĕрĕпе усă курнă | 1 |
| | Сăмах çӳпçи чухăн, пĕрешкел грамматика хатĕрĕпе вĕçĕмсĕр усă курнă | 0 |
| | **Сочинени çырса пухнă пĕтĕм балл сумми (С1–С5 критерисемпе)** | **10** |



## Тĕрĕс çырма пĕлнине хакламалли критерисем

Тĕрĕс çырма пĕлнине изложенипе сочинени тăрăх иккĕшне те пĕхса уйрăммăн хаклаççĕ. Паллах, пысăк, пĕчĕк тата пĕрешкел йăнăшсене (халь усă куракан хаклав виçисене тĕпе хурса) шута илмелле.

| № | Тĕрĕс çырма пĕлнине хакламалли критерисем | Балл |
|---|---|---|
| Г1 | **Орфографи нормисене пăхăнни** | |
| | Орфографи йăнăшĕсем çук, е 1-2 йăнăш пур | 2 |
| | 3-4 йăнăш пур | 1 |
| | 5 е ытларах йăнăш пур | 0 |
| Г2 | **Пунктуаци нормисене пăхăнни** | |
| | Пунктуаци йăнăшĕсем çук, е 1-2 йăнăш пур | 2 |
| | 3-4 йăнăш пур | 1 |
| | 5 е ытларах йăнăш пур | 0 |
| Г3 | **Грамматика нормисене пăхăнни** | |
| | Грамматика йăнăшĕсем çук, е 1-2 йăнăш пур | 2 |
| | 3-4 йăнăш пур | 1 |
| | 5 е ытларах йăнăш пур | 0 |
| Г4 | **Пуплев нормисене тытса пыни** | |
| | Пуплев йăнăшĕсем çук, е 1-2 йăнăш пур | 2 |
| | 3-4 йăнăш пур | 1 |
| | 5 е ытларах йăнăш пур | 0 |
| Ф1 | **Факт тĕлĕшĕнчен тĕрĕс çырни** | |
| | Факт йăнăшĕсем çук | 2 |
| | 1 йăнăш пур | 1 |
| | 2 е ытларах йăнăш пур | 0 |
| **Изложенипе сочинени çырса пухнă пĕтĕм балл сумми (Г1–Г4, Ф1 критерисемпе)** | | **10** |

Тĕрĕс çырма пĕлнине хакланă чухне (ГК1–ГК4) **изложенипе сочинени калăпăшне** шута илес пулать. Маларах панă таблицăсенче кăтартнă нормăсемпе изложенипе сочиненире усă курнă сăмахсен пĕтĕм йышĕ сахалтан та 140 пулсан хакламалла. Изложенипе сочиненири сăмахсен пĕтĕм йышĕ 70–139 пулсан – кашни критерипе 1-ер балран ытларах лартма юрамасть.

Изложенипе сочиненири сăмахсен пĕтĕм йышĕ 70–139 пулсан **1 балл** лартма çак условисем кирлĕ:

Г1 – орфографи йăнăшĕсем çук (е 1 пĕчĕк йăнăш пур);

Г2 – пунктуаци йăнăшĕсем çук (е 1 пĕчĕк йăнăш пур);

Г3 – грамматика йăнăшĕсем çук;

Г4 – пуплев йăнăшĕсем çук.

Изложенипе сочиненири сăмахсен пĕтĕм йышĕ 70-тен сахалтарах пулсан – ĕçе туман тесе йышăнаççĕ, 0 балл лартса хаклаççĕ.

Ача изложение е сочинение çырман пулсан çакăн пек хакламалла:

– изложенипе сочиненири сăмахсен пĕтĕм йышĕ 140 сăмахран сахал пулмасан Г1–Г4 критерисем тăрăх маларах панă таблицăсенче кăтартнă нормăсемпе хакламалла;

– изложенипе сочиненири сăмахсен пĕтĕм йышĕ 70–139 пулсан – Г1–Г4 критерисем тăрăх 1-ер балран ытларах лартма юрамасть;

– изложенипе сочиненири сăмахсен пĕтĕм йышĕ 70-тен сахалтарах пулсан – ĕçе 0 балл лартса хаклаççĕ.

Кашни критерипе **чи пысăк балл** илсен – экзамен ĕçĕшĕн 9-мĕш класс ачи **пĕтĕмпе 33 балл** пухĕ.



## ИЛЕМЛĔХ МЕЛĔСЕН КĔСКЕ СЛОВАРĔ

**Гипербола** – пĕр-пĕр пулăмпа ĕçе, япалана, чĕр чунпа этеме, вĕсен ку е вăл пахалăхне ытлашши пысăклатса кăтартни. Ăна хирĕçле ăнлав – литота. Тĕслĕхрен: *Аçа çапать, шартлатать, Пĕтĕм тĕнче кисренет*. (К. Иванов.).

**Литота** – пĕр-пĕр пулăмăн, япалан, этемĕн е чĕр чунăн пĕр-пĕр пахалăхне е калăпăшне, хисепне, виçине юри пĕчĕклетсе кăтартни. Ăна хирĕçле ăнлав – гипербола. Тĕслĕхрен: *тунката çÿллĕш* (лутра çын çинчен), *чăх утса каçать* (ансăр юхан шыв çинчен).

**Метафора** – икĕ пĕр евĕрлĕрех япалана е пулăма çывăхлантарса пĕрин паллине теприн çине куçарни. Тĕслĕхрен: *сутă çурла* (уйăх çинчен), *çĕлĕк хăлхи, хĕл куç çулĕ* т.ыт. те.

**Метоними** – пĕр япала е ăнлав ырăнне тепĕр япалана е ăнлава вĕсен тулашĕнчи е шалти çыхăнăвĕсене кура ят пани. Тĕслĕхрен: *алли ăста, ял кĕрлет, Иванова вула* т.ыт.те.

**Оксюморон** – хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсене пĕр-пĕринпе çыхăнтарса тунă сăмах çаврăнăшĕ. Тĕслĕхрен: *ÿркенмен кахал, ăслă ухмах, чĕрĕ виле, сăпайлă пуçтах, кивĕ çĕнĕ çул* т.ыт.те.

**Сăпатлантару** – чĕрĕ мар япаласене чĕрĕ чун пек е этем пек сăнласа кăтартни. Тĕслĕхрен: *Тĕттĕм вăрман чĕрĕлет, Ешĕл тумтир тахăнать* (К. Иванов.).

**Синекдоха** – пĕр сăмахпах пĕтĕм япалине те, унăн пайне те пĕлтерме усă курни. Тĕслĕхрен: *Авă шур сухал пырать.*

**Танлаштару** – лайăхах пĕлмен япалана е унăн пĕр-пĕр паллине лайăхрах пĕлекен тепĕр япалапа е унăн паллипе танлаштарса кăтартни. Танлаштарăвăн грамматика мелĕсем:

1) *пек, евĕр, евĕрлĕ, майлă, йышши, манерлă* т.ыт. сăмахсем (*хурăн пек яштака, хуçа евĕр тыткала* т.ыт.те);

2) ят сăмахсен туху падежĕнчи формипе танлаштару форминчи паллă ячĕн пĕрлешĕвĕ (*Канашран пысăкрах хула, тилĕрен чеерех çын* т. ыт.те).

**Эпитет** – пĕр-пĕр япалана е пулăма сăнласа унăн хăйне евĕрлĕ уйрăмлăхне е пахалăхне кăтартакан ăнлантару сăмахĕ (*хаяр хĕл, кĕмĕл сасă, сивĕ сăмах* т.ыт.те).

## ХУРАВСЕМ

### 2017-2019 çулсенче тытнă экзамен хуравĕсем

*1-мĕш вариант*

| | | |
|---|---|---|
| 2.1. – 2 | 2.6. – 1 | 2.11. – 2 |
| 2.2. – 4 | 2.7. – 3 | 2.12. – 3 |
| 2.3. – 4 | 2.8. – 1 | 2.13. – 1 |
| 2.4. – 1 | 2.9. – 2 | |
| 2.5. – 3 | 2.10. – 3 | |

*2-мĕш вариант*

| | | |
|---|---|---|
| 2.1. – 2 | 2.6. – 1 | 2.11. – 1 |
| 2.2. – 4 | 2.7. – 3 | 2.12. – 2 |
| 2.3. – 4 | 2.8. – 1 | 2.13. – 1 |
| 2.4. – 4 | 2.9. – 4 | |
| 2.5. – 3 | 2.10. – 3 | |

*3-мĕш вариант*

| | | |
|---|---|---|
| 2.1. – 2 | 2.6. – 1 | 2.11. – 1 |
| 2.2. – 4 | 2.7. – 3 | 2.12. – 2 |
| 2.3. – 3 | 2.8. – 1 | 2.13 – 2 |
| 2.4. – 2 | 2.9. – 4 | |
| 2.5. – 3 | 2.10. – 3 | |

*4-мĕш вариант*

| | | |
|---|---|---|
| 2.1. – 3 | 2.6. – 1 | 2.11. – 1 |
| 2.2. – 4 | 2.7. – 1 | 2.12. – 2 |
| 2.3. – 4 | 2.8. – 1 | 2.13. – 1 |
| 2.4. – 3 | 2.9. – 4 | |
| 2.5. – 2 | 2.10. – 3 | |



*5-мĕш вариант*

| | | |
|---|---|---|
| 2.1. – 2 | 2.6. – 3 | 2.11. – 1 |
| 2.2. – 4 | 2.7. – 3 | 2.12. – 1 |
| 2.3. – 3 | 2.8. – 1 | 2.13. – 1 |
| 2.4. – 4 | 2.9. – 2 | |
| 2.5. – 3 | 2.10. – 3 | |

*6-мĕш вариант*

| | | |
|---|---|---|
| 2.1. – 3 | 2.6. – 1 | 2.11. – 1 |
| 2.2. – 4 | 2.7. – 3 | 2.12. – 2 |
| 2.3. – 3 | 2.8. – 1 | 2.13. – 1 |
| 2.4. – 3 | 2.9. – 3 | |
| 2.5. – 3 | 2.10. – 3 | |

*7-мĕш вариант*

| | | |
|---|---|---|
| 2.1. – 3 | 2.6. – 1 | 2.11. – 2 |
| 2.2. – 4 | 2.7. – 1 | 2.12. – 3 |
| 2.3. – 4 | 2.8. – 1 | 2.13. – 1 |
| 2.4. – 4 | 2.9. – 3 | |
| 2.5. – 3 | 2.10. – 3 | |

*8-мĕш вариант*

| | | |
|---|---|---|
| 2.1. – 3 | 2.6. – 1 | 2.11. – 2 |
| 2.2. – 4 | 2.7. – 1 | 2.12. – 3 |
| 2.3. – 3 | 2.8. – 1 | 2.13. – 1 |
| 2.4. – 4 | 2.9. – 3 | |
| 2.5. – 4 | 2.10. – 4 | |

## Экзамена хатĕрленмелли тĕслĕхсен хуравĕсем

### *1-мĕш вариант*

| Ĕç номерĕ | Тĕрĕс хурав |
|---|---|
| 2 | 12<e>21 |
| 3 | 1247<e>çак цифрăсен кирек мĕнле йĕрки |
| 4 | тискер кайăксем |
| 5 | 23<e>32 |
| 6 | 25<e> 52 |
| 7 | 3 |
| 8 | хитре |

### *2-мĕш вариант*

| Ĕç номерĕ | Тĕрĕс хурав |
|---|---|
| 2 | 12<e>21 |
| 3 | 345<e>çак цифрăсен кирек мĕнле йĕрки |
| 4 | яштака хырĕсем |
| 5 | 35<e>53 |
| 6 | 24<e> 42 |
| 7 | 5 |
| 8 | ăшă |

### *3-мĕш вариант*

| Ĕç номерĕ | Тĕрĕс хурав |
|---|---|
| 2 | 14<e>41 |
| 3 | 134<e>çак цифрăсен кирек мĕнле йĕрки |
| 4 | кăтра çулçисем |
| 5 | 35<e>53 |
| 6 | 24<e> 42 |
| 7 | 2 |
| 8 | йăли |



### *4-мĕш вариант*

| Ĕç номерĕ | Тĕрĕс хурав |
|---|---|
| 2 | 34<e>43 |
| 3 | 34<e>43 |
| 4 | тĕрĕслев ĕçĕ |
| 5 | 135<e>çак цифрăсен кирек мĕнле йĕрки |
| 6 | 45<e> 54 |
| 7 | 4 |
| 8 | юратма |

### *5-мĕш вариант*

| Ĕç номерĕ | Тĕрĕс хурав |
|---|---|
| 2 | 13<e>31 |
| 3 | 23<e>32 |
| 4 | çил-тăманлă каçĕсем |
| 5 | 134<e> çак цифрăсен кирек мĕнле йĕрки |
| 6 | 12<e> 21 |
| 7 | 3 |
| 8 | йĕрет |

### *6-мĕш вариант*

| Ĕç номерĕ | Тĕрĕс хурав |
|---|---|
| 2 | 12<e>21 |
| 3 | 235<e> çак цифрăсен кирек мĕнле йĕрки |
| 4 | сиплĕхлĕ сывлăшĕ |
| 5 | 34<e>43 |
| 6 | 23<e> 32 |
| 7 | 3 |
| 8 | хаклană |

### *7-мĕш вариант*

| Ĕç номерĕ | Тĕрĕс хурав |
|---|---|
| 2 | 24<e>42 |
| 3 | 25<e>52 |
| 4 | ытарайми хирĕсемпе шывĕсем |
| 5 | 13<e>34 |
| 6 | 24<e> 42 |
| 7 | 3 |
| 8 | ырă |

### *8-мĕш вариант*

| Ĕç номерĕ | Тĕрĕс хурав |
|---|---|
| 2 | 14<e>41 |
| 3 | 34567<e>çак цифрăсен кирек мĕнле йĕрки |
| 4 | пысăк чÿречисем |
| 5 | 23<e>32 |
| 6 | 134<e> çак цифрăсен кирек мĕнле йĕрки |
| 7 | 12<e>21 |
| 8 | çамрăк |

### *9-мĕш вариант*

| Ĕç номерĕ | Тĕрĕс хурав |
|---|---|
| 2 | 24<e>42 |
| 3 | 34<e>43 |
| 4 | кăмăлĕ |
| 5 | 13<e>31 |
| 6 | 34<e> 43 |
| 7 | 13 |
| 8 | вăхăт |



## УСĂ КУРМА СĔННĔ ЛИТЕРАТУРА

1. Андреев И.А. Чăваш чĕлхи: Чăваш шкулĕн 10–11-мĕш классĕсем валли / И.А. Андреев. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2003. – 175 с.

2. Виноградов Ю.М. Чăваш орфографине шкулта вĕрентесси: Чăваш чĕлхи вĕрентекенсем валли / Ю.М. Виноградов. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2007. – С. 83–106.

3. Виноградов Ю.М. Хăнăхтару пуххи: 8 – 9 классем валли / Ю.М. Виноградов. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн издательстви, 2008. – 163 с.

4. Горшков А.Е. Сăмах пултăр уçăмлă, шухăш пултăр витĕмлĕ / А.Е. Горшков. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1981. – 127 с.

5. Егораева Г.Т. ОГЭ. Русский язык. Задания 15.1, 15.2, 15.3. 600 экзаменационных сочинений на «отлично» / Г.Т. Егораева. – М.: Издательство «Экзамен», 2018. – 558 с.

6. Егорова А.С. Единый республиканский экзамен по чувашскому языку: опыт, проблемы, перспективы / А.С. Егорова // Актуальные вопросы исследования и преподавания родных языков и литератур: материалы Междунар. Науч.-практ.конф. (Чебоксары, 16 нояб. 2019 г.) / редкол.: Ж.В. Мурзина и др. – Чебоксары: ИД «Среда», 2019.

7. Метин П.Н. Илемлĕ литература текстне тишкересси: меслет кăтартăвĕсем / П.Н. Метин. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн издательстви, 2009. – 192 с.

8. Орфографипе пунктуаци: тĕрĕс çырмалли правилăсем // Ю.М. Виноградов, Г.М. Виноградова Орфографи словарĕ. Тĕрĕс çырмалли правилăсем. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн редакципе изд-во пайĕ, 2002. – С. 256–289.

9. Чăваш чĕлхипе экзамена хатĕрленесси: 9-мĕш класс / Ю.М. Виноградов пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн издательство центрĕ, 2010. – 111 с.

10. Чăваш чĕлхи. Энциклопеди словарĕ. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2004. – 223 с.

11. Шкул ачисен пĕлĕвĕпе хăнăхăвĕсене хакласси: Чăваш шкулĕн 5–11 класĕсенче чăваш чĕлхипе литература вĕрентекенсем валли / Чăваш Республикин Вĕренӳ министерстви; Ю.М. Виноградов, Л.Г. Петрова, Е.А. Майков хатĕрленĕ. –

Шупашкар: Чăваш Республикин Вĕренӳ институчĕн редакципе издательство пайĕ, 2004. – 30 с.

12. Экзамена хатĕрленетпĕр: 11-мĕш класс / Н.В. Добровăпа И.А. Васильева пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн издательство центрĕ, 2012. – 108 с.

## ИНТЕРНЕТ РЕСУРСЕМ

1. Егорова А.С. 2019 çулта 9 класс пĕтерекенсене чăваш чĕлхипе патшалăх шайĕнче тытмалли тĕп экзамента изложени çырма хатĕрлесси [Электрон ресурс]. – Тупмалли йĕрке: http://chrio.cap.ru/Content2019/orgs/GovId_121/2.pdf

2. Егорова А.С. 2019 çулта 9 класс пĕтерекенсене чăваш чĕлхипе патшалăх шайĕнче тытмалли тĕп экзамента сочинени çырма хатĕрлесси [Электрон ресурс]. – Тупмалли йĕрке: http://chrio.cap.ru/Content2019/orgs/GovId_121/3.pdf

3. Егорова А.С. 2019 çулта 9 класс пĕтерекенсене чăваш чĕлхипе патшалăх шайĕнче тытмалли тĕп экзамента тест ыйтăвĕсене хуравлама хатĕрлесси [Электрон ресурс]. – Тупмалли йĕрке: http://chrio.cap.ru/Content2019/orgs/GovId_121/4.pdf

4. 2020 çулта 9 класс пĕтерекенсене чăваш чĕлхипе патшалăх шайĕнче тытмалли тĕп экзамента изложени çырма хатĕрлесси [Электрон ресурс]. – Тупмалли йĕрке: http://chrio.cap.ru/sitemap.aspx?id=2901253

5. 2020 çулта 9 класс пĕтерекенсене чăваш чĕлхипе патшалăх шайĕнче тытмалли тĕп экзамента сочинени çырма хатĕрлесси [Электрон ресурс]. – Тупмалли йĕрке: http://chrio.cap.ru/sitemap.aspx?id=2901253

6. 2020 çулта 9 класс пĕтерекенсене чăваш чĕлхипе патшалăх шайĕнче тытмалли тĕп экзамента тест ыйтăвĕсене хуравлама хатĕрлесси [Электрон ресурс]. – Тупмалли йĕрке: http://chrio.cap.ru/sitemap.aspx?id=2901253

7. Иванова В.М. Ăслав сочиненийĕ çырма вĕрентесси [Электрон ресурс]. – Тупмалли йĕрке: http://www.shkul.su/305.html



## ТУПМАЛЛИ

КӲРТĔМ…………………………………………………… 3
РЕСПУБЛИКĂН ПĔРЛЕХИ ЭКЗАМЕНĔН ТЫТĂМĔПЕ СОДЕРЖАНИЙĔ……………………………………….. 4
ШКУЛ АЧИСЕНЕ ЭКЗАМЕНА ХАТĔРЛЕССИ
Изложени çырасси…………………………………………... 16
Тест ыйтăвĕсене хуравлासси……………………………… 18
Ăслав сочиненийĕ çырасси………………………………. 24
2017-2019 ÇУЛСЕНЧЕ ИРТТЕРНĔ ЭКЗАМЕН МАТЕРИАЛĔ
1-мĕш вариант……………………………………………... 31
2-мĕш вариант……………………………………………... 36
3-мĕш вариант……………………………………………... 41
4-мĕш вариант……………………………………………... 46
5-мĕш вариант……………………………………………... 50
6-мĕш вариант……………………………………………... 55
7-мĕш вариант……………………………………………... 59
8-мĕш вариант……………………………………………... 64
ЭКЗАМЕНА ХАТĔРЛЕНМЕЛЛИ ТĔСЛĔХСЕМ
1-мĕш вариант……………………………………………... 69
2-мĕш вариант……………………………………………... 73
3-мĕш вариант……………………………………………... 78
4-мĕш вариант……………………………………………... 83
5-мĕш вариант……………………………………………... 88
6-мĕш вариант……………………………………………... 93
7-мĕш вариант……………………………………………... 99
8-мĕш вариант…………………………………………...... 104
9-мĕш вариант…………………………………………...... 109
ĂСЛАВ СОЧИНЕНИЙĔСЕН ТĔСЛĔХĔСЕМ……………... 115
ЭКЗАМЕН ĔÇĔСЕНЕ ХАКЛАМАЛЛИ КРИТЕРИСЕМ…. 123
ИЛЕМЛĔХ МЕЛĔСЕН КĔСКЕ СЛОВАРĔ……………….. 129
ХУРАВСЕМ…………………………………………………..
2017-2019 çулсенче тыттарнă экзамен хуравĕсем………… 130
Экзамена хатĕрленмелли тĕслĕхсен хуравĕсем………….... 132
УСĂ КУРМА СĔННĔ ЛИТЕРАТУРА……………………... 135
ИНТЕРНЕТ РЕСУРСЕМ……………………………………. 136

БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования» Минобразования Чувашии

Учебно-методическое пособие

Егорова Анна Семёновна

**Чувашский язык. Единый республиканский экзамен по чувашскому языку**

Редактор *Ю.М. Виноградов*
Верстка *А.С. Егоровой*

Подписано в печать 18.03.2020. Формат 60×90 1/16.
Печать оперативная. Бумага офсетная. Гарнитура Times new Roman.
Тираж 120 экз. Заказ № 0548.

Отпечатано с готового оригинал-макета

Чувашский республиканский институт образования
428015, Чебоксары, пр. М. Горького, д.5

Отпечатано в типографии «Перфектум»
г. Чебоксары, ул. К.Маркса, д. 52. Тел.: (8352) 32-05-01
www.perfectumbooks.ru mail@perfectumbooks.ru